

# ЯЛАВ

1
ЯНВАРЬ
1955

N1-N12 Доп



# ЁЛКА ЎСНĔ ВĂРМАНТА

... Пионерсен маскарачĕ пуçланчĕ çеç-ха. Шкулти илемлĕ ёлка тавра атă тăхăннă Кушак аçипе Буратино, Хĕрлĕ çĕлĕкпе Шăна кăмпи хаваслăн ташласа çавранаççĕ. Кĕçех ёлкăна Хĕл мучи Снегурочкăпа пĕрле килсе кĕрет те, ачасем тем териех савăнса каяççĕ. Хĕл мучи ачасене хаклă парнесем валеçме пуçлать...

Çĕршыври кашни шкулта, колхозри клубсемпе культура çурчĕсенче, хулари площадьсемпе парксенче Çĕнĕ çул умĕн çĕршер çутăпа йăлтартатса çĕне çул ёлкисем эрешленсе çуталчĕç. Çĕнĕ çул каçхине петĕм совет халăхĕн чĕринче, Мускавра, Кремльти Пысăк Дворецра та çĕнĕ çул ёлки çуталса кайрĕ. Вăл çав тери пысăк, унăн çӳлĕшĕ вунсакăр метр. Ана темиçе пин ылтăн-кĕмĕл теттесемпе илемлетнĕ.

Пур çĕрте те шкул ачисен хаваслă каникулĕсем пуçланчĕç те Çĕнĕ çул ёлкисем умĕнче икĕ эрне ытла ачасем савăнчĕç. Хĕллехи каникулсем çав тери хаваслă иртрĕç, ачасем Çĕнĕ çулта çĕнĕ вăйпа парта хушшине ларчĕç. Кремльти ёлка январĕн 16-мĕшчен пычĕ.

Ç ӳ л т и ӳ к е р ч ĕ к р е: Кремльти Пысăк Дворецра Мускаври шкул ачисем валли тунă Çĕн çул ёлкинче.

В а р р и н ч и ӳ к е р ч ĕ к р е: Кремльти Пысăк Дворецри çамрăксен Çĕнĕ çул балĕ.

А я л т и ӳ к е р ч ĕ к р е: Çĕрпӳри 1-мĕш номерлĕ ача садĕнче ачасем, Çĕнĕ çул ёлкине кайма хатĕрленсе, вырăс халăх ташшине вĕренеççĕ.

В. Соболевпа В. Кошевой (ТАСС фотохроники) тата Ф. Иванов фотоӳкерчĕкĕсем.





*Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр.*

# ЯЛАВ

№ 1 (109)
ЯНВАРЬ
1955

ЧĂВАШ ПИСАТЕЛĔСЕН СОЮЗĔ УЙĂХРА ПĔРРЕ КĂЛАРАКАН ИЛЕМЛĔ ЛИТЕРАТУРĂПА ОБЩЕСТВĂЛЛА-ПОЛИТИКĂЛЛА ЖУРНАЛ

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА Чувашской Республики
Ж-63931
ПРОВЕРЕНО 2010 21 НОЯ 20..
К84 951

# ЧӐВАШ ЯЛӖНЧЕ

(*„Акӑшкӳл" роман сыпӑкӗ*)

Яков УХСАЙ

Колхозра правлени ҫурчӗ
Питӗ чаплӑ пулмалла,
Унӑн пӗтӗм икӗ хучӗ
Хӗвелпе вылямалла.
Эрнере пӗрре пасарӗ
Пулакан урамӗнче
Акӑшкӳл керменӗ ларӗ
Сӑрт ҫинче, ял варринче.
Никӗсне хума бригада
Халӗ тарӑн ҫӗр чавать.
Хӗрлӗ тӑм, хура тӑпра та
Вӑркӑнса кӑна тӑрать.
Пурнӑҫра ялан ӗҫ майлӑ
Кӑмӑла туртни аван.—
Халӑхпа пӗрле Михайлов
Никӗсре ӗҫлет паян.
Вӑрҫӑра пӗрмай ӗҫленӗ:
Хӑй танкне пырса лартма
Вӑл позици хатӗрленӗ,
Тунӑ пӳрт хӑйне выртма.
Тислӗкре выртса саралнӑ
Нӑрӑ пек автомобиль
Чарӑнать — тусан кӑларнӑ
Хыҫӗнчен ҫӗкленнӗ ҫил.
Алӑкне шофер уҫсассӑн,
Васкамасӑр, ерипен
Господин тухрӗ мӑнаҫлӑн
Сарлака шӗлепкипе.
Ботинки те унӑн сарӑ,
Ун чӑлхи те сарӑ-ҫке.
Хӑмӑр хӑмпӑ шалаварӗ
Чӗркуҫҫи таран, кӗске.
Шӑтӑкран сиксе Михайлов
Хӑпарать, таса пулма
Сирпӗтет ташланӑ майӑн
Уринчи йӗпе тӑма.
Лешӗ шӑмӑ куҫлӑх витӗр
Ҫырӑ куҫӗпе пӗрре
Пӑхрӗ те каларӗ:—Мистер,
Сывлӑх та телей сире!
Эп, хаҫат корреспондентчӗ,
Ҫитрӗм Атӑл хӗррине.
Чунӑм ман кӗме пикенчӗ
Ҫула май герой патне. —
Шӑрӑх вӑхӑтра пӑртакҫӑ
Сулхӑнрах лавкка умне
Иккӗш те кайса ларӑҫҫӗ
Пысӑк хыр каски ҫине.
— Ылтӑн ҫӑлтӑр, мистер, лайӑх.
Арӑм пур-и е пӗччен
Халлӗхе эсир, Михайлов? —
Тет вӑлтса корреспондент. —
Вӑрҫӑра хастарлӑ пулнӑ
Манӑн сывӑх тусӑм пур.
Чӑннипех те пултаруллӑ
Лейтенант, герой, матур.
Летчик хӑй, питех пултарнӑ
Палӑрма Япониpe,
Ҫумӑр пек металл ҫутарнӑ
Салтаксем ҫине хире.
Вӑрҫӑ хыҫҫӑн чаплӑ ячӗ
Тупӑш пачӗ ӗмӗрне.
Вӑл качча илме пултарчӗ
Пӗр миллионер хӗрне.
Вӑрҫӑ хыҫҫӑн канлӗх килтӗр
Сирӗн ырнӑ чунӑра!
Кирлӗ-ҫке, Михайлов мистер,
Лӑпкӑ пурнӑҫ хӑвӑра.
Пысӑк муллӑ пулӑр, пуйӑр
Тесшӗн мар, анчах укҫа
Кӑтартса тӑрать геройӑн
Кӑмӑлне яри уҫса.
Ҫын хакне пӗлсе тӑмалӑх
Пулмалла картпа виҫе.—
— Урӑх карт! — тесе Михайлов
Пӑхрӗ лӑпкӑн хирӗҫех. —
Муллӑ арӑмпа укҫашӑн
Ҫунакан этемсене
Ман Тӑван ҫӗршыв ачашшӑн
Тыттармасть герой ятне.
Ун пек ҫын — чӑнне калас-тӑк —
Ҫапӑҫса ятпа хисеп
Илессе те халь сасартӑк
Ӗненсех ҫитместӗп эп.
Сирӗн сывӑх летчик тусӑр
Хӑйӗн халӑхӗ ҫинчен
Шутламан та: шиклӗн, уссӑр
Вӗҫнӗ сывлӑшра пӗччен.
Хӑйӗн тусӗсем хастарлӑ
Пуласран хӑранипе
Вӗсене пеме пултарнӑ
Вӑл хӑрушӑ ҫиллипе.
Вӗҫнӗ чух татти-сыпписӗр
Пусӗнче сӗрленӗ туй.
Халӑха пӗрре те, мистер,
Кирлӗ мар ун пек герой.
Вӑрҫӑра тӑван ҫӗршывӗ
Илӗртсе тӑман ӑна.
Куҫӗ пӑр пек пулнӑ сивӗ,
Курнӑ сивӗ ылтӑна.
Сирен тус авланнӑ, тетӗр,
Тупнӑ, тетӗр, тупӑша.
Тӳрӗрех каласшӑн, мистер,
Эпӗ хамӑн шухӑша.
Сирӗн тус ытла мӑнтарӑн.
Юн та ҫук ун, ҫук чӗре.
Вӑл тупман нимле те арӑм,
Юратман нимле хӗре.—
— Ман сӑмахӑм тӗрӗс мар-и,
Суйрӑм-и хам тус ҫинчен?.. —
Терӗ те тӑма васкарӗ
Ҫиленсе корреспондент.
Кӗлете хуҫи сасартӑк
Кӗнине курсан, шаши
Шӑвӑнма шырать е ҫурӑк,
Е урай хӑми хушши.
Вӑл та чӑнлӑхран вӑтанчӗ,
Куҫлӑх витӗр пӑхакан
Куҫӗсем тарма хӑтланчӗҫ
Тасталла Михайловран.
Ҫырӑрах сӑнне ҫухатрӗҫ
Куҫӗсем, вара часах
Ик шӑши пек чупкаларӗҫ,
Тӗсӗпе те сӑрӑрах.
Малтанхи пекех Михайлов
Лӑпкӑ тытрӗ сӑмаха:
— Мистер, эп епле-ха лайӑх
Тейӗп ун пек хураха...
Сирӗн летчиксем ҫунтарнӑ
Вӑрҫӑ чух Японире
Пӗр сиенсӗр лӑпкӑ ларнӑ
Пин-пин ырӑ ҫурт-йӗре.
Уй-хирти тырра пӗтернӗ,
Чаплӑ паттӑра тухма
Пинӗ-пинӗпе вӗлернӗ
Ачана, хӗрарӑма...
Чаплӑ пулнӑ сирӗн тусӑр
Ахалех. Калам чӑнне:
Илнӗ вӑл пӗр юратусӑр
Миллион хуҫи хӗрне.
Вӑл этем пулма пултарнӑ
Халӑх хушшинче, анчах
Халӑха хӗсме хастарлӑн
Илнӗ доллара качча. —
— Тӑшмана ҫапса тӑкасшӑн
Пысӑк вӑрҫӑ пӗтиччен
Яланах эпир канашлӑ
Пулнӑ, — тет корреспондент. —
Ман ҫӗршыв сире юратнӑ,
Фашистла империе
Ҫӗмӗрме тем те пӗр панӑ,
Кӑтартман сире сиен.
Штатсенчен нимле те усӑ,
Пулӑшу пулман пулсан,
Ҫӗр ҫинче Совет Союзӗ
Пулмӗччӗ пӗртте паян...
Мистер, туртӑр-ха тархасшӑн,—
Тенӗ май корреспондент
Кӑларать хитре сигарӑн
Йӗннине хӗв кӗсйинчен.
Туртасса туртать Михайлов
Тӑтӑшах, анчах кунта
Вӑл тунса ал сулнӑ майӑн
Килӗшмерӗ ыхӑн та.
— Питӗ пысӑк йӑнӑш, — терӗ
Вӑл каска ҫинчех ларса,—
Кам, епле, хӑҫан пӗтерӗ
Пирӗн аслӑ Союза?
Фашистла хаяр импери
Пӗтӗмпе Европӑна
Аттипе ирсе ҫӳрерӗ,—
Чартӑр-и эсир ӑна?
Вут-кӑвар сапса ҫӗкленчӗ
Вӑл пӗрре ҫулла ирпе.
Пирӗн халӑх пӗр-пӗчченҫӗ
Тухрӗ пӗтӗм вӑйӗпе.
«Вӗлтӗрен хӑҫан хӑпарӗ
Советсен шӑмми ҫинче?» —
Теекен сахал пулмарӗ
Кӑвак тинӗс леш енче.
Пирӗн аслӑ халӑх ҫарӗ
Хирӗҫ пычӗ паттӑрла,
Пӗр-пӗччен ҫапса турарӗ
Тӑшмана виҫ ҫул ытла.
Хурҫӑ ҫар вӑй-хал ыйтмасӑр,
Берлина ҫитес чухне
Сирӗн канлӗ выртнӑ ҫарӑр
Тытрӗ пысӑк кашӑкне.
Хӗҫ тытмарӗ, тытрӗ кашӑк —
Вӑрҫӑ шавӗ иртиччен
Илмелле-ҫке ҫулӑ татӑк
Ҫӗнтерӳ хуранӗнчен.
Пирӗн чун та кӑмӑл уҫӑ,
Хаяртан хаяр вӑрҫа
Кайнӑ чух пулман сутуҫӑ,
Пуҫтарман эпир укҫа... —
Астуса илет Михайлов
Тутлӑ мар консервӑна.
Каласси капланнӑ майӑн
Ҫунтарать ҫилли ӑна.
Вӑрҫӑра совет салтакӗ
Кунӗн-ҫӗрӗн тӑтӑшах
Сапӑҫнӑ чухне Чикаго
Сутнӑ пӑнтӑхнӑ аша.
Чӳпӗк пек пыра ларатчӗ
Консерви тӑварланса.
Ун банки ҫинче тӑратчӗ
«Made in USA».*
— Ахалех, Михайлов мистер,
Ҫурҫӗрти штатсем ҫинчен
Тиркесе эсир пуплетӗр,—
Тет ӑна корреспондент.
Ҫиленет, анчах Михайлов
Ерипен, хуллен калать:
— Сирӗн, чӑн та, икӗ халӑх,
Кӑмӑла пӗри каять.
Мулҫӑсем епле пулин те
Тепӗр вӑрҫӑ тӗнчере
Хускатасшӑн,—паллӑ ӗнтӗ,—
Кӑмӑла каймасть пире.
Мистер, вӗсене нихҫан та
Юрамасть ҫынсем теме.
Халӑх мар. Киревсӗр банда.
Вӗсене кирлех тӗрме!
Ҫавӑ йӗрӗнчӗк тавраш
Водород бомбисене,
Атомне те пӑрахасшӑн
Паянах Мускав ҫине.
Кун пирки вӗсем калаҫҫӗ,
Кӑлараҫҫӗ тӗрлӗ хурт.
Мӗншӗн лӑпланмасть пӑртакҫӑ
Сирӗн лешӗ Шурӑ Ҫурт?
Мӗн шурри унта? Сӗм тӗксӗм.
Питӗ ирӗк пурӑнма
Халӗ вырӑн тупнӑ пӗтӗм
Тифлӑ пыйтӑ та чума.
Ман хастар Тӑван ҫӗршывӑм
Сарлака, пуян, хитре.
Пирӗн халӑх ырӑ, сывӑ
Пурӑнать хӗрӳ ӗҫре.
Халӑхпа каласӑр халӗ,
Сирӗн штатӑрсем ҫине
Бомбӑсем тӑкма кам калӗ —
Тупӑр ун пек ҫынсене!
Вӑрҫӑ вучӗ, сӳн те сирӗл!
Тӗнчене инкек, хӗн-хур
Кирлӗ мар! — теме те сирӗн
Ырӑ чунлӑ халӑх пур.
Вӑрҫӑ хыҫҫӑн эп кураттӑм
Сирӗн ҫар ҫыннисене,
Вӗсемпе пӗрле пӑхаттӑм
Кӑн-кӑвак Дунай ҫине.
Туслашма пире юратчӗ,
Шутламан ӑна-кӑна,
Ҫывӑх тус пек алӑ пачӗ
Генри Рун — танкист мана.
Шӑлӗсем сӗт пек шап-шурӑ.
Учӗ-тирӗ хуп-хура.
— Мирлӗ кун! — тесе тав турӑм
Эпӗ сирӗн негра.
Ун пӗрре те миллионӗ
Пулмӗ ӗмӗр тӑршшӗнче.
Ӗҫлеме пур вӗри юнӗ,
Шӑнӑр пур — аллисенче.
Вӑрҫӑччен тасатнӑ атӑ,
Пулнӑ тарҫӑ та такам.
Тар тӑкса тупман нихҫан та
Хаклӑ ылтӑна пӗр грамм.
Генри Рун ҫӳрет-тӗр халӗ
Кансӗр йывӑр ӗҫсенче.
Ун пек тарҫӑсем сахал-и,
Мистер, сирӗн ҫӗр ҫинче?
Атом бомби мар, пӑртакҫӑ
Ҫӑкӑр кирлӗ вӗсене.
Вӗлерме вӗсем тӑмаҫҫӗ
Пирӗн ҫӗр ҫыннисене.—
— Штатсенче пурне те ирӗк
Панӑ мул пухас енчен.
Ох, ытла эсир политик!—
Терӗ те корреспондент
Чылайччен сӑмах чӗнмерӗ,
Пуплесси килмен енне
Пӳрнипе тытса ҫӳрерӗ
Пӗрчӗ ҫӳҫлӗ шӗлӗпне.
Ҫамкине тухса хӑпарнӑ
Шӗпӗне тытас йӑла
Тахҫанах пулма пултарнӑ, —
Халь сисмерӗ пулмалла.
— Чӑвашсем епле пурнаҫҫӗ,
Ӗлӗкрех вӗсем епле
Пурӑнни ҫинчен пӑртакҫӑ
Пирӗн халӑх пӗлмелле.
Хаҫата кӗртме чӑвашӑн
Авалхи хура пӳртне
Эпӗ ӳкерсе каясшӑн.
Мистер, тупӑр-ха пӗрне. —
— Эпӗ хам та, — тет Михайлов,—
Хамӑн ҫамрӑк ӗмӗрте
Районта асра тытмалӑх
Тӗл пулман хура пӳрте.
Чӑвашра эсир нисра та
Шыраса тупассӑр ҫук.
Никӗслет кунта бригада
Икӗ хутлӑ кирпӗч ҫурт.
Хура пӳрт — ҫӑви-масарӗ—
Питӗ кирлӗ вӑхӑтра
Юриех лартма пултарӗ
Инженер Америкра.
Сирӗн питӗ пултараҫҫӗ.
Чеччепе халер, чума
Ӗрчетсе унта лараҫҫӗ,
Юратаҫҫӗ тиф тума.
Темӗн те тупма пӗлеҫҫӗ,
Пӑрҫана, эрешмене,
Кӑпшанка та ӗрчетеҫҫӗ,—
Асталанчӗҫ ку чухне.
Савӑнсах лартма пултарӗҫ
Авалхи хура пӳрте,
Укҫалла вара кӑтартӗҫ
Тӗнчере нумай ҫӗрте.
Йӳҫӗ хӑрӑм кӑмакаллӑ
Тайлӑк пӳрт ҫине ҫырса
Лартмалла питех те паллӑ:
«Made in USA». —
Чи малтан кӗпер кӗрлерӗ
Атӑл ҫулӗ ҫийӗнче.
Каярах тусан ҫӗклерӗ
Ушкӑн лав урамсенче.
Лашасем хуллен утаҫҫӗ,
Ҫитнӗ шӑрӑхра ӗнсе.
Ҫуйӑн пулӑ пек пыраҫҫӗ
Кӗрешсем сӗтӗрӗнсе.
Пӳртсенчен ҫӳле ҫӗклерӗ
Тусана пӗр тапхӑр ҫил.
Ун айне кӗрес темерӗ
Пӳр пек сар автомобиль.
Машини тарма васкарӗ
Каялла, анчах ӑна
Ҫил хуса ҫитсе таптарӗ,
Чикрӗ хӑмӑр тусана.

* «Америкӑра тунӑ» тенине пӗлтерет.

# Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитетне

Совет писателӗсен Пӗтӗм Союзри иккӗмӗш съезчӗ Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитетне хӗрӳллӗ салам ярать.

Эпир, хамӑрӑн аслӑ Тӑван ҫӗршывӑн нумай нацилле литературин представителӗсем, хамӑрӑн литературӑна малалла, ҫӗнӗ ҫитӗнусемпе ҫентерусем патне ыванма пӗлмесӗр илсе пырассишӗн ӑслӑн тӑрӑшнӑшӑн хамаран тӑван Коммунистсен партине тав тӑватпӑр.

Коммунистсен партийӗ хавхалантарса тата ертсе пыракан совет халӑхӗ социализмла экономикӑн никӗсӗ пулса тӑракан йывӑр индустрие ыванма пелмесӗр аталантарса, Совет государствин хӑвачӗпе тӗрекне пур майсемпе те ҫирӗплетсе пырать; тӗнче историйӗнче пирвайхи хут ӗнтӗ пирӗн ҫӗршывра атом ядрин иксӗлми энергийӗ ҫынсен ырлӑхӗшӗн ӗҫлеме пуҫлать; пысӑк юханшывсем ҫинче — Атӑл, Обь, Ангара ҫинче кӗске срокрах пӗр гидростанци хыҫҫӑн теприне тӑва-тӑва лартаҫҫӗ; пӗр ялхуҫалӑх ҫулталакӗнче кӑна тахҫантанпах сухаламасӑр выртнӑ е нихҫан та сухаламан ҫӗрсене 17 миллион гектар ытла сухаланӑ. Ҫаксем вӗсем пур ҫынсем те вӗренекен, аслӑ шкулсенчи студентсен йышӗ икӗ миллион ҫынна ҫитнӗ ҫӗршывра пулса пыраҫҫӗ.

Совет Союзӗнчи тӑванла халӑхсем хайсен мӗнпур материальнӑй тата духовнӑй вӑйӗсене хӑватлӑн ӳстерсе тата чечеклентерсе пыраҫҫӗ. Пирӗн съезд трибуни сӑмах художникӗсен, тӗрлӗ чӗлхепе ҫыракан, анчах та пӗр тӗллевпе — коммунизм тӑвассишӗн, миршӗн тата мӗнпур халӑхсем хушшинчи туслӑхшӑн пыракан кӗрешӳпе пӗрлешнӗ художниксен тӑванла туслӑхӗн трибуни пулчӗ.

«Совет литераторӗсен иккӗмӗш съездне Хӗвеланӑҫпе Хӗвелтухӑҫӗнчи вуншар литераторсем, Китай, Инди литераторӗсем килсе илем кӳрӗҫ...» тесе пирӗн Горький каланӑ сӑмахсем пурнӑҫа кӗчӗҫ. Пӗтӗм тӗнчери прогрессивла писательсем, халӑх демократи ҫӗршывӗсенчен, капитализмла ҫӗршывсенчен килнӗ пирӗн тусӑмӑрсемпе хӑнасем пирӗн пата туслӑхпа салам сӑмахӗсем илсе килчӗҫ, пурнӑҫшӑн, вилӗме хирӗҫ, халӑхсене вӑрҫа кӗртсе ӳкерме хатӗр тӑракан хура вӑйсен киревсӗр ӗҫӗсене хирӗҫ пирӗнпе пӗрле сасӑ пачӗҫ.

Ҫӗрсе пыракан капитализм тӗнчи этемлӗхе ӑс-тӑн тӗлӗшпе чухӑнлӑха кӗртсе ӳкерме, мораль тӗлӗшӗнчен пӑсма тӑрӑшать. Империализм литератури этем пӗлтерӗшне пӗчӗклетме, ирсӗр туйӑмсене вӑратма, Горькин хавхалантаракан лозунгне «Этем—мӑнаҫлӑн янӑраса илтӗнет!» текен лозунга хуратса пӑрахма хӑтланать.

Пирӗн литература пуҫланнӑранпах унӑн произведенийӗсенче этеме вӗҫӗ-хӗррисӗр ӗненни, этемӗн ҫутӑ малашлӑхне ӗненни палӑрса тӑрать. Унӑн геройӗсем—пӗтӗм этемлӗхӗн телейӗшӗн кӗрешекенсен сӑнарӗсем, мӗнпур ҫӗршывсенчи простой ҫынсемшӗн ҫывӑх та хаклӑ сӑнарсем пулса тӑчӗҫ. Пирӗн литература вӑйӗ — вӑл пӗтӗм пурнӑҫпа, халӑхӑн мӗнпур шухӑшӗсемпе, туйӑмӗсемпе, паттӑр ӗҫӗсемпе, Коммунистсен партийӗн паттӑр кӗрешӗвӗпе тачӑ ҫыхӑнса тӑнинче.

Совет литератури Октябрьти Аслӑ социализмла революцин тӗллевӗсемпе уйрӑлми тачӑ ҫыхӑнса тӑрать. Пирӗн нумай нацилле литература историйӗ вӑл социализмла строй аталанса пынин, халӑхӑн пысӑк йывӑрлӑхлӑ кӗрешӗвӗн сӑн-сӑпачӗ, йывӑр кӗрешӳре тунӑ пысӑк ҫӗнтерӳсен сӑн-сӑпачӗ пулса тӑрать.

Хайсен романӗсемпе повеҫӗсенче, поэмисемпе пьесисенче, сӑввисемпе юррисенче совет писателӗсем пурнӑҫӑн революцилле аталанӑвӗн чӑнлӑхне кӑтартса пама тӑрӑшаҫҫӗ.

ССР Союзӗнчи писательсен Союзӗн ҫӗнӗ Уставӗнче, Пӗтӗм Союзри иккӗмӗш съезд йышӑннӑ Уставра, эпир социализм литературин пысӑк пӗлтерӗшӗ ҫинчен ҫапла каларӑмӑр:

Социализмран майӗпен коммунизма куҫса пынӑ условисенче художествӑлла совет литературин улӑштарса ҫӗнетекен обществӑлла ролӗ, воспитани паракан активлӑ ролӗ калама ҫук нумай ӳсет.

Совет литератури коммунизм идейисен илемӗпе чапне художествӑлла лайӑх формӑпа уҫса кӑтартмалла, ҫынсен ӑс-тӑнӗнчи капитализм юлашкисене хирӗҫ кӗрешмелле, хайсен геройӗсен сӑнарӗсенче совет ҫыннисен ӗҫӗсене, вӗсен обществӑлла пурнӑҫӗпе харпӑр хӑйӗн пурнӑҫне кӑтартмалла, пурнӑҫри хире-хирӗҫлӗхсемпе конфликтсене кӑтартса памалла. Совет литератури ҫӗннине палӑртса тӑрать кӑна мар, ӑна ҫӗнтерӳ тума та пур майсемпе те пулӑшса пырать.

Художествӑлла совет литератури совет ҫыннисен патриотла туйӑмӗсене революцилле хастарлӑхпа воспитани парса ҫирӗплетмелле, халӑхсем хушшинчи туслӑха ҫирӗплетсе пымалла, хӑватлӑ мир, демократи тата социализм лагерьне малалла пӗтӗстерме пулӑшмалла, пролетарилле интернационализмпа ӗҫҫыннисен тӑванла туслӑхӗн идейисене ҫирӗплетмелле.

Пирен ҫӗнӗ Уставӑн ҫак сӑмахӗсенче пирӗн шухӑшсемпе ӗмӗтсем ҫеҫ мар, советлӑ социализмла литература тунӑ ҫитӗнӳсем те палӑрса тӑраҫҫӗ. Пирӗн вулакансем, пирӗн халӑх — коммунизм тӑвакансем пирӗн литературӑна унӑн ҫак енӗсемшӗн юратаҫҫӗ те ӗнтӗ. Унӑн ҫак енӗсене пула пирӗн литературӑн нумай кӗнекисем — мирлӗ вӑхӑтра та, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче те — совет ҫыннисен тусӗ, вӗсемпе пӗрле пыракан пулса тӑраҫҫӗ.

Эпир, ССР Союзӗнчи писательсен иккӗмӗш съезчӗн делегачӗсем, ҫакна лайӑх пӗлетпӗр: ҫитӗнӳсем нумай пулсан та, пирӗн литература хӑйӗн пысӑк тӗллевне ҫителӗксӗр пурнӑҫласа пырать-ха. Социализм ҫӗршывӗн пурнӑҫӗ хӑвӑрт аталанса пырать, ӑна пысӑк произведенисенче, художествӑлла вӑйлӑ сӑнарсенче палӑртмалла. Хамӑрӑн паттӑр парти историне, хамӑрӑн ҫӗнӗ обществӑн историне лайӑх пӗлмелле, хӗрӳллӗн юратмалла. Ҫӗннипе кивви, ӗмӗрӗ иртни хушшинчи кӗрешӗве тарӑн уҫса кӑтартмалла, коммунизмӑн илемӗпе чапне ҫирӗплетсе пымалла, пурнӑҫри хире-хирӗҫлӗхсемпе конфликтсене хӑюллӑн кӑтартмалла. Сӑмах енӗпе ӗҫлекен чӑн-чӑн художник ӗҫӗ вӑл — йывӑр ӗҫ, тӳрӗ кӑмӑлпа тӑрӑшса тумалли ӗҫ. Ҫапла ӗҫлени, пысӑк культурӑллӑ пулни, ӑсталӑха ӳстерни кӑна пире хамӑрӑн вулакансен чун-хавал ыйтӑвӗсемпе требованийӗсене пурнӑҫласси патне ҫывхартма пултарать.

Социализмла реализм — этемлӗхӗн художествӑлла аталанӑвӗн историйӗнчи ҫӗнӗ утӑм. Ҫакна ӑна халӗ совет писателӗн сӑмахӗ пырса ҫитекен тӗнчери мӗнпур ҫӗршывсенчи ҫынсем лайӑх ӑнланаҫҫӗ. Пирӗн литература идейисемпе сӑнарӗсен пӗтӗм тӗнчери влиянийӗ ҫултан-ҫул ӳссе пырать.

Совет писателӗсен Пӗтӗм Союзри иккӗмӗш съезчӗ критикӑпа самокритика анлӑ сарӑлнӑ условисенче пулса иртрӗ. Идейӑпа художество тӗлӗшӗнчи требование ӳстерме чӗнни тӗрлӗ ӳсӗмри, тӗрлӗ национальноҫсен писателӗсене пӗрлештерсе тӑрать. Анчах та эпир халӑх валли хамӑр мӗн тума пултарнинчен, хамӑр тума тивӗҫлинчен сахалтарах ӗҫ тунӑ-ха!

Ҫапла ҫырас пулать: пирӗн литературӑри геройсене ҫамрӑксемпе ачасем хайсен юлташӗсем тесе шутлаччӑр, вӗсене хайсемшӗн тӗслӗх вырӑнне хуччӑр! Ҫапла ҫырас пулать: ҫынсем хушшинчи ҫӗнӗ, ӑслӑ та илемлӗ хутшӑнусене ҫирӗплетессишӗн тӑрӑшса ӗҫленӗ, кӗрешнӗ чухнехи кунсенче пирӗн вулакансем — ӗҫченсем пирӗн герой ҫулӗпе пыччӑр!

Ҫапла ҫырас пулать: чи инҫетри ҫӗршывсенчи шӑпасӑр ҫынсемшӗн пирӗн сӑмах вӗсене йывӑр кӗрешӳре пулӑшакан тусӗпе тӑванӗн сӑмахӗ пек, ирӗклӗх гимнӗ пек янӑраса илтӗнтӗр!

Социализмла реализм меслечӗ писательсен хайсене майлӑ уйрӑмлӑхӗсем, стильсем пулмаллине, творчествӑри тӗрлӗ юхӑмсен ӑмӑртӑвӗ пулмаллине пӗлтерет. Пирӗн идейӑсен аслӑ чӑнлӑхне, пирӗн пурнӑҫӑн пуянлӑхӗпе тӗрлӗ енӗсене лайӑхрах кӑтартса пама художествӑлла ҫӗнӗ те ҫӗнӗ майсене ыванма пӗлмесӗр шырани кирлӗ.

Совет писателӗсен иккӗмӗш съезчӗ, хамӑрӑн литературӑн ҫитмен-

Укерчӗкре: Румыни поэчӗ Михай Бенюк съездра пулнӑ чӑваш писателӗсем хушшинче. Сулахайран сылтӑмалла: Уйӑп Мишши, Михай Бенюк, И. Максимов-Кошкинский, П. Хусанкай, А. Алга, М. Сироткин, С. Шавлы.



## АСА ИЛЕТĔП ЧАКĂР КУÇÇЕНЕ

**Александр КЛЕМЕНТЬЕВ**

Эс ман пата çырмарăн пĕр çыру та...
Шупашкарти декабрь каçĕ сутă,
Мерчен пек юр хуллен çеç вĕçкелет.
Савниçĕм, сан çинчен пĕлес килет,
Анчах çырмарăн темшĕн пĕр çыру та.

Декабрь уйăхĕ — çурла пек уйăх —
Хула çине тăкать хăй шевлине.
Шухăшăмпа вĕçетĕп инçене:
Аса килет Шăхалĕн вĕççĕр уйĕ,
Шăхаль çинчи пекех çап-çутă уйăх
Аса илтерчĕ чакăр куççене...

Эх, мĕн тери эп сан çинчен пĕлесшĕн!
Тен, астăватăн? — Уроксем пĕтсессĕн
Сана эп чĕнтĕм уй-хире тухма.
«Ах, пултараймăп, тусăм, — терĕн эсĕ,—
Йĕлтĕрпеле санпа пĕр тан чупма».

Те ăшăччĕ, те сивĕччĕ декабрь.
Хĕвел шартатчĕ пирĕн куççене.
Эс пултăн ун чухне чечек пек капăр,
Анчах амантрăн манăн чĕрене,
Те ăшшăн юратса, те юратмасăр.

Санпа пĕрле ун чух чылай çÿрерĕм.
Тен, эс манман пуль? Укрĕн юр çине.
«Ална парсамччĕ, пулăшсамччĕ, — терĕн, —
Эс пулăшма пĕлместĕн хĕрсене».
Хирте санпа чылай-чылай çÿрерĕм,
Анчах та темшĕн урăх эс ÿкмерĕн.

Мĕн-ма çырмастăн халĕ пĕр çыру та?..
Шупашкарти декабрь каçĕ сутă,
Мерчен пек юр хуллен çеç вĕçкелет.
Тăванăм, сан çинчен пĕлес килет,
Анчах çырмастăн темшĕн пĕр çыру та.

* * *

Утар-ха юнашар, алран-алла тытса,
Куçран пăхса,
Пĕрне-пĕри сăмах чĕнмесĕр.
Сан кăмăлу ача чĕри пекех таса,
Вунсаккărти куççем —
Çурхи çанталăк евĕр.
Хальччен курман пекех
Пăхатăп сан çине...
Текех ан вăтансам манран,
Хитре тăванăм.
Эс илтнĕ-и çăлкуç мĕнле юрланине?
Тен, çăлкуççем сана
Илемлĕ саса панă.
Санпа чухне аса илетĕп иртнине.
Сан евĕрех вунсаккăрта,
Тăванăм, эп те пулнă.
Вăл вăхăтра пĕлмен эп эсĕ пуррине,
Эс мансăрах
Букварь вуланă, макăрнă е кулнă.
Ан тĕлĕн эп кăштах ватăлнинчен.
Пĕр пек пулмарĕ пирĕн
Çамрăклăхăн сулĕ.
Эс пĕчĕк чух,
Сирень чечекленсен,
Тумларĕ ман алсем çине
Анне куççулĕ.
Вăл вăхăтра эп юратма та пĕлеймен,
Мĕншĕн чĕре пăлханнине те
Сисеймен пуль.
Ун чух пире чĕнетчĕç пурăнма,
Е çапăçса вилме,
Пире чĕнетчĕ
Çулăм хыпнă Киев, Севастополь...
Хаш чух кăна эп, тĕлĕкре кăна,
Хальхи пекех санпа пĕрле утаттăм.
Каçар, ун чух эп палламан сана,
Анчах та темшĕн
Пурпĕрех паллашасса шанаттăм.
Паян утар-ха юнашар,
Алран-алла тытса,
Куçран пăхса,
Пĕрне-пĕри сăмах чĕнмесĕр.
Вĕри чĕрÿ сан çăлкуç пек таса,
Сан куçусем —
Ман чĕрене вырнаçнă ĕмĕт евĕр.

## ÇĔНĔ ÇУЛ КАÇ

**Павел ВАСИЛЬЕВ**

Тĕттĕмре лĕпĕш пек çаврăнса юр çăвать,
Çĕлĕкпе пакуна ерипен шуратать.
Çĕнĕ çул куркине çĕклет халăх паян
Кремльти курантсем шăп вуниккĕ çапсан.

Эп тăратăп постра. Алăра автомат.
Ялйыша асилеп, — чун-чĕре савăнать:
Çулсерен ÿсĕм хыççăн вăл ÿсĕм тăвать,—
Вăйларан-вăйлăрах тырă-пулă пухать.

Эпĕ карттă çинче ирхине, каçхине
Тупнă хамăр ене, Шупашкар хулине.

Нумайччен, нумайччен пăхнă хĕпĕртесе:
«Эп çуралнă кĕтес халь мĕнле-ши?» — тесе.

Анăçран тухăçа пин-пин çухрăм тăршши
Стройка шавĕпеле кĕрлет манăн çĕршыв.
Эпĕ сан хуралçу, сан шинеллĕ ачу,
Сыхă тăрăп эп кун чун-чĕре тапнă чух.

Тÿперен мамăк пек шурă юр тăкăнать,
Ерипен шуратать çĕлĕкпе пакуна.
Юлташсем! Чĕререн саламлатăп сире
Çĕнĕ çул ячĕпе инçетри чикĕрен.

лĕхĕсемпе вăйсăр енĕсене критиклесе, Совет Союзĕнчи мĕнпур литераторсене классикăлла вырăс литературин, ССР Союзĕнчи тăванла халăхсен литературисен, çавăн пекех тĕнче литературин чи лайăх традицийĕсене татах та тарăнраххăн аталантарса пыма, хамăрăн советла социализмла литературăн йĕркеленсе çитнĕ традицийĕсене хăюллăн çирĕплетме, урăх çĕршывсенчи хамăрăн тусăмăрсен художествăлла ăсталăхĕн паха опытне творчествăлла вĕренсе пыма чĕнчĕ.

Совет писателĕсен литературăн çамрăк кадрĕсене воспитани парса çитĕнтерес тĕлĕшпе пĕтĕм ĕçе лайăхлатмалла, çак питех те кирлĕ ĕçре Горький хушса хăварнисене тата унăн традицийĕсене пурнăçа кĕртсе пымалла.

Совет писателĕсен Пĕтĕм Союзри иккĕмĕш съезчĕ Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитетне çапла шантарса калать: совет интеллигенцийĕн пысăк отрячĕ — Коммунистсен партийĕ тавра тачă пĕтĕçнĕ литература деятелĕсем хăйсен творчествăри хастарлăхне ÿстерме, халăх требованийĕсене пурнăçлама яланах хатĕр.

Совет писателĕсен иккĕмĕш съезчĕ пирĕн литература аталанăвĕнче историлле паха ĕç пулса тăрать. Писательсем хăйсен Союзĕн ĕçне тĕпренех лайăхлатма, хăйсен речĕсенче самокритикăна вăйлатма, харпăр хăйне лăплантарса ларассине, мăнаçланассине пĕтĕмпех пĕтерме, ăсталăх тĕлĕшпе пысăк требованисем лартма тăрăшаççĕ. Писательсем ĕçре социализмла реализмран пăрăннисене хирĕç, пирĕншĕн юч буржуалла-националистла тата космополитла идеологие хирĕç, буржуалла натурализмпа формализм влиянине хирĕç яланах кĕрешме хатĕр тăраççĕ.

Совет писателĕсем тăван халăхăн, партин шухăшĕсемпе, вĕсен туйăмĕсемпе ĕçлесе пурăнаççĕ.

Эпир пĕтĕм тĕнчери мир ĕçне хÿтĕлетпĕр, вăл çĕнтертĕр тесе чунчĕререн тăрăшса ĕçлетпĕр. Халĕ тĕнчене каллех хура пĕлĕтсем хупласа илчĕç. Анчах та усал ĕç пулсан, çĕнĕрен тĕнче вăрçи пуçланас пулсан, совет писателĕсем социализмла Тăван çĕршыва пулăшма хăйсен пĕтĕм пултарулăхне парĕç, иртнĕ вăхăтра Германи фашизмне хирĕç пынă, гитлерла пусмăра çĕмĕрсе тăкнипе вĕçленнĕ вăрçăри пекех хăйсен пурнăçĕсене те пĕр шеллемесĕр парĕç.

Сывă пултăр Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕпе унăн Центральнăй Комитечĕ!

Сывă пултăр коммунизм!

**СОВЕТ ПИСАТЕЛĔСЕН ПĔТĔМ СОЮЗРИ ИККĔМĔШ СЪЕЗЧĔ.**

# САЛАМПИ

*Повесть*

**Александр АРТЕМЬЕВ**

## ЙĔЛТĔР ЙĔРĔ

**Йĕлтĕр йĕрĕн йăрăмĕ**
**Асран кайми çул пулчĕ.**

***Халăх юрри.***

Ĕмĕр ĕмĕрлесси уй урлă каçасси мар,— теççĕ вырăссем. Пурăнан пурнăçра тем тĕрлĕ кун та килсе тухать, хура кĕр пек хура хурлăх та пулкалать; çапах та пурнăç хурлăхлă мар, калама çук илĕртÿллĕ,—тенĕччĕ пĕррехинче Анна Ивановна. Саламни халĕ çав сăмахсене час-часах аса илкелет. Сурпан сырмасăр ĕмĕр иртternĕ тăлăх хĕрарăм та çапла калать пулсан, Саламнин вара мĕншĕн шанчăка çухатас-ха? Шанчăк пуррисем телейлĕ, тенĕ поэт. Анна Ивановна каларĕш, çамрăкăн курасси кунран-кун малалла. Тĕрĕссипе, Саламни халĕ тин пурăнма пуçлать-ха, ыр курасси — малашне, темелле. Анчах чĕре чул мар çав. Чул та, ытла хытă хĕртсен, çуралать...

Пĕр вырсарни каç лекци вулама кÿршĕ колхозран Саланов килчĕ,— ăна ятарласах Борисов чĕннĕ-мĕн. Паллă садовод колхозниксене хăйĕн ĕçĕ-хĕлĕ çинчен питĕ тĕплĕн каласа кăтартрĕ. Яланхи пекех, Лена аппĕпе Павăл унран нумай ыйтусем çинчен ыйта-ыйта пĕлчĕç. Лекци хыççăн, ваттисем кайса пĕтсен, çамрăксем ташлама пуçларĕç. Саламни ташлама юлмарĕ, Саланова хăйсем патне хăнана илсе кайрĕ. Лешĕ, киле тем пекех васкатчĕ пулин те, пĕрле вĕреннĕ хĕр кăмăлĕшĕнех пыма килĕшрĕ, пĕчĕк Валерикпа та калаçса йăпанас килчĕ.

Валерик Çемене сассинченех палласа илчĕ те ăна хирĕç алкумне чупса тухрĕ, тÿрех каччă хулĕнчен çакăнчĕ. Саланов ăна, мечĕк тытнă пек, çăмăллăн çĕклесе пÿрте илсе кĕчĕ. Саламни апат хатĕрленĕ хушăра амăшĕ Çеменпе шăкăлтатса каласса ларчĕ, унăн ашшĕ-амăшĕ мĕнле пурăннине, ял хыпарĕсене ыйта-ыйта пĕлчĕ. Валерик каччă çумĕнчен каймарĕ. Саламни, шалти пÿлĕме кĕрсе, тимĕр кăмака хутса ячĕ, сакайĕнчен сăра ăсса тухса, ăшăтма лартрĕ. Касхи апат пĕрле ларса çирĕç. Валерик Çеменпе юнашар ларчĕ те, мăн çын пекех, пĕр тумлам ящка тăкмасăр, ытлашши пакăлтатмасăр çирĕ. Апат хыççăн Саламни Çемене шалти пÿлĕме чĕнчĕ. Амăшĕ сĕтел пуçтарса юлчĕ. Валерик кушакпа выляма тытăнчĕ те хăна пуррине те манчĕ.

Çемен шалти пÿлĕме кĕрсенех стена çинчи сăнсене, Алмазов портретне асăрхарĕ. «Усрать иккен,—шухăшларĕ хăй ăшĕнче. — Çав ĕнтĕ вăл, çынна пĕр юратсан. Çынпа паллашма йывăр, теççĕ те, анчах унран уйрăлма тата йывăртарах пулас».

— Туртма пултаратăн, — терĕ Саламни, каччă умне пĕчĕкçеç шурă пепельница лартса парса.

— Эпĕ ак кунта, салтакла,—терĕ Çемен, тимĕр кăмака умнелле пуканне шутарса.—Фронтри çĕр пÿртсенче е вакунсенче çапла, кăмака умне ларса туртаттăмăр: капла тĕтĕме кăмака туртса илет.

Саламни ун çине ăшшăн пăхса илчĕ. Çемен хура костюмпа, галстукпа, шурă кĕпепе. «Хăçан çапла тумланнăччĕ вăл?»—куçхаршисене пĕрсех шухăшларĕ хĕр, анчах ниепле те аса илеймерĕ.

— Пирĕн пата леш хайхисем, «кĕрхи шăнасем», килсе кайрĕç, Саламни,—кулса пĕлтерчĕ каччă; хăй пирус тĕтĕмне тимĕр кăмаканалла çилĕллĕн вĕрсе кăларчĕ.

— Мĕнле шăнасем? — тĕлĕнчĕ хĕр.

— Чушковпа Ласкин. Астумастăн-им?

— А-а...

Саламни аса илчĕ. «Ун чухне театрта Çемен шăп çакăн пек тумпаччĕ, Анатолий те çакнашкалах тумланнăччĕ», терĕ вăл ăшĕнче.

— Мĕн çăмăлпа килнĕ ку тарана çити?

— Лекци вулама. Пĕри мичуринла биологи çинчен вулать, тепри Пушкин çинчен,—йĕрĕнчĕклĕн кулса каларĕ Саланов. — Пĕлессĕ ун йышшисем хăçан мĕн кирлине. Пушкин çуралнăранпа кăçал çĕр аллă çул тултарать, — лекци кирлĕ, халăх ыйтать. Биологире морганистла-вейсманистла суя вĕрентĕве çапса аркатни çинчен каллех лекци кирлĕ, халăх ыйтать. Ласкинсемпе Чушковсем ăçта мĕн шăршă пуррине çухрăмранах сисеççĕ. Темле майпа иккĕшĕ те командировка илсех килнĕ. Лере те, хулара, çавсене хÿтĕлекен айвансем пурах вĕт. «Алла алă çăвать», теççĕ пулас пĕр-пĕрине пулăшнă чух. Кусем вара пур лекторсене те намăслантарса кăна çÿреççĕ.

— Вĕсем хăйсене искусство çыннисем темесччĕç-и? Мĕнле-ха биологи ыйтăвĕсем çинчен лекци вулама тытăннă? — ыйтрĕ Саламни.

— Укçа чул кастарать,—терĕ Чушков пĕрре театрта, астумастăн-им? Акă чул касаççĕ те ĕнтĕ... чĕлхепе. Пĕтĕм яла тĕлĕнтерсе хăварчĕç... Эпĕ вăл каçхине садран ĕшенсе таврăнтăм (темиçе улмуççие мулкачсем кăшланăччĕ те, çавсемпе аппалансаттăм). Анне калать: «Ма халех выртрăн, ма клуба каймастăн? Яла писательсем килнĕ, теççĕ», тет. «Мĕнле писательсем?»—тесе ыйтатăп аттерен. Атте кăмăлне ху пĕлетĕн, пĕр тарăхсан, пурне те вăрçать. «Мĕн писателлĕхĕ вĕсен! Килнĕ-килмен колхозран икĕ кило пыл, панулми, пилĕк литр сĕт çыртарса илчĕç», тет вăл тарăхса. Атте каланине ун чухне ним выраннех те хумарăм, часрах клуба тухса утрăм. Клубра халăх кукăль ăшĕ пекех тулнă, ниçта тăма вырăн çук, ача-пăча тавраш сцена çинех хăпара-хăпара ларнă. Писательсем килнĕ-çке-ха! Ак хайхисем, писатель тенисем, пырса кĕчĕç: Ласкин, Чушков, Вирьялов. Виççĕшĕ те хĕрĕнкĕ. Куçăм-пуçăм чарăлсах кайрĕ, çурăм çине сивĕ тар тапса тухрĕ... Ласкинĕ мичуринла генетика çинчен лекци виларĕ. Пĕр çур сехет пек хăласланчĕ, мухмăр-сухмăр çунтарнипе çур графин шыв ĕçсе ячĕ. Çынсем ыйту пама пуçларĕç те, шалтах аптраса ÿкрĕ ача, ун вырăнне хамăн тăрса каламалла пулчĕ вара... Лекци хыççăн виççĕшĕ те тÿрех лавккана утрĕç. Мана та чĕнчĕç те — каймарăм. Лавккара вара шавланă вĕсем! Ласкинне пĕлетĕн, киккирикĕ хĕрсен: «Гений! Бездарь!» тесе кăшкăрма çеç пултарать, пурне те тиркет, никама ним тĕшне хумасть. Вăл çапла писательсемпе композиторсене чĕлхе вĕççĕн хăртса тăнă хушăра лавккана пирĕн Капитонов пыр кĕр. Алешкăна астăватăн-и? Бригадир. Питĕ хаярскер. Хайхи кусем шавланине, мухтаннине итлесе тăрать, тăрать те: «Камсем пулатăр эсир, паллаймарăм?»— тет кусене. «Писательсем»,—теççĕ кусем. Пĕри хăйне: «Профессор Чушков», тет, тепри хушаматне те каламасть: «Пиллĕкмĕш номере пăхăр!» тет, аллине çÿлелле çĕклесе. Ман Алешка вара вĕсене савăнтах лавккаран пăсăрлантарса кăларса ярать. Хайхи «писательсем» тепĕр кунне ирех ялтан тухса шăвăннă. Колхоз садовочĕсем çинчен очерк çыратпăр, тетчĕç, малтан — тек кус умне те курăнмарĕç вара. Пирĕн пĕр ватă пахчаç пур — Хĕлип мучи, тетпĕр, питĕ кăра силĕллĕскер. Çав калать: «Хушамачĕсене пĕлсех панă вара кусене: пĕри Чушка, тепри Ласка, чăвашла — Юс ĕнтĕ. Юс-тус. Чăнах та, пĕри сысна пекех сăмсăр, тăрпалтай, тепри юс пекех чее, çăткăн», тет.

Саланов, калама чарăнса, пирус тĕпне тимĕр кăмаканалла ывăтрĕ те вăл сунса кайнине пăхса ларчĕ. Унăн хура куçĕсенче кăмакари çулăм ялкăшни курăнчĕ.

— Мĕнле сирĕн яла пыма ăс ситерне-ха вĕсем?—ытахальтен ыйтрĕ Саламни, мĕн ыйтмаллине ыйтаймасăр, каччă куçĕсенче кăмакари çулăм вĕлтлетсе ялкăшнине сăнаса.

— Вирьялов каникула таврăннă та, çавăнпа пĕрле ерсе килнĕ. Туслă мар-и вĕсем! Левене поэт тăватпăр, тесе мухтанаççĕ, тет.

Саланов хĕр çине пăхрĕ те лешĕ тимлесе итлеменнине, ăна «кĕрхи шăна-

* *Малалли. Пуçламăшĕ 1954 çулхи— 511 номерсенче.*

сем» мар, пачах урăххи пăшăрхантарнине сисрĕ, вара пĕр хушă сăмах тупаймасăр ларчĕ.

— Шупашкартан çыраççĕ-и?—ыйтрĕ вăл, татах пирус кăларса.

Салампи чĕри кăртах турĕ. Кам пирки ыйтнине ăнланчĕ вăл, çапах хăй ăнланнине систермерĕ.

— Пĕчĕк Нина çыркалать те, халь çине вăл та çырми пулчĕ темшĕн, каникула кайнă пулас. Урăх кам çыртăр ĕнтĕ?

Саланов тимĕр кăмакаран вутпуççи илсе пирус чĕртрĕ те вутпуççи вĕçĕ кăмрăкланнине пăхса ларчĕ. «Çак кăмрăк урайне ӳксенех—калатăп»,—шухăшларĕ вăл, анчах кăмрăк ӳкмерĕ.

— Салампи, эсĕ зоокружокра вĕренме чăвашла учебник кирлĕ, теттĕн мар-и? Халь кăна районти кĕнеке магазинне çĕнĕ учебник килнĕччĕ — йăлтах илсе пĕтерчĕç. Сан валли туянас теттĕм — ĕлкĕреймерĕм. Эсĕ пирĕн ял клубĕнчен илме пултаратăн, унта темиçе те пурччĕ пулас. Çул майĕн пĕр-пĕр кĕрсе тух, сана Шалтайкинпа паллаштарăп: питĕ тĕлĕнмелле çын, ун урлă темле кĕнеке те тупма пулать.

— Илтнĕччĕ ун çинчен.

— Камран?

— Вирьялов каласа култаратчĕ: «Питĕ кулăшла тип, «феноменальнăй память», тетчĕ.

— Хăйне майлă çын, анчах питĕ ырă кăмăллă, пултаруллă, ĕçчен этем.

— Ыран-паянах района кайса килмелле, тен, кĕрсе те тухăп,—килĕшрĕ Салампи: çав самантрах унăн çурхи тӳпе евĕр таса сенкер куçĕсенче ӳпкевлĕ шухăш палăрчĕ: «Çемен! Эсĕ мана хисепленине эпĕ яланах туятăп; мĕншĕн эсĕ халĕ мана мĕн каламаллине пĕле тăрах урăххи çинчен калатăн? Курмастăн-им чĕрем тулли, куçăм тулли тунсăхăма?»

Çакна сăмахпа каланă пекех, каччă тĕрĕс ăнланчĕ. «Куратăп, — терĕç вара унăн хура куçĕсем. — Эсĕ асапланнине куриччен, сан асапна хам çие илнĕ пулăттăм! Анчах мĕн тăвам-ха эпĕ, тăвам? Тĕрĕслĕх, тен, яланах питĕ тăварлă пуль, вăл сан суранна пушшех ыраттарĕ, пурпĕрех эпĕ сан умра юптарса калаçма хăяймастăп, ан айăпла».

— Вĕсем, сăмах майĕн, Алмазова та асăнчĕç, вăл кунта вирьял чăвашĕсен юррисене çырса çӳренинчен тăрăхларах калаçрĕç, — терĕ Саланов.

Тĕлĕрнĕ евĕр, сӳрĕккĕн итлесе ларакан Салампи сасартăк вăраннă пек пулчĕ, унăн куçĕсем кăварла ялкăшма пуçларĕç: ним те мар, савнин ячĕ кăна, асамлă сăмахла, хĕр сăнне тӳрех улшăнтарчĕ, чĕрине çулăм хыптарчĕ, вăй-хал кĕртрĕ. Çапах хĕр, чунне хытарса, савнийĕ çинчен ним те ыйтмарĕ: Çемен, пĕр пуçланăскер, пурпĕрех мĕн пĕлнине каласа парасса туйрĕ вăл.

— «Анатоль ĕçке яраннă», терĕ Ласкин мана. Ĕненесех килмерĕ, анчах Юс-тус суймарĕ пулас. Пĕркун, хăй юрăсем пухма килсен, Анатолий пирĕн патра темиçе çĕр выртрĕ. Ун чухне эрех сĕнсен те ĕçместчĕ вăл, сăра кăна сыпкалатчĕ. «Шывра путнинчен ытларах çынсем эрехре путаççĕ», тет. «Сăрине тутанса пăхас. Вирьял чăвашĕсен сăрине авал Пугачев та питĕ ырланă», текелесе ĕçетчĕ,—шӳтлерех каларĕ Саланов, хĕр çине пăхса; çавăнтах вара хăй шӳтлесе каласнăшăн именчĕ.

Салампи халĕ ун çине мар, мачча каштинчи турат куçĕ çинелле пăхать. Унăн куçĕсем тулли черкке пек çутăлаççĕ. вĕсене кĕс-вĕç тулса тăкăнасла куççуль йăлтăртатать.

— Пĕрре çапла, Алмазов кӳршĕ яла тухса каяс тенĕ чух, кĕрекере ларатпăр. Эпĕ ăна, сăмах майĕн, сан çинчен каларăм. Пĕлетĕн ăна, мăнкăмăллăскерне, хăй нимпе те малтан сăмах тапратас çук. Ун сăнĕ сан патра пурри çинчен пĕлтертĕм. Вăл вара çавăнтах, ним каламасăр, кĕрекерен тухрĕ те йĕлтĕрпе уй урлă кунта касрĕ...

Саланов, калама чарăнса, хĕр еннелле пăхса илчĕ. Салампи, сĕтел çине чавсаланса, питне алăпа хупласа ларчĕ; унăн сăнĕ курăнмасть, илемлĕ шурă мăйĕ синче кăна тем мăкăлĕ, шыв ĕснĕ чухнехи пек, пĕрре хăпарать те тепре анать.

— Таврăнма каçа юлсă таврăнчĕ. Сил-тăмана пăхмасăрах уй урлă каснă. Эп ун чухне шалти пӳлĕмре кĕнеке вуласа ларattăм. Кĕчĕ те: «Ыран Хусана тухса каятăп», терĕ. «Эсĕ район тăрăх çӳресшĕнччĕ-ске, сана ку енчи юрă ăстисемпе паллаштарма пултăм вĕт? Хамăр енчи Гавриил Федоровсемпе паллаштаратăп», тетĕп. Ним те хирĕç чĕнмерĕ. «Аш çунать темле, Сёма, ĕçтер-ха», терĕ, нихçан ĕçменскерех. Хаяррине икĕ стакан умлă-хыçлă ячĕ те тӳрех выртрĕ. Чĕнсе те чĕнмест. Пĕлетĕн ăна: шуйттан пек мăнкăмăллă! Ӳкĕтлесе те ӳкĕте кĕмест. Тепĕр кунне мана вăратмасăрах тухса кайнă. Хам вăраннă пулсан ямастăм, вăйпах кунта тепре илсе килеттĕм.

— Вăйпа?—терĕ Салампи улшăннă сасăпа. Вăл халь те Çемене тӳртĕн ларать, анчах каччă ун сăнне стена çумĕнчи пысăк тĕкĕр çинче асăрхарĕ: хĕр пуçне сулахай хулпуççи çинелле тайнă, унăн сулахай куçĕнчен шултра çутă тумлам йăпăртатса анчĕ те тута хĕррине чарăнчĕ; тулли черккене тайăлтарсан, çутă тумлам çапла юхса анать, анчах вăл никама та çакнашкал пăшăрхантармасть. Салампи, Çемен еннелле çаврăнмасăр, тем турĕ — тĕкĕр çинчи çав самантрах питне тутăр вĕçĕпе шăлса илчĕ.

— Вăйпа çын кăмăлне юраймăн,—терĕ Салампи, ним пулман пекех кулма тăрăшса. Çав кулă каччă чĕрине ыраттарчĕ. «Ытла салхуллă иккен эсĕ, куççуль тутаннă кулă!»

Çын суранне чăртмаххăн сĕртĕнсе ыраттарнăшăн Çемен хăйне хăй ятласа илчĕ. Айăпне сирес тесе, Салампи кăмăлне каштах та пулин уçас килчĕ унăн.

— Ана юратнă чухлĕ урăх пĕр арçынна та юратман пуль эпĕ,—терĕ те вăл, пирус тĕтĕмне сăтса, пĕр хушă чĕнмесĕр ларчĕ. Салампи те сăмах хушмарĕ. кăвак куçĕсем кăна, каччă çине хурлăхлăн пăхса: «Кала, кала! Ун çинчен мĕн пĕлнине йăлтах каласа пар мана!» терĕç. Çемен вара малалла каларĕ.

— Вăрçă пĕтнĕ çул-ха вăл, кĕркунне... Эпир, çартан таврăнакан салтаксем, Порт-Артурта, тинĕс хĕрринче, пăрахут кĕтетпĕр. Портран инçех те мар пысăк сад, темле пуян самурай дачи пулнă пулмалла, пушă çурт, хуçисем çук. Мĕн пулнă, тетĕп: садри пур салтак çав çурт еннелле васкать. Эпĕ те ути-утми унталла пыратăп. Веранда çинче рояль ларать, рояль умĕнче — салтак. Çавă пухнă иккен халăха. Итлесе куркаланăччĕ чаплă пианистсене те. Анчах ку вара, те хăй çамрăк пулнăран, те хамăр салтак тасти инçетри çĕршывра тăван кĕвĕсене чаплă каланăран, тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтерчĕ, темле асамçă пек туйăнса кайрĕ. Каласса вăл пĕр кĕвве йĕркипе вĕçне тухиччен мар, темиçе тĕрлĕ кĕвве татăкăн-кĕсĕкĕн калать, пĕр кĕвве пĕр çаврăм калать те чарăнать, кăшт тăрсан — урăх кĕвĕ çине куçать. Ни попури мар, ни мĕн мар.

## ÇĔНĔ ÇУЛТИ ĔМĔТСЕМ



Иван Алексеевич Горячова текстильщиксем яланах хисеплесе «пирĕн начальник», «пирĕн мастер» тесе чĕнеççĕ. Чăнах та, пир-авăр тĕртекен фабрикăри пĕрремĕш цех начальникĕ Иван Алексеевич Горячов пир-авăр комбинатĕнчи чи хисеплĕ çынсенчен пĕри. Утмăл çул хушшинче Иван Алексеевич çĕршыври пир-авăр фабрикисемпе комбиначĕсенче пайтах ĕçлесе курнă. Вуникĕ çулта чухнех вăл фабрикăра станок умĕнче тăнă, пĕчĕклех йывăр ĕçре асапланнă. Патша чухне çитмен пурнăç çамрăк ачана ĕçе хăваланă.

Халь Иван Алексеевич иртнĕ пурнăçа аса илет те çапла калать:

— Ун чухнехи пурнăçа манăн асăнас та килмест. Çын шутне кĕриччен манăн пайтах асап курмалла пулнă. Пĕчĕклех вуникĕ-вунтăватă сехет ĕçленине халь те астăватăп. Совет влаçĕ вăхăтĕнче эпĕ Тăван çĕршывшăн, хамăр халăхшăн ырми-канми савăнса ĕçлетĕп. Ĕс — манăн савăнăç, манăн телей, манăн канăç, манăн чăн-чăн пурнăç. Çĕнĕ çулти ĕмĕтсем манăн татах та пысăк... Утмăл çултан иртрĕм пулсан та, халичченхи пекех тăрăшса ĕçлеме ĕмĕтленетĕп. Çĕнĕ çулта татах та ытларах пир-авăр тĕртсе кăларма хамăр рабочисене пулăшасси, çамрăк рабочисене ĕçе вĕрентесси манăн чи юратнă ĕмĕтĕм пулса тăрать. Çĕнĕ çулти çĕнĕ ӳсĕмсемшĕн, тăвансем!

«Мĕнле капла?» тетĕп. Çывăхарах пырса пăхатăп, çынсен пуçĕсем урлă. Пианист умне тем чухлĕ нота листисем купаланă иккен. Вăл пĕр листине илет те çавăнтах рояльпе каласа пăхать е каласа та тăмасть, нотăсем çине пăхать те: «Ку лайăх мар», — тет, теприне илет. Вăл нотăсене çапла, хаçат вуланă пек, вулани мана тĕлĕнтерчĕ те кĕвĕçтерчĕ те: çав самантра эпĕ хам нота йĕркине пĕлменшĕн пурнăçăмра пĕрремĕш хут ӳкĕнтĕм. Салтак никам çине те пăхмасть, пур кĕвве те каласа пĕтерейместерен хăранă евĕр, кĕвĕ хыççăн кĕвĕ улăштарать. Нумай хушă выçăхса пурăннă çын, тен, кĕрекери пур апатсимĕçе сисе ярасла, кашни кучченеç çинех çапла тăранать пуль? Садра Бетховен, Шопен, Чайковский, Рахманинов произведенийĕсем, китай, япун, кĕввисем пĕрин хыççăн тепри шăранаççĕ. Акă салтак нотăсен тĕркине йăлтах тĕрĕслесе тухрĕ те çамка çинчи тарне пилоткăпа шăлса илчĕ, унтан хăй ăссĕн, нотăсăр выляма пуçларĕ. Халĕ пур кĕвĕ те хутăшса кайрĕ, хушăран çав тĕлĕнмелле импровизацире чăваш кĕвви те илтĕннĕ пек туйăнать, темле паллаviolнă, пĕлнĕ, чуна пырса тивекен тăван кĕвĕ пек туйăнать. Ак хайхи! Китай садĕнче чип-чиперех Федор Павловăн «Вĕлле хурчĕ, ылтăн хурт» кĕвви янăраса кайрĕ. Чăн, хăранипе йăлт тара ӳкрĕм... Кайран паллашрăмăр: Анатолий Алмазов, анат енчи чăваш. Çĕрĕпех уйăрлми тинĕс хĕрринче çӳрерĕмĕр, çăвар хупми каласрăмăр: тăван чĕлхепе каласманни нумай пулатчĕ. Чăннипе, вăл ытларах калаçрĕ. Калаçасса чăвашла питĕ таса, илемлĕ калаçать. Вăл мана ун чухне хĕрсе кайсах Иакинф Бичурин, Иван Яковлев пек чаплă чăвашсем çинчен, хамăр хушăран тухнă ытти паллă çынсем çинчен те нумай каларĕ. Эпĕ вара, вăл хамăр халăх çинчен çав тери нумай пĕлнинчен тĕлĕнсе, хам питĕ сахал пĕлнинчен вăтанса пĕтрĕм. Çапах хамăр халăхра çакнашкал пултаруллă, маттур çамрăксем пурришĕн калама çук савăнтăм. Пĕлесчĕ эсĕ, Саламп и, çав каç эпĕ Алмазова мĕнле ытарайми итленине, ăна мĕнле юратса пăрахнине!

Саланов хăй ытлашши хавхаланса, кăштах хусса каланинчен именчĕ те калаçма чарăнчĕ: ытла «илемлĕ» сăмахсемпе каласнине туйрĕ пулас. Анчах вăл çакна Саламп и умĕнче Алмазова тӳрре кăларас тесе мар, хăй тахçан Алмазова мĕнле кăмăлланине тĕрĕсрех пĕлтерес тесе çеç тусĕн сăнарне илемлетерех кăтартма тăрăшрĕ. Япăх çыннах ырлас шутпа мар, хăй çынсем çинчен лайăх шутланăран кăна çапла каларĕ вăл, çынсене те юлташĕсем çинчен лайăх шутлаттарас килчĕ унăн. Тен, поэтсем те çав сăлтава пулах илемлĕ каласассĕ пулĕ?..

— Тем çинчен те каларĕ вăл мана ун чухне, — терĕ те Саланов, сасартăк шăпланчĕ: Алмазов ăна çав каçхине «темле тĕлĕнмелле ятлă — Саламп и ятлă хĕрпе» хăйĕн тусĕ Валерий пĕр-пĕрне мĕнле юратни çинчен, çав юрату мĕнле телейсĕр пулни çинчен каланăччĕ... Ун чухне Алмазов та хăй Саламп ие тĕл пуласса, Саламп и хăйне юратасса пĕлмен ĕнтĕ... Акă халĕ, кĕçĕр, Порт-Артуртан килнĕренпе виçĕ çул иртсен, Саланов çав «тĕлĕнмелле ятлă хĕре» Алмазов çинчен калать. Анчах Алмазов та Саламп ишĕн Валерий пекех çухалмарĕ-ши: «вăл Музăпа çыхланнă», терĕ-çке Ласкин! Кирлĕ-и çакăн çинчен асăнса Саламп и чунне ыраттарма?

— Тымар янă пекех, нумай лартăм ĕнтĕ, — терĕ каччă тăрса. — Çĕр вăрăм, килех çитес, çын патĕнче ыйхă та килмест манăн. Тен, улахсем саланиччен çитме ĕлкĕрĕп, — шӳтлесе илчĕ вăл.

— Улаха çитмелле пулсан, тытса чараяс çук ĕнтĕ, — терĕ Саламп и те, ним пулман пекех шӳтлеме тăрăшса, анчах кăмăлне тем пек хытарсан та, хĕр чунĕ чул пулаймĕ çав: унăн тути кăна куланçи турĕ, куçĕсем малтанхи пекех салхуллă пăхрĕç. — Кăштах ăсатса ярăп; каçхи хăнана ăсатмасан, ыйхă вĕçет, теççĕ. Ытла ан васка, çурçĕр те çитмен-ха. Çул курки тытса пар, акă, Пугачев ырлани ку...

Вĕсем уй хапхинче уйрăлчĕç.

— Чипер кай ĕнтĕ. Уйрăлас та килмест санран, Çемен, питĕ ырă çын эсĕ. Санпа калаçсан, ăш выртать, чĕре çыххи сыпăнать, — терĕ Саламп и, алă парса. — Мĕнле хĕр сана пырса ырă курĕ-ши? Курăттăм вăл хĕре. Пурте курнă, пĕлеççĕ, эпĕ çеç палламастăп ăна.

Çемен ним калайми пулса тăчĕ. «Саламп и, эпĕ часах авланатăп! Эпĕ хам ачаран юратнă хĕре илетĕп! Вăл сан пекех илемлĕ, сан пекех ырă çын!» — тесе калас килчĕ унăн, анчах хăй телейĕпе киленсе-мухтанса телейсĕр хĕре кӳрентересрен шикленчĕ, çавăнпа ним те шарламарĕ.

Саламп и тавраннă çĕре āмăшĕ çывăрма выртнă. Валерик та мăшлаттарсах çывăрать. Ун ури вĕçне кушак кукăрăлса выртнă та ачашшăн мăрлатса тĕлĕрет. Саламп ие курсан, вăл вырăн çинчен сиксе анчĕ те, вăратнăшăн кăмăлсăрланса, хӳрине пăтраткаласа, кăмака айне кĕрсе кайрĕ. Пӳртре шăпах, хутран-ситрен шăрчăк чăрăклатса сас тăвать. Саламп и кăмака умĕнче çакăнса тăракан Валерик кĕписем çине пăхрĕ те шухăша путрĕ.

Акă, ача амăшех ĕнтĕ вăл. Унăн пӳртĕнче те, чăматанĕсенче те, «хĕр арчинче» те, мăшăрлă пурăнакан хĕрарăмăнни пекех, ача япалисем. «Мăшăрлă...» Мĕнле вăл? Лайăх-и вăл, япăх-и? Мĕн вăл, телейлĕ юрату? Савнă çынпа пĕрле пурăнни-и? Е çапла, ялан пĕччен, савниРен уйрăм, ăна курмасăр, пĕлмесĕр, ĕмĕтре çеç юратса пурăнни-и? Нихçан та телей йăва çавăраймĕ-ши Саламп и пурнăçĕнче? Хăвăрт иртет-çке хĕр ĕмĕрĕ — карта тытса та картлаймăн, чаршав карса та чараймăн. Ахальтен мар пуль: хĕр ĕмĕрĕ — хăналăх, тенĕ...

Шалти пӳлĕмре будильник шăнкăртатни ăна шартах сиктерчĕ. Çурçĕр иртни пĕр сехет — фермăна кайма вăхăт. Кăшт та выртса канма пулмарĕ. Саламп и кĕрĕк тăхăнчĕ те Валерик патне пычĕ, тутлă çывăракан ача çине чылайччен ытарайми пăхса тăчĕ, вара ăна темиçе хут чуптурĕ, ачашшăн витсе хăварчĕ те фермăна тухса кайрĕ.

Ферма пӳртĕнче пурте хăрлаттарсах çывăраççĕ. Сĕтел хушшинче Лена тĕлĕрсе ларать, аллинчи кĕнеки урайне



## ХĔРСЕМ ТĔРĔ ТĔРЛЕÇÇĔ

**Хулари е ялти кирек-хăш магазина кĕрсен те йăлтăртатса тăракан çутă тӳмесенчен пуçласа хитре атă-пушмаксем таранах туянма пулать. Хулари магазинсенче тĕрлĕрен сĕтел пукансемпе хуçалăхра кирлĕ савăт-сапасем, кĕпе тумтирсем ытлăн-çитлĕнех. Вĕсенчен чылайăшне хамăр республикăри промысла артелĕсенче туса кăлараççĕ.**

**Чăвашпромсовет системинче 138 артель ĕçлеççĕ. Иртнĕ 1954 çулта вĕсем икçĕр миллион тенке яхăн тĕрлĕрен таварсем туса кăларнă.**

**Республикăри нумай промысла артелĕсенчен пĕри — «Красный кустарь» туса кăларнă продукцие пур çĕрте те юратса туянаççĕ. Чăваш тĕррипе илемлетсе çĕленĕ арçын кĕписемпе хĕрарăм платьисене Мускаври ГУМ-па Хусанти магазинсенче те куратăн.**

Ӳкерчĕкре: «Красный кустарь» артельти тĕрĕ тĕрлекен цех мастерĕ Клавдия Гаранина Елена Егоровăпа Капитолина Никитина работницăсене çĕнĕ ĕç парать.

**П. Матюхин** фотоӳкерчĕкĕ.

ӳкнĕ. Саламп и кĕнекене сĕтел çине илсе хучĕ те хĕре вăратрĕ. Иккĕшĕ пăру витине тĕрĕслеме тухрĕç.

Çав каçхине виçĕ ĕне пăруларĕ. Саламп и тул çутăличченех канма пĕлмесĕр ĕçлерĕ. Ирхине вăл çамрăк пăрусене сĕт ĕçтерчĕ, пысăкраххисене апат пачĕ, вите урайне хырса-шăлса тасатрĕ, çĕрле пăруланă пăрусене турттарса-виçсе пăхрĕ, вĕсем çинчен уйрăм журнал çине çырса хучĕ. Маруç килсен, вăл ирхи апата киле тавранчĕ. Кăшт выртса канчĕ те каллех фермăна кайрĕ. Витери ĕçсене тирпейлесен, Шамбулкина: «Районa каятăп, ман вырăна Маша юлать», тесе пĕлтерчĕ.

Район центрне вăл йĕлтĕрпе кайрĕ. Раймагра Валерик валли тетте-кĕнекесем, пĕчĕк гитара туянчĕ те Яшманов лавĕ çине хурса ячĕ. Магазинта ăна кирлĕ кĕнекесем пулмарĕç, вăл вара, çул майĕн Салановсен ялне кĕрсе, хайхи Шалтайкина курма шут тытрĕ.

Ял çумĕнчи Елюк сăртĕнче сарăлса ларакан сад аякранах курăнать. Çамрăк сад тавра, шурă тăлăп пĕркеннĕ хуралçăсем евĕр, шурă туналлă хурăнсем, хăмăр туналлă çăкасем, акаци, сирень тĕмĕсем юрпа витĕнсе лараççĕ. «Çакă ĕнтĕ вăл, пĕтĕм республикипе чапа тухнă сад, Саланов пăхса ӳстерекен пуян сад», — савăнса шухăшларĕ Саламп и.

Авă, лере, ачаран палланă вырăнсем: Автан çырми, Упăли йăмрисем, — вăл йăмрасем айне çулла кĕтӳ тапăра анать. Хĕвеланăç еннерех, шыв тăрăх кайсан — Мăн кĕпер йăмрисем; çав йăмрасем айĕнче пӳрт пек мăкăрăлса тăракан çĕр тĕмески пур, ăна «Улăп тăпри» теççĕ, — ĕлĕк-авал çав тĕлте Улăп ура салтса çăпатине силленĕ пулать... Саламп и ку вырăнсенче ача чухне хăйĕн

тантăшĕсемпе пĕрле ҫуркунне сурăхсем кĕтсе ҫӳретчĕ...

Уй пуҫтарса кĕрсенех укăлча хапхине уҫса пăрахнă та ҫавăнтанпа хупман пулас, халĕ вăл, юр тултарса лартнăран, хупăнмасть те; ачасем кунта кагаччи ярăнаҫҫĕ. Салампи вĕсенчен Салановсен тĕлне ыйтса пĕлчĕ. Анчах Ҫемен килте пулмарĕ, вăл йĕлтĕрпе ярăнма кайнă иккен. Салампи вара тӳрех клуба кайрĕ.

Клуб ял варринчи чул ҫуртра. Малти пысăк пӳлĕмĕ пуш-пушах, пукансене йĕркипе лартса тухнă, урайне кусарпа хырса ҫунă. Кăнтăр вăхăчĕ пулнăран-ши, клубра ҫамрăксем те, ача-пăча та ҫук. Алăк патĕнчи кăмака умĕнче хĕрлĕ тутăрлă, пĕрлĕхен питлĕ хĕрарăм вут хутса ларать.

— Шалтайкин юлташа ăҫта курма пулать-ши? — ыйтрĕ унран Салампи.

Лешĕ йĕлтĕрпе ҫӳремелли тум тăхăннă ют хĕр ҫине шанмасăртарах пăхса илчĕ те, юнашар пӳлĕм алăкне уҫса, ҫăвар туллин кăшкăрчĕ:

— Йăва-ан! Сан пата хуларан майра килчĕ!

— Калăр, Варя, кунта кĕтĕр! — илтĕнчĕ шалтан кăмăллă ҫемҫе сасă.

— Хăй патне чĕнет,—терĕ хĕрарăм, пуҫĕпе юнашар пӳлĕм алăкĕ еннелле сулса, вара каллех ют хĕр ҫине кӳлешен куҫпа пăхса илчĕ.

Пĕчĕк пӳлĕм. Чӳрече янахĕсем ҫине те, пукансем ҫине те кĕнеке, хаҫат-журнал тĕркисем хурса тултарнăран вăл пушшех тăвăр пек туйăнать. Пӳлĕм варринче сĕтел ларать. Ун умĕнче ҫын тăрать; вăл темшĕн пукан ҫине лармасăр, сĕтел ҫине чăвсаланса, хавхаланса тем ҫырать.

— Кĕме юрать-и?

Тем ҫыракан ҫын, каялла варт ҫаврăнса, тӳрленсе тăчĕ те пысăк куҫлăхне ҫамки ҫинелле ҫĕклерĕ. Хăй тăсланкă, кăшт курпунрах; сивĕ пулин те, ҫӳхе пальтопа, сăран атăпа. Хуҫăк сăмсаллă кепкине сĕтел ҫине пăрахнă. Ҫӳҫĕ арпашăнса пĕтнĕ, сухалне хырман.

— Айăп ан тăвăр, палласа илейместĕм сире,—терĕ вăл, Салампие алă парса.—Шалтайкин Иван Иванович.

— Салампи,—пĕлтерчĕ хĕр хăй ятне.—Акрамова.

— Питĕ хавас, питĕ хавас! Илтнĕ, илтнĕ! Питĕ лайăх пĕлетпĕр сире!—хавасланса ӳкрĕ Шалтайкин, хăй каллех Салампи аллине тытса чăмăртарĕ.—Январĕн ҫиччĕмĕшĕнче райхаҫатра сирĕн ҫинчен статья тухнăччĕ, «Лайăх телятница» ятлă статьяччĕ-и ҫав? Айăп ан тăвăр, иртсе ларăр.

Пурнăҫра пĕрремĕш хут курнă ҫын хăйне пĕлни, хăй ҫинчен ҫырнă статья хăҫан тухнине те астуса тăни Салампие савăнтарчĕ те, тĕлĕнтерчĕ те. «Феноменальнăй память», тетчĕ Вирьялов Шалтайкин ҫинчен каласа култарнă чух. Чăнах, ун тăнĕ ҫирĕп иккен.

Шалтайкин васкасах пĕр пукан ҫинчи кĕнекесене сак ҫине илсе хума пикенчĕ, анчах пăлханнипе ҫĕре ӳкерчĕ те — илсе те хумарĕ. Вăл аптранипе куҫлăхне шăлма пикенчĕ, анчах темле шыраса та тутăр тупаймарĕ, вара тарланă сăмса тăррине те пальто ҫаннипех шăлса илчĕ. Ҫак самантра вăл тутăра ăҫта хунине астăвайманшăн та, паян клуба сухал хырмасăр килнĕшĕн те хăйне хăй вăрҫса тăкрĕ. «Сухалне хырма вăхăт та пулмарĕ ĕнтĕ, ҫĕркаҫ ҫĕрĕпех стена хаҫачĕ ҫырса лартăм, паян тăнă-тăманах кунта чупса килтĕм: Совет Ҫарĕ кунĕ тĕлне хаҫат кăларма ĕлкĕрес пулать... Анчах кама аса илтерет-ха ку Нарспи? Ăҫта, хăҫан курнă эп ăна?»—шухăшларĕ Шалтайкин ҫавăнтах.

Салампи пӳлĕме ялкăшса килсе кĕни ăна хура кĕрте сасартăк ҫурхи кун ҫитнĕн туйăнчĕ. Хăй тирпейсĕр ҫӳренĕшĕн те, ҫĕр ҫинче хĕрĕх ҫул авланмасăр, пĕр-пĕччен, упа пек пурăннăшăн та пĕрремĕш хут ҫак пике умĕнче именчĕ вăл.

— Айăп ан тăвăр, Акрамова юлташ, тем ĕҫпеччĕ ĕнтĕ эсир?—терĕ вăл, сĕтел ҫинче выртакан шăрттан пек хулăн, ҫĕтĕк портфеле сурăмĕпе хуплама тăрăшса (портфельтен пулă хӳри, сĕт кĕленчи, ик-виҫĕ пуҫ сухан курăнатчĕҫ).

Салампи ҫак вăтă каччă ҫинчен тахҫан Вирьялов каласа култарнине аса илчĕ те хавасланса кайрĕ, районĕпе паллă избача хăюллăрах сăнарĕ.

Шалтайкин ҫилĕмпе тем ҫыпăҫтарнă пулас: хавхаланса ĕҫленĕ чух астумасăр пальто ҫаннине те ҫилĕмпе вараланă та, хаҫат татки ҫанă ҫумне ҫыпăҫнă, ҫилĕмленнĕ ҫӳҫ пайăркисем те пĕр-ик тĕлте ҫыпăҫса ларнă.

— Эпĕ сирĕнтен пулăшу ыйтас терĕм, — хаваслăн йăлкăшса пĕлтерчĕ Салампи.

Шалтайкин чĕри пĕр ыратса, пĕр хăпартланса кайрĕ. Вăл хăй студент чухне, пĕр ҫирĕм ҫул каялла, телейсĕр юратнă чипер артисткăна аса илчĕ. «Кулли ҫавăн. Вăл ҫакнашкал йăлкăшса кулатчĕ»,—савăнса та хурланса шухăшларĕ каччă.

— Питĕ хавас сире пулăшма!—терĕ те вăл, каллех алă пачĕ.

— Саланов пĕлтерчĕ: сирĕн агрозоотехника кружокĕнче вĕренмелли ҫĕнĕ учебник ытлашши пур, терĕ. Эпĕ районта тупаймарăм та, сирĕнтенех ыйтса пăхас, терĕм.

— Айăп ан тăвăр, ытлашши ҫук, анчах сире пĕрине пама пултаратпăр. Кĕнеке ыйтакана пĕтĕм чунтан юрататăп, Акрамова юлташ.

Шалтайкин, каллех Салампие тĕлĕнтерсе, кĕнеке ятне, авторĕн ятне, издательство ятне, кĕнекене миҫемĕш хут пичетлесе кăларнине, миҫе кĕнеке кăларнине, хакне — йăлт пĕр пăхмасăр каларĕ.

— Питĕ кирлĕ кĕнеке, анчах, айăп ан тăвăр, чăвашла япăх куҫарнă, хăшпĕр вырăнсене вырăсли ҫине пăхмасăр та ăнланма ҫук, — терĕ Иван Иваныч, Салампие кĕнеке тыттарса.

— Тавтапуҫ сире... Стена хаҫачĕ кăларатăр пулас?

— Ҫавăнпа аппаланатăп, ҫирĕм ҫул ĕнтĕ. Редколлеги пур та, ытла мĕнех мар, йăлтах ман ҫине тиеҫҫĕ. Пĕр каласан, художникĕ те, ҫыруҫи те, суфлерĕ те, артисчĕ те, агитаторĕ те — йăлтах хам. Пĕрре хăнăхнă та... юрататăп эпĕ хам ĕҫе. Ĕҫсĕр ларма кичем — алăсăр юлнă пекех, ваттисемле каласан.

Шалтайкин ҫав хушăрах хăйĕн шăрттан-портфелĕ уҫă выртнине асăрхарĕ те ăна хĕртен ҫурăмĕпе картларĕ.

«Чăн та, ху ĕҫне питĕ юрататăн эсĕ, чунна парса ĕҫлетĕн пулас. Тен, ҫавăнпах ху ҫинчен манатăн пуль. Пĕр-пĕр ҫывăх хĕрарăм пулас пулсанах, тирпейлĕччĕ вăл сана»,—шухăшларĕ Салампи.

— Йăва-ан! — хаяр сасăпа чĕнчĕ ҫак самантра хĕрлĕ тутăрлă хĕрарăм, пӳлĕм алăкĕнчен пуҫне кăтартса. — Кăмакана паранкă пăрахмалла-и?

Вăтанса хĕрелнĕ Шалтайкин ҫавăнтах ун патне сиксе тухрĕ те, иккĕшĕ чылайччен тем пăшăлтатрĕҫ, хĕрарăмĕ малтанхи пекех хаяррăн каласрĕ.

«Ку леш «Варук инке» тени пуль ĕнтĕ. Чăн, ытла ĕревĕҫ хĕрарăм иккен, ав савнине мĕнле кӳлешет», — куларах шухăшларĕ Салампи, Вирьялов каланине аса илсе. Пĕччен ларма лайăх маррине туйса, вăл кайма хатĕрленчĕ.

— Айăп ан тăвăр, Акрамова юлташ, — терĕ Шалтайкин, алăкран вăркăнса кĕрсе. Хăй ăшша пиҫнĕ, унăн сăмса тăрри те, куҫлăхĕ те тарланă. Избач хăйĕн мĕнпур кĕсйине хыпаласа ухтарчĕ, вара таҫтан хура тутăр татки туртса кăларчĕ те питне шăлса илчĕ, тепĕр минутран ҫав тутăрах, хăй ăҫта хунине астумасăр, ниепле те тупаймарĕ. Темрен шикленсе ӳкнĕ Шалтайкин хăйĕн хупăнман портфельне хĕртен пытарма та астумарĕ — уҫă портфельтен каллех сĕт кĕленчипе пулă хӳри, ик-виҫĕ пуҫ сухан курăнса кайрĕ.

— Агрозоотехника занятийĕсем клубрах иртеретĕр-и?—ыйтрĕ Салампи, стена ҫинчи плакатсене пăхса.

— Клубра, пысăк залра. Унта пирĕн плакатсем, нагляднăй пособисем те унта. Кĕркунне пĕр-ик заняти Саланов садра иртерчĕ, фермăра темиҫе заняти иртертĕмĕр. Хăмăр клубра за-

## „Георгий Седов“

**1955 ҫулхи январь уйăхĕнче «Георгий Седов» ятлă ледокол Ҫурҫĕрти Пăрлă океан пăрĕсем хушшинче куҫса ҫӳрени 15 ҫул тулгарчĕ.**

**Ледокол 1937 ҫулхи октябрьтен пуҫласа 812 кун хушши пăрсем хушшинче пулнă. Новосибирски утравсем патĕнчен Гренланди тинĕсĕ таран 3500 километр ҫул хывнă.**

**«Георгий Седов» ҫинчи поляриксемпе ученăйсем Арктикăна тĕпчесе вĕренес тĕлĕшпе калама ҫук пысăк ĕҫсем тунă. Вĕсем 38 хут Пăрлă океан тĕпне виҫсе пăхнă, пилĕк пин ытла тĕрлĕрен метеорологи тĕпчевĕсем, 43 хутчен шыв тарăнăшĕнче комплекслă гидрологи тĕпчевĕсем ирттернĕ. 78 ҫĕрте ҫĕр ҫинчи магнитизм явленийĕсене палăртнă тата ытти ĕҫсем те нумай тунă.**



Ӳкерчĕкре: «Георгий Седов» ледокол пăрсем хушшинче.

ТАСС фотохроники.

нятисем мĕнле иртгернипе паллаштарма пултаратăп, кăмăлăр пулсан,—сĕнчĕ Иван Иваныч.

Вал Салампие ялхуҫалăх ĕҫĕнчи ҫитĕнÿсене катартакан плакатсемпе, диаграммасемпе паллаштарчĕ, занятисем ирттермелли план катартрĕ, «Колхозсемпе совхозсенче обществалла выльăхчĕрлĕх ĕрчетмелли виҫĕ ҫуллах план» ҫинчен кĕскен ăнлантарчĕ. Вăл тĕрлĕрĕн цифрасене, числасене пĕр йăнашмасăр каланинчен, плана параграфăнпараграфăн пĕлнинчен Салампи тĕлĕнсе кăна ларчĕ.

Пĕр хĕрсе кайнă Шалтайкин хавхалансах калаҫре, хăй ҫине Варук инке кÿлешсе пахнине те сисмерĕ, юлашкинчен Салампие ăсатма тула тухрĕ.

— Тата килĕр ҫапла, Акрамова юлташ,—терĕ те хере ала пачĕ.

Салампи пешкенсе йĕлтĕр чĕнне хытарчĕ те йăрст тÿрленсе тăчĕ, Шалтайкина хиреҫ пăхса, кăмăллăн ялкашса кулчĕ; унăн куҫĕсем, кавак костюм тесĕ ÿкнĕрен, тата кавакрах куранаҫҫĕ, тата ăшарах, тата илемлĕрех.

«Чăваш херарăмĕсем питĕ хитре», тенĕ Радищев, — шухăшларĕ ҫав самантра Шалтайкин.—Тен, вăл авал, пирĕн ҫершыв урлă иртсе кайнă чух, шăпах ҫакнашкал хÿхĕм хĕрсене курнă пуль».

— Чипер юлăр,—терĕ Салампи, кĕнекине чĕн пиҫиххи хушшине студентла хĕстерсе.

— Айăп ан тăвăр,—терĕ Шалтайкин, тата тепĕр хут алă пама ĕлкĕрсе.

Хĕр анаталла ярăнса кайрĕ, Иван Иваныч ун хыҫĕнчен телейлĕн кулкаласа, кăмăллăн пăхса юлчĕ.

— Мĕнлескер пулчĕ вăл? — илтĕнчĕ ун хыҫĕнче хаяр сасă. Шалтайкин, шартах сиксе, каялла ҫаврăнчĕ, каллех хыпаланса тутăр шырама пуҫларĕ, анчах темле шыраса та тупаймарĕ.

— Акрамова вăл, Варя. Салампи юлташ...

— Лешĕ-и, качча каймасăр ача тăваканни-и?

— Ҫын ачине усрава илнĕскер, Варя...

— Те ҫын ачи-ха унта, те хăйĕн сопчăнни, пĕл-ха унта!

«Пуҫларĕ ĕнтĕ», терĕ те хăй ăшĕнче Шалтайкин, пуҫне пальто ҫухавипе хуплама тăрăшса, клуба шиклĕн йăпшăнса кĕчĕ. Халĕ ҫеҫ хÿхĕм хĕрпе курса калаҫни ăна сывăрмасăр курнă тĕлĕк евĕр ҫеҫ туйăнчĕ. Халăх умĕнче хаяр докладсем тăвакан Шалтайкин Варук умĕнче путек пекех йăваш, ун хастарлăхĕ Варука куриччен кăна. Ҫил вĕриччен мамăк та хăйне йывăр тесе шутлать, теҫҫĕ. Иван Иваныч та ҫавах...

Салампи Шалтайкинран питĕ ырă кăмăлпа уйрăлнăччĕ, анчах ун кăмăлĕ часах хуҫăлчĕ. Ҫул хĕрринче ларакан магазин тĕлне ҫитерехпе вăл кăшт ҫеҫ чарăнса тăмарĕ. Магазинран питĕ хÿхĕм тумланнă ҫамрăк ҫын тухрĕ те, туран йĕлтĕрпе анакан хĕре асăрхасан, каллех магазина кĕрсе ҫухалчĕ. Вăл Вирьялов иккенне Салампи куҫĕпе курса мар, чунĕпе туйса илчĕ. Вара урам варринчен пăрăнса, магазин хыҫĕнчи ҫырма тăрăх ярăнса кайрĕ. Ун пуҫĕнче тем тĕрлĕ шухăш та ҫаврăнчĕ, анчах хăй, каялла ҫаврăнса пăхмасăр, уялла ярăнса тухрĕ.

Кĕске кун каҫалла сулăннă, хура вăрман хыҫнелле хĕрÿсĕр хĕвел анса ларать ĕнтĕ. Юр хăрпăкĕсем йăлтăртатса тăнăран, шурă пир ҫине ĕнчĕ сапнăнах туйăнать. Сывлăш уҫă, чуна ирĕк. Анчах чĕре темшĕн хĕсет, хĕсет...

Авă, лерен, вăрмантан, пĕр хĕр йĕлтĕрпе ярăнса тухрĕ те ял еннелле васкарĕ, каялла пăха-пăха илет хăй. Тепĕр ик минутран каччă ярăнса тухрĕ. «Саланов,—тÿрех шухăшларĕ Салампи,—костюмĕ те ҫавăнах, тем тесен те ҫавă». Салампи йĕлтĕр туйисене ҫĕклесе, ун еннелле сулса саламларĕ, анчах каччăн аяккалла пăхас шут мар иккен: вăл пикенсех хăй умĕнчи хĕре хăвалать. Акă хĕрĕ, ял еннелле килекенскерех, вĕлт! аяккалла пăрăнчĕ, унтан каллех вăрманалла ҫаврăнчĕ. «Выляҫҫĕ»,—тавҫăрса илчĕ Салампи. Авă, каччă халĕ хĕр йĕрĕпе пырать, ҫывхарсах, ҫывхарсах пырать, анчах вăрман чăтлăхне кĕмесĕр хĕре хуса ҫитесшĕн мар пулас вăл. Акă вĕсем вăрмана кĕрсе ҫухалчĕҫ. Саламп чылайччен вăрман еннелле ҫаврăнса пăхкаларĕ, анчах ҫамрăк мăшăр тек уялла ярăнса тухмарĕ...

— Мĕн тери телейлĕ хĕр!—терĕ Саламписасăпах, вара кил еннелле вăраххăн ярăнчĕ.

Авă, умра тăван ял, анкартисем, улăхри утă капанĕсем, ферма ҫурчĕсем. Авă, Саламписен анкарти вĕҫĕнчи тăлăх улмуҫҫи.

Хĕр ҫырмана ярăнса аннă чух сасартăк чарăнса тăчĕ. Хÿтĕ вырăнта йĕлтĕр йĕрĕ палăрать: вăл ҫырма хĕрринче пуҫланать те ҫырма тĕпĕнче пĕтет, ытти ҫĕртине юр шăлса кайнă. «Анатолий хăварнă йĕр, — сасартăк тавҫăрса илчĕ Салампи. — Ҫакăн пекех ҫухалчĕ унăн йĕрĕ те ман пурнăҫăмра. Паҫархи мăшăр пек, иксĕмĕр пĕр йĕрпе ярăнаймарăмăр. Пирĕн ҫул-йĕрсем пĕр тĕлте кăна ҫапла пĕрлешсе иртрĕҫ», — терĕ те хĕр, ҫурри ҫухалнă йĕлтĕр йĕрĕ урлă ярăнса каҫрĕ...

Килте вăл Валерик ҫывăрса кайиччен ҫеҫ хаваслăн калаҫса кулчĕ, амăшне Шалтайкин ҫинчен шÿтлерех каласа катартрĕ. Апат ҫинĕ чух вара сасартăк шăпланчĕ те ҫийи-ҫими ларчĕ, чĕлхи ҫĕтнĕ евĕр, ним те чĕнмерĕ.

— Ҫаван ҫинчен шухăшласах шуралтăн ĕнтĕ. Темшĕн манмастăн ҫавна? Хăй аса та илмест пуль, — терĕ амăшĕ, хĕрĕ ҫине хĕрхенчĕклĕн пăхса.

— Ан калаҫ-ха, анне, кирлĕ мара, — сăмах тавăрчĕ Салампи, хиреҫ ним тупса калаймасăр. Тумланчĕ те— фермăна тухса кайрĕ.

* * *

Чăн, Алмазовăн ҫак самантра Саламппи шухăшĕ мар-мĕн. Виҫĕ кун маларах унпала акă мĕн пулса иртрĕ.

Вырсарникунччĕ. Музучилище студенчĕсем Атăл леш енне йĕлтĕрҫĕсен кросне кайрĕҫ. Муза каймарĕ, ун пек ҫĕре хутшăнмасть вăл, ăна нимĕнле халăх ĕҫĕ те, нимĕнле студентсен пĕрлешÿллĕ канăвĕ-савăнăҫĕ те кирлĕ мар, вăл лекцисене те йĕркеллĕ ҫÿремест. Ытах училищĕрен каларса ярсан та, уншăн пурпĕр хăрушă мар: музучилище программи тахҫанах йăлăхтарса ҫитерчĕ ăна; вăл хăех, кунта вĕренме пăрахса, Мускаври театральнăй институтта кайса кĕме хатĕр. Шăматкун каҫ концертра Алмазова курчĕ вăл (Анатолий Хусантан килнĕ те пĕр эрне кунтах пурăнма шут тытнă). Муза ăна йĕлтĕрпе ярăнма каймашкăн чĕнчĕ.

Акă халĕ вĕсем Атăл леш енче, йăлăмри тăвайккинче, хире-хиреҫ пăхса тăраҫҫĕ. Иккĕшĕ те ăшша пиҫнĕ, иккĕшĕн те пичĕсем юн пĕрĕхес пек хĕрелнĕ. Алмазов Муза ҫине ытарайми пăхать, унăн кăмăлĕ ҫĕкленнипе куҫ шăрҫисем пысăкланса, хуралса кайнă.

Муза йĕлтĕр туйисем ҫине илемлĕн таянса, ҫинҫе пилĕкне илĕртÿллĕн авса тăрать; унăн йăрăс урисем ывăннипе чĕтреҫҫĕ, чие ҫырли тĕслĕ костюмĕ ҫинчен юр пĕрчисем лăстăртатса тăкăнаҫҫĕ. Вăл йывăррăн сывлать, хĕрлĕ берет айĕнчен сапаланса тухнă сарă ука пек ҫÿҫ пайăркине тÿрлетме аллине вăраххăн, темле питĕ меллĕн ҫĕклет, юри ытларах каҫăрлать — тăпăлтăпăл кăкрисем вара маларах тухса, костюма карăнтараҫҫĕ. Хĕр куҫĕсене темле ачаш нÿрĕк карса илнĕ; хĕвел ҫук чухне ҫапла йĕтĕн чечекĕ ҫинчи сывлăм тумламĕ тĕксĕмреххĕн ялтăрать. Муза кулать. Унăн тап-таса шăлĕсем ҫак самантра темрен те йăлтăрти; тути хĕп-хĕрлĕ, ăна хытăрах чуптăвас пулсан — юн тухассăн туйăнать.

Алмазов халĕ, таврара мĕн пуррине манса, ҫав тутана, ҫав куҫсене ăсран кайса чуптума ҫеҫ ăмсанать. Пĕрре чуптăвасси те халĕ уншăн — тĕнче ха-

# ВЕРУК

## Иван ПИНЯЕВ

Чăрăшсем ҫинче паян илемлĕн
Ҫăлтăрсем ҫунаҫҫĕ, вĕсене
Пĕлĕтрен кунта антарнă, тейĕн,
Илсе кĕнĕ, тейĕн, ҫуртсене.

Вера хăй паллать кунта пурне те,
Кăмăллать пурне те ачаран,
Ҫавăнпа пушшех те ҫÿҫенет-тĕр—
Ҫĕнĕ ҫул-ҫке, ҫĕн телей паян!

Ашшĕ килĕнче ăна чиперрĕн
Халь кĕтсе илет. Ĕмĕрлĕхех —
Парти хушнипе — хастарлă Вера
Таврăнчĕ тăван ялне каллех.

Министерствăра пайтах ĕҫленĕ,
Сахал мар хут ҫырнă халиччен.
Ҫĕнĕ вăй халь ун чунне ҫĕкленĕ,
Анлă ҫул халь унăн умĕнче.

Кун пирки ялан вăл ĕмĕтленнĕ,
Туртăннă яла вăл чунĕпе.
Кунтилле каларĕш: ял ĕҫченĕ
Ял ĕҫне халь путрĕ пĕтĕмпех.

Ак паян епле унпа сăпайлăн
Калаҫса лараҫҫĕ хăнасем.
Вера пек телейлĕ ҫын тупаймăн,
Йăл! кулаҫҫĕ унăн тутисем.

Тăвансем ăна: Петровна, — теҫҫĕ,
Мăн ҫынла чĕнеҫҫĕ Верăна.
Тавăрать вăл (пичĕсем ҫиҫеҫҫĕ):
— Эп Верук-ҫке,—тет.—Юрать
мана.

кĕ! Унăн асĕнче ĕнтĕ тăлăх улмуççи мĕлкиллĕ кăвак куçсем мар.

«Курса юл мана куç тулли,—теççĕ ăна Музăн касăслă чакăр куçĕсем.— Эсĕ ăслине, мăнкăмăллине пурте пĕлеççĕ; анчах эсĕ, ăсăскерех, мăнкăмăлласкерех, акă, ман умра пуç таятăн, хăвна ху пысăка хураймастăн. Акă, кур, эпĕ мĕнешкел чипер! Эсĕ маншăн тасти вирьял хĕрне мантăн. Эпĕ сан пек ăслă та, талантлă та мар, çапах эпĕ ытарайми чипер; эсĕ ман умра асапланни, хăвна ху кĕçĕне хуни мана савăнтарать кăна. Эпĕ çак самантпа киленетĕп, урăх мана ним те кирлĕ мар. Курса юл мана куç тулли...»

— Хуса çит, вара... — терĕ те Муза, вара мĕн пулассине каламасăрах, йĕлтĕр туйисемпе хытă тĕртсе, анаталла ярăнса кайрĕ.

Алмазов ун хыççăн ăнталчĕ.

Хăлхасенче сивĕ çил шăхăрать, питрен туратсем çапкаласçĕ. Каччă ниме те пăхмасть, ним те туймасть, ним те шутламасть — Муза хăварнă йĕлтĕр йĕрĕпе анаталла ыткăнать. «Вара, вара...» —тет çеç вăл хăй ăшĕнче.

Иккĕшĕ те вĕсем çĕмĕрен пек вĕçсе пыраççĕ, хăйсен умĕнчи чăнкă çыра та курмаççĕ. Акă Муза, çыран хысакне çитсе, аялалла тăрăнса кайрĕ те ахăлтатса кулса ячĕ. Алмазов та ун çине пырса кĕрсе, такăнса ÿкрĕ — хăрах йĕлтĕрĕ вĕçерĕнсе çырма тăрăх аналалла шуса кайрĕ, Музăн йĕлтĕрĕсене хуса çитрĕ, туйисем аякалла ывтăнчĕç. Анчах кусем ăна-кăна пăхмарĕç, ыталанчĕç те — ÿкнĕ сулăмпа çырма тĕпнелле йăванса анчĕç. Çырма тĕпĕнче Алмазов яштах сиксе тăчĕ, кăтăкланă евĕр кулакан Музăна пĕчĕк ачана çĕкленĕ пекех çĕклерĕ, кăкăр çумне пăчăртарĕ. Çав самантра вăл хĕрĕн çемçе сивĕ питне те хаклă йышши духи шăршине çеç туйрĕ, унăн чĕри васкаса тапнине те шăнкăрав пек янăракан куллине çеç илтрĕ. Муза сасартăк кулма чарăнчĕ, Алмазова мăйран ыталаса илчĕ те сывламасăр чуптума тытăнчĕ. Каччă утма тăчĕ, анчах хăрах йĕлтĕртен такăнса, темле майсăр çаврăнса ÿкрĕ... Кайран, çан-çурăма сивĕ çапсан, вăл тăма хăтланчĕ те — йынăшса ярса ÿкрĕ: унăн фронтра аманнă ури мăкăлтаннă иккен. Хĕре ыталанă чух вăл çавна сисмерĕ, сисесшĕн те пулмарĕ. Пурнăçра та çаплах, кăмăл выляни хыççăн кайса, хăй Музăран такăнса ÿкнине ăнланмарĕ вăл, ун пирки çак илĕртÿллĕ самантра шухăшласшăн та пулмарĕ.

Пĕчĕк ача та çапла мар-и?—ăна хитре теттепе астарсан, вăл ура айĕнче мĕн пуррине те курмасть, такăнса ÿксе аманиччен хавхаланса чупать, çав çĕмĕрĕличчен çеç лайăх, çиелтен кăна хитре теттепе вылясшăн ăнталать.

* * *

Çыннăн пурнăçĕ, шухăшĕ-ĕмĕчĕ, хуйхи-суйхи, савăнăçĕ халăх пурнăçĕпе, халăх шухăшĕ-ĕмĕчĕпе, халăх хуйхи-суйхипе, халăх савăнăçĕпе пĕр пулсан — çав çын вара телейлĕ; çав çын вара хăй çак çĕр çинче усăсăр пурăнманнине, хăйĕн ĕçĕ, пĕчĕк пулин те, халăха кирлине, халăх ĕçĕ хăйшĕн чи хисеплĕ ĕç пулнине питĕ лайăх пĕлсе тăрать; уншăн вара халăхран уйрăм ĕç — пĕчĕк ĕç, халăхран уйрăм савăнăç—пĕчĕк савăнăç, халăхран уйрăм телей—пĕчĕк телей: вĕсем нумая пыраймĕç, пĕр-пĕччен чуна нумаях ăшăтаймĕç. Пĕччен вутă сыппи камакара та сÿнет, темиçе вутă сыппи уйра та çунать, теççĕ вырассем. Вилсен те пĕччен выртмалла ан пултăр, çава çинче те йышпала выртмалла пултăр, тенĕ сĕм авалтан пĕччен пурнăçа ылханнă чăвашсем.

Салампи çакна кăçал питĕ лайăх ăнланчĕ — фермăра вăй хурса ĕçленĕ хушăрах, халăх хушшинче те тÿрĕ кăмăлпа ĕçлеме тăрăшрĕ, хăйне парторганизаци е комсомол организацийĕ хушнисене тĕрĕс туса пычĕ, пăрахăçа кăларнă зоотехника кружокне тепĕр хут ура çине тăратрĕ, занятисене йĕркеллĕ, эрнере иккĕ ирттерме тытăнчĕ, клубра хор кружокне ертсе пычĕ, агитаторта ĕçлерĕ. Хăй çынсен пурнăçне хутшăннă пекех, ун пурнăçне те ыттисем хутшăннине туйса хĕпĕртерĕ вăл. Хăйĕн пурнăçĕнче, пĕчĕк Валерик пекех, Саланов та, Борисов та, Лена та, Маруçпа Таруç та, ыттисем те пысăк вырăн йышăннине Салампи кунран-кун уççăнрах кура пуçларĕ.

Ленăна комсомол организацин секретарьне суйланăранпа ялти çамрăксем самаях хастарланчĕç, колхозра тимлĕрех ĕçлеме тытăнчĕç, агрозоокружок занятийĕсене, лекцисене, спектакльсене ытларах çÿреме пуçларĕç. Фермăра та ĕçсем лайăхланчĕç. Анчах Павăл малтанхиллех ĕçкĕпе супма пăрахмарĕ, Маруç та Салампипе Лена çине малтанхи пекех шурă куçпа пăхкаларĕ.

— Салампие пурте алă çинче çĕклесе çÿреме хатĕр, ун çинчен район хаçатра та ырласа çыраççĕ, стена хаçатĕнче те мухтаççĕ, пухусенче те ăнах ырă ятпа асăнаççĕ. Ытлашши нимех те туман-ха, ара,—тет çатăртатса Маруç. — Пирĕн чухлĕ ĕçлесе пăхтăр-ха пĕрре! Янтти çине, çын çине килсе кĕчĕ-ха. Çăмăл терĕ пуль выльăх таврашĕнче ĕçлеме! Ĕçлемен мар эпир, сахал мар çипуç пĕтернĕ кунта тĕрткеленсе, ара.

— Ара пулмасăр, — тет Таруç та, тусĕпе килĕшенçи пулса, анчах хăй чунĕпе Салампи еннеллех туртăнать.

Чăн, Салампи пĕччен нимех те туман-ха, Маруçпа Таруç та унтан юлсах каймаççĕ, вĕсем çулсерен пилĕкçĕршер ĕскунĕ ÿкерeççĕ. Анчах Салампи кирек мĕнле ĕçе те хăй малтан пуçарса тăвать, ăна кура вара ытти телятницăсем те тăрăшаççĕ. Вăл фермăна киличчен телятницăсем çамрăк пăрусене çирĕм кунтан тин пăхма илетчĕç, унччен пăрусене дояркăсемех пăхи-пăхми усратчĕç, çавăнпа амăшăй пăрусенчен чирлекелени те, хушăран вилни те пулкалатчĕ. Салампи ĕне пăрулана кунах кашни çамрăк пăрăва пăхма дояркăсене пулăшма тытăнчĕ. Пĕр эрнерен вара пăрăва уйрăм витене куçарать те çирĕм кунччен ăна амăш сĕчĕпе тăрантарать, вăйсăртарах пăрусене çирĕм пилĕк куна çити амăш сĕтне ĕçтерет.

— Ĕскунне хапсăнса çапла хăтланать, дояркăсенчен ĕскунĕ туртса илесшĕн, ара, — тет Маруç, ун пирки çатăртатса, анчах Салампи пăхнă пăрусем тасарах, тĕреклĕрех ÿснине курать те — хăй те Салампи пек ĕçлеме тытăнать.

Малтан дояркăсем те, телятницăсем те амăшăй пăрусене сĕт ĕçтернĕ чухне ним те тиркесе тăмастчĕç: йÿçĕхе пуçланă сĕт-и, чирлĕрех ĕне сĕчĕ-и е ют ĕне сĕчĕ-и — тытатчĕç те ĕçтеретчĕç, çавăнпа пăрусене час-часах варвитти еретчĕ, хăшпĕр пăрусем нишленсе каятчĕç. Салампи каллех хăйне евĕрлĕ ĕçлеме пуçларĕ.

— Кĕнеке çинчи пек тăвасшăн, ара, институтра вĕреннĕ мар-и? Наука çынни, темерĕн! Пире кĕнекепе хăратаймăн: хамăр лайăх пĕлетпĕр, — тет Маруç кăмăлсăррăн; çапах хăй, Салампирен курса, çĕнĕлле ĕçлеме тытăнать.

Павăл çартан таврăнсанах фермăра питĕ çирĕп йĕркеччĕ, тасалăхчĕ. «Штоп ман патăмра порядок, как в танковых частях, пултăр!» — тетчĕ Шамбулкин. Ун чухне дояркăсем те, телятницăсем те шап-шурă халатсемпе çÿретчĕç. Павăл ĕçме тытăннăранпа çав йăла пăрахăça тухнăччĕ, хуралса пĕтнĕ халатсем чăланта выртатчĕç. Салампи ĕçе тухсан иккĕмĕш куннех хăй халатне çуса тăхăнчĕ, ăна курса Лена та вăтана-вăтанах шурă халат тăхăнчĕ, унтан—Таруç, кайран вара Маруç та: «Ытти хĕрсенчен эп мĕнрен кая»,—текелесе, шапшурă халатпа çÿреме пуçларĕ.

Çапла пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕнех, кунран-кунах Салампи хăйĕн хĕр-тусĕсене хавхалантарса, çĕнĕлле ĕçлеттерме тытăнчĕ.

Фермăра пĕтĕм ĕç пурпĕрех ÿсмест-ха, ĕне витинче те, пăру витинче те йĕрке пулсах çитеймест; кунта пурне те хушса итлеттерекен, ăс парса вĕрентекен, ятлă-сумлă, çирĕп çын çукки сисĕнет.

Шамбулкина пухусенче те ятлаççĕ, фермăри хĕрсем те ăна кулленех вăрçаççĕ, анчах ĕçке ярăннă каччă ним те пулăшмасть, вăл кунсерен хĕрĕнкĕ: «Кончал!» тесе çÿрет. «Пăсăлчĕ пирĕн Павăл, шыв ĕçнĕ чух та çĕршер грамăн ярса ĕçет. Мĕншĕн кĕртрĕç-ши ăна пĕрреххут çав ферăма, пуçлăх мар чухнех лайăх ĕçлетчĕ ача»,—тесе калать тет амăшĕ.

— Павăл, ара! Вăл та çитмест, ку та çитмест, мĕншĕн правленире каламастăн мĕн туянмаллине?! — теççĕ ăна фермăра.

— Пулать, пулать, йăмра çулçи йăмăкăмсем! Халех каятăп та майласа килетĕп. Порядок в танковых частях!— тет те Шамбулкин ялалла тухса уттарать. Каçа хирĕç вара ÿсĕр таврăнать, ферма пÿртне кĕрсе выртса, ним пĕлми «хуп турттарать».

— Павăл, сана вут хутмасăрах сĕрĕм тивнĕ тем?—терĕ ăна пĕрре Салампи, лешĕ çапла «хуп турттарса» выртнă чух.

Шамбулкин хăрлаттарма чарăнчĕ те салтакла хăвăрт сиксе тăчĕ, яланхи йăлипе, гимнастеркине туртса тÿрлетрĕ.

— Кончал паян эпĕ, вырăслати хĕрĕ!—терĕ вăл, айăплăн кулкаласа, хĕрлĕ çÿçне пÿрнисемпе туранçи пулса.

Павăл ашшĕ-амăшĕпе Салампи ашшĕ-амăшĕ ĕлĕкрен хурăнташлă пурăннă, çавăнпа Шамбулкин Салампие «вы-



## ПУЛТАРУЛЛĂ ТКАЧИХА

Цехра пир тĕртекен станоксен сасси пĕр вĕçĕмсĕр кĕрлесе тăрать. Акă вĕрçĕнĕ станоксем умĕнче вăтам кĕлеткеллĕ, хитре сăн-питлĕ ткачиха ĕçлет. Вăл вăчкĕн куçĕсемпе станоксем мĕнле ĕçленине тимлĕн сăнать. Ку — Шупашкарти пир-авăр комбинатĕнчи ткачиха Валентина Трубицина.

Çамрăк ткачиха уйăхри плана яланах ирттерсе тултарать. Халĕ вăл çĕнĕ çула ĕçри çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илчĕ, январь уйăхĕнчех пĕрремĕш квартал планне тултарма ĕмĕтленет.

П. Матюхин фотоӳкерчĕкĕ.

рăслати хĕрĕ» тет, ун амăшне «вырăслапи» тет. Те ачаранпах хаяр хресна амăшĕнчен хăраса ӳснĕрен, Павăл Салампирен те именет.

— Кончал, вырăслати хĕрĕ, ан ятла!

— Э-эх, Павлуша! Ху лавккаран ăшăнса килтĕн те ĕнтĕ, выртатăн киленсе кăмака çумĕнче. Пăру витинче, ав, сивĕ, шыв шăнать.

— Тулта ăшă чухне витере те ăшă пулать,—шӳтлеме тăчĕ Павăл.—Лавккара ăшăнни пирки йăнăшатăн, вырăслати хĕрĕ, эпĕ «çуттине» юратмастăп: чĕрене касать вăл. «Ан-шарли» питĕ лайăх, уçламçу пек çемçе. Лешне, малтан тухнине, пĕр-ик стакан хăрнлаттаратăн та — мунча кĕрсе тухнă пак, пĕтĕм çан-çурăм канса, чун-чĕре уçăлса каять.

Шӳт май килменнине Павăл хăй те сисрĕ, Салампи хăй çине хĕрхенчĕклĕн пăхнине асăрхарĕ те кулмасăр каларĕ:

— Пурпĕрех халĕ маншăн, Салампи, илтетĕн-и? Хулана кайса завода кĕретĕп. Кăлараççĕ мана ĕçрен. Борисов пулать ман вырăнта. Ĕçлесе пăхчăр-ха пĕрре. Эп кун чухлĕ ĕçленĕ, çитет, ĕçлемен мар — пĕтĕм ял пĕлет! Вăрçă хыççăн ĕнисене вĕренпе çакса тăрататтчĕç, апат çитместчĕ—хам килтине патăм, пӳрт лартма тесе укça пухнăччĕ, ăна та апат илме патăм. Ун чухне: «Шамбулкин патриот!»—тетчĕç, халĕ: «Шамбулкин — эрех паттăр! Шамбулкин зазнался!» Сыснался!.. Хăйсем ĕçлесе пăхчăр. Сăмахпа шур пӳрт лартма та йывăр мар...

Тултан Маруçпа Таруç шавласа кĕнине илтсен, Павăл шăпланчĕ. Салампи васкаса тулалла тухрĕ. Хĕрсем кĕрсенех Павăл: «Кончал!» терĕ те кăмака çуменчи сак çине тăсалса выртрĕ.

— Саламписемех мĕн турĕç ана! Çавсемех сана ĕçрен каларmалла мĕн турĕç! — тере вĕтелтетсе Маруç, алакран кĕнĕ-кеменех. — Çавсем виççĕшĕ: Салампи, Лена, Коля сан çинчен стена хаçатĕнче тăрахласа çырчĕç, пĕтĕм ял кулли турĕç сана, Саламписемех...

Маруç каласа та петереймерĕ, хулăн тутине çăм тутăр вĕçĕпе хупларĕ. Павăл яштах сиксе таче те тула илтĕнмеллех кашкăрса тăкрĕ:

— Хо-оп!.. Хоп карма çăварна! Салампи çинчен ман умра пĕр япах сăмах та ан калана пултăр! Илтрĕн-и? Пĕлместĕр-ха эсир ăна, йĕп çарти чухлĕ те пелместĕр! Эсĕ акă мана, хăвна, ыттисене тирке, анчах ăна... Çын куçĕнчи çӳппе лайăх куратăр... «Сысна хăй курпунне пелмест», тени чанах-мĕн...

Шамбулкин тарăхнипе пӳлĕнчĕ, урăх ним те калаймарĕ, вара сак çине ĕшеннĕ çын пек тĕшĕрелсе ларчĕ те хĕрлĕ çӳçне тăрмаласа илчĕ, пĕр хушă шарламарĕ, унтан салхуллă саспа хушса хучĕ:

— Эх, хĕрсем, суккăр-çке эсир: Салампи мĕнлине курмастăр... Асли асли пек пултар — вĕрентсе калатăп сире: юратăр ăна, пĕтем чун-чĕререн юратăр. Ун йышши çын вăл ĕçре те, вĕренӳре те, пурнăçра та, пĕлессĕр килет пулсан, юратура та — çирĕп çын. Чунĕ мĕнле! Чан-чăн этем! А эпĕ... эпĕ... кончал!..

Шамбулкин, пуçне аллисемпе тытса, сак çине ӳпне выртрĕ те урăх сасă памарĕ.

Салампи пăру витине кĕнĕ чух Павăл кашкарнине илтрĕ те тата хытăрах палханма пуçларĕ. Ӳсĕр каччă ун асĕнчен тухмарĕ.

Вăрçă пĕтсенех Шамбулкин салтакран таврăнчĕ те пĕр канмасăр, тӳрех колхозра ĕçлеме тытăнчĕ. Часах ăна ферма пуçлăхне лартрĕç. 1946 çулхи çуркунне фермăра выльăх-чĕрлĕх апачĕ петсе çитрĕ — çуртсем çине витнĕ çĕнĕрех улама сӳмелле пулчĕ, йăмра турачĕ касмалла пулчĕ; вăл çулхине нумай çурт тăрри, нумай йăмра тăрри çарала-çарала юлчĕ. Çав çулхине, ялти коммунистсем пуçарнипе, колхозниксем хăйсен ытлашши тыррине, утине колхоза кивçен пачĕç. Павăл та икĕ лав вăрман ути, çуртри уламĕ, укça та пачĕ. Чăнах, фермăшăн тăрăшман мар ĕнтĕ вăл, чунне парса ĕçлерĕ. Часах ун çинчен хаçатсенче çыра пуçларĕç. Каччă вара, хăй сисмесĕрех, тем хушăра мăнкăмăлланчĕ, майĕпен правлени хăйне мĕн хушнине итлеми пулчĕ, ҫуллен-хулленех ĕçке ерсе кайрĕ, такамран: «Кончал!» теме вĕренчĕ. Вăл комсомолец та мар, коммунист та мар. Ăна правлени ларăвĕнче те, коммунистсен е комсомолецсен уçă пухăвĕсенче те асăрхаттараççĕ, ятлаççĕ. Павăл тӳрленме сăмах парать, чăнах та, пĕр-ик эрне лайăх ĕçлет, ĕçмест, анчах пĕр-пĕр пасар кунĕ е уявра «лешне» тутанса пăхать те, хăй калашле, «шалта хурчĕ йăшăлтатма пуçлать» вара унăн... Салтакран килсенех кĕнеке вулама юрататчĕ вăл, Салампирен тек-текех лайăх кĕнекесем ыйтса илетчĕ. Халĕ кĕнеке енне çаврăнса та

пăхмасть, хаçатсене те: «Хам çинчен карикатура тухман-ши?» тесе çеç пăхкалать; зоотехника кружокĕн занятийĕсенче кулкаласа çеç, ирĕксĕртен тенĕ пек ларать, лекци хыççăн вара вĕçĕ-хĕррисĕр ыйту парать, анчах мĕн те пулин пĕлес тесе мар, лектора такăнтарас тесе, тăрăхларах ыйтать; кино е спектакль курма та сахал çӳрет, клуба пырсан та: «Кĕçĕр кампа пĕрле ĕçме каймалла-ши, кунта ун пеккисем пурши?» тесе çеç пыркалать. «Ун пеккине» тĕл пулсан, тӳрех Маруç инкĕшĕ патне тухса сулланаççĕ. Лере вара—таçтан тупнă «ан-шарли», çыртмалăх пĕр-икĕ шăл сухан, киревсĕр сăмах-юмах, ăспа-вăйпа мухтанни, пĕр-пĕрне кӳрентерни, илемсĕр шухăшсем... Ирхине Павăл хăйĕнчен хăй вăтанать, хăйне ачаран юратса ӳстернĕ амăшне кусран пăхаймасть, чĕтреме ернĕ аллисемпе аран-аран хырăнать, çăвăнать, çимесĕрех фермăна тухса утать. Çул çинче ăна таçтан ĕнерхи тусĕсем тĕл пулаççĕ те «святой вода шывĕ ĕçсе çылăх каçарттарма» чĕнеççĕ. Павăл хăй ăшĕнче кусене тарăхать те, тав тăвать те; каяс мар, каяс мар, тет хăйне хăй, анчах урисем лавкканаллах утаççĕ. Фермăна пырсан та вара ĕç шухăшĕ мар унăн: «Кончал!» тет те кăмака сакки çинче ыйха туртать. Каçхине каллех — таçтан тупнă «ан-шарли», пĕр-икĕ шăл сухан, каллех киревсĕр сăмах-юмах, ăспа-вăйпа мухтанни, пĕр-пĕрине кӳрентерни, илемсĕр шухăшсем. Каллех Павăл пĕртен-пĕр юррине урмăшнă сасăпа ĕнерлет:

> Вăр-ман-ти тă-ма-ни
> Ка-айăк ма-ари?
> Кар-та-ри ка-ча-ки
> Вы-ылькăх ма-ар-и?..

Павăла ун пек чухне ан çулăх. «Эп ĕçлемен-и? Колхозшăн тăрăшман-и? Пĕтĕм ял пĕлет!» — кăшкăрать вăл мухтанса. Ун пек чухне вара уншăн ĕçкĕ пурнăçра чи ырри пек туйăнать, ĕçмен çынсем çине вăл йĕрĕнерех пăхать: «Эрех ĕçмен, чĕлĕм туртман арçынтан хĕрарăм шăрши кĕрет», тет кăшкăрса. Ирхине вара каллех хăйĕнчен хăй вăтанать, ӳкĕнет, хуйхăрать, каллех пĕр хушă хĕрсе кайса ĕçлеме пикенет. Саламп фермăна ĕçе кĕрсен, Павăл пĕр вăхăт çаплах тăрăшса ĕçлерĕ. Унтан каллех ферма енне пăхми пулчĕ.

Савнийĕ куллен япăхса пынине кура Таруç сисĕнмеллех улшăнчĕ, пусăрăнчĕ, тăрăшарах ĕçлеме пуçларĕ. Юлашки вăхăтра вăл сахал калаçса кулакан пулчĕ, янкăс тумланма пăрахрĕ, кролик çăмĕнчен çыхнă кăвак тутăрне куç çинерех антарса лартать те Саламп хахçанхи юррине хуллен юрлакаласа çӳрет. Савнийĕ час-часах ĕçсе ӳсĕрĕлни, кăçсерен Маруç инкĕшĕ патĕнче улах туни çамрăк хĕре кăçал хĕлле сахал мар çунтарчĕ, анчах ку — çырли мар, çеçки кăна пулнă-мĕн...

Юлашки кун Павăл фермăна тăм-урă пычĕ. Вăл хăнтăрлă хура кĕрĕкпе, хура çĕлĕкпе, аллисене кĕсъерен кăлармасăр, ытти чухнехи пек шӳтлемесĕр, Борисова фермăра мĕн пуррине кăтартса çӳрерĕ.

Таруç хăйĕн савнине хĕрхенсе те хурланса сăнарĕ. Павăл унпа тахçантанпах калаçас тесе калаçмасть пулин те, Таруç ăна манаймасть, пушшех асапланса юрататть. Тем пек пулашĕччĕ вăл ăна, анчах чунсăр каччă ун енне çаврăнса та пăхмасть.

Каçхине хĕрсем пурте ферма пӳртĕнчеччĕ, Павăла ĕçрен кăларни çинчен кашни хăйне май шавласа лартчĕç. Çав вăхăтра Шамбулкинпа Борисов килсе кĕчĕç.

— Çапла, Григорий Петрович,—терĕ Павăл алăкран кĕрсенех.

Борисов чĕнмерĕ.

Вĕсем тулта мĕн калаçнине, Шамбулкин мĕншĕн: «Çапла», тенине Таруç ун чухне, тем пекех пĕлес тесен те, пĕлеймерĕ, вара пушшех хурланчĕ. Вăл парторганизаци секретарĕ халех фермăри çынсене пухса калаçасса кĕтрĕ, анчах Борисов пуху пухас шут тытмарĕ пулмалла, хура куçĕсене вылятмасăр, кашнин çине тинкерсе пăхрĕ те сасартăк йăлл! кулса ячĕ.

— Ну, паянтан пĕрле ĕçлеме тытăнăпăр,—терĕ. Вара, аманнă урине кăштах сĕтĕрсе, стена çумĕнчи сехет умне пырса тăчĕ. Пурте сехет çине пăхрĕç, пурне те лайăх мар пулса кайрĕ.

Койкăсем те, тумбочкăсем те, сĕтелсем те, урай та тап-тасах, простыньсем те, чӳрече каррисем те чăлт шурă. Анчах, пыл каткине тикĕт тумламĕ ярса пăснă пек, пӳрт илемне çак сехет пăснине пурте халь тин асăрхарĕç. Вăл сехет Павăл ĕçке ернĕренпех чарăннă та чалăшса **кайнă, ăна никам та тӳр**летсе яман, тасатман; тукмакĕнчен такам тем пысăкăш çăра çакса пăхнă, сехет пурпĕр **кайман.**

Борисов сехет тукмакĕ çумĕнчи пысăк çăрана вĕçертсе шкапа хучĕ, сехетне шăлса-вĕрсе тасатрĕ, тӳрлеткелерĕ те каллех çакрĕ. Темиçе уйăх юрăхсăра тухса ларан сехет чип-чиперех шаккама пуçларĕ. **Пурте** вара çăмăллăн сывласа ячĕç..

Çав каç Павăл пĕрремĕш хут киле таврăнман, Маруç инкĕшĕ патĕнчех çĕр каçнă, терĕç...

Усал хыпар урхамах мар, ăна нимле йĕвенпе те тытса çăварлăхлаймăн; вăл ирхине-ирех тахăш пӳртрен пушă витресемпе пĕрле çăл патне çитет те вара тулли витресемпе пĕрле кашни киле саланать; утмăл ураллăскер, пур çĕре те çитме ĕлкĕрет.

Таруç çав усал хыпара çăл патĕнче илтрĕ те хăйне мăшкăлласа чулпа пенĕнех туйрĕ, сасартăках такам пуçран çапасран хăранă пек, темле хутланчĕ, пĕчĕкленсе кайрĕ, пуçне усрĕ, тутăрне куç çинерех антарчĕ те витрисене йăтса килелле васкарĕ. Килкартине кĕрсенех витресене пусма вĕçне лартрĕ те пахчари улăм купи патне чупса тухрĕ, пуçне купа ăшне чиксе кăшкăрса макăрса ячĕ. Куççульпе тăвăлнă ăшчикĕ кăшт уçăлсан, лăпланчĕ, пĕр хушă хăй çакăнта мĕншĕн выртнăшăн тĕлĕнчĕ, çемçе чунлă пулнăшăн хăйне хăй ятларĕ, анчах вăрçă вăхăтĕнчи кунсене, Павăл çырăвĕсене, кĕрхи улах каçĕсене аса илчĕ **те каллех пĕчĕк** ачалла хурланса, сасăпа макăрчĕ. Вара йăлтах уçăлчĕ, **хăйне сивĕ çапнине** сиссе, сиксе тăчĕ.

Ял çинче ытлашши сас-чĕвĕ çук, ирхи сивĕ сывлăшра çуна сасси кăчăртатни çеç илтĕнет тата урамра Маруçсен сысни, çанталăк часах ăшăтас çуккине сиснĕскер, улăм çыртса, çухăрса чупать; мăръесенчен шурă тĕтĕм юпа пек хăпарать; кăн-кăвак, таса тӳпере, питĕ инçетре, самолет шурă тĕтĕм кăларса, пĕр сассăр вĕçет, тĕтĕмĕ вара сапаланса-сирĕлсе каймасăр, çурхи юр çине хĕрсем пир тĕрки сарнă евĕр, тăсăлса, шуралса ырать.

Çак самантра Таруç хăй Саламп çинчен калама юраман сăмахах каланине аса илчĕ, анчах, хăйĕнчен хăй вăтаннипе, ун пирки шухăшласшăн пулмарĕ. «Сивĕ пуль çав летчика», терĕ вăл, чунне хытарсах самолет çинчен шутланçи пулса. Чĕри пурпĕрех ăна итлемерĕ. «Ав, çав улмуççи айĕнче Саламп çакнашкалах хурланса макăрчĕ, — каллех хăйĕнчен хăй вăтанса аса илчĕ Таруç, — ун чухне Маруçпа иксĕмĕр çак купа хыçĕнче кулса тăтăмăр, çын куççульне ним вырăнне те хумарăмăр. Кайран фермăри хĕрсене кулакулах каласа кăтартрăмăр, Саламп хăйĕн савнийĕ хыççăн мĕнле чупниччен, мĕнле макăрса выртса юлниччен тăрăхларăмăр. Акă халĕ хама çаврăнса çитрĕ. Мĕн тери айăплă эпĕ Саламп умĕнче!»

— Каçар мана, Саламп! Эпĕ сан умăнта питĕ айăплă,—терĕ кайран фермăра Таруç кӳршĕ хĕрне, — Шупашкартан сан пата темле каччă килсе кайнă пирки эпир, Маруçпа иксĕмĕр, сăмах сартăмăр. Каçар, Саламп, эпĕ халĕ урăх ним калама та пĕлместĕп ĕнтĕ, хăть мĕн ту мана... Эпĕ те, сан пекех, телейсĕр!

Таруç чăтса тăраймарĕ — Салампие ыталаса илчĕ те макăрса ячĕ.

— Ан йĕр, Даша, — терĕ Саламп, ăна йăпатса, — Телей курасси малашне-ха иксĕмĕрĕн. Хăвна ху телейсĕр вырăнне хума... нимле сăлтав та çук санăн. Мана телейсĕр вырăнне ан хур. Эпĕ — телейлĕ! Чăн калатăп сана, эпĕ телейлĕ! Мана урăх ним те кирлĕ мар.

Çав кунтанпа Таруç яланах Салампипе пĕрле ĕçлеме, унпа пĕрле калаçса çӳреме тăрăшрĕ. Пĕччен тăрса юлнă Маруç пĕр хушă тусĕсем çине куç хӳрипе çеç пăхкаларĕ, анчах, ушкăнран уйрăлса юлнине сиссе, Саламп майлă çаврăнма пуçларĕ, часах вăл хăй те Салампие хисеплеме тытăнчĕ. Ку акă мĕнле пулчĕ.

Григорий Петрович Борисов Шамбулкин ĕçне хăй çине илсен, чи малтанах дояркăсемпе телятницăсене кӳршĕ колхозри фермăна илсе кайса кăтартма, унти ĕçсемпе паллаштарма шут тытрĕ. «Малалла» колхоза телятницăсенчен иккĕн — Ленăпа Маруç кайрĕç. Экскурсинчен килсен, Борисов зоокружок занятийĕнче «Малалла» колхозри пĕтĕм çитĕнӳсем çинчен каласа кăтартрĕ, Лена унти телятницăсен ĕçĕпе паллаштарчĕ.

Маруç вăл каçхине хăй мĕн-мĕн курнине мар, «тĕлĕнмелле избач Шалгайкин» çинчен çеç каласа тусĕсене култарчĕ:

— Ара, вĕсен те ытлашши нимех те çук-иç, пăру витисене таса тытаççĕ ĕнтĕ — пĕр çав анчах. Избачĕ вара, ну,

пулнӑ та пулнӑ ӗнтӗ! Ҫӗр те пӗр ялта та ун пеккине тупаймӑн. Кулса вар хытатчӗ пуль ҫав тӗлӗнтермӗш этемрен. Вӑл пирӗнпе пӗрле фермӑра пулчӗ те, кашни япала ҫинчен ӑнлантармассерен доклад тума пуҫлать, ача. Хӑй халь те авланман, тет, ара.

— Степанова, — хушрӗ ӑна Борисов, — эсир Шалтайкин ҫинчен мар, унти фермӑри йӗркесем ҫинчен тата хамӑр фермӑри йӗркесем ҫинчен халӑха каласа кӑтартӑр.

— Ара, халех-и?—терӗ Маруҫ, хӑраса ӳксе. — Лена та каласа пачӗ-иҫ? Тата манран мӗн доклачӗ пултӑр, эпӗ Шалтайкин мар-ҫке!

— Халех мар, ыран клубра агрозоотехника кружокӗн членӗсене пухатпӑр — вӑт ҫавӑнта тӗплӗ каласа парӑр, халӑха хӑвӑр ӗҫӗрпе паллаштарӑр: эсир фермӑра вунӑ ҫул ӗҫлетӗр, сирӗн каламалӑх пур.

Халиччен халӑх умӗнче тухса калаҫман хӗре кун пек сӗнӳ савӑнтарчӗ те, хӑратрӗ те. Вунӑ ҫул хушши ӗҫленӗ ҫӗрте, паллах, каласа кӑтартмалли нумай. Маруҫ тӑрӑшман мар, вунӑ ҫул хушшинче темиҫе ҫӗр пӑру пӑхса ӳстернӗ, колхозри ӑратлӑ ӗнесенчен чылайӑшӗ вӑл пӑхса ӳстернӗскерсем. Ҫакӑн ҫинчен калассипе — савӑнӑҫ. Анчах мӗнле каламалла? Мӗнрен пуҫласа мӗнпе пӗтермелле? Ку вара — хӑрушӑ.

Халиччен Салампирен ним ыйтманскер, ун умӗнче нихӑш енӗпе те хӑйне пӗчӗкке хуманскер, Маруҫ каҫхине Салампи патне тетрадь йӑтса пычӗ те доклад ҫырмашкӑн пулӑшма ыйтрӗ. Иккӗшӗ вара ферма пӳртӗнче ҫурҫӗрччченех ҫырса ларчӗҫ. Тепӗр каҫхине Маруҫ клубра хӑйӗн ӗҫӗ ҫинчен, ыттисен ӗҫӗ ҫинчен конспект тӑрӑх каласа пачӗ.

— Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли виҫӗ ҫуллӑх плана тултарассишӗн эпӗ малашне те тӑрӑшса ӗҫлӗп, хампа пӗрле ӗҫлекен телятницӑсене те ӑмӑртса ӗҫлеме чӗнетӗп, — тесе пӗтерчӗ вӑл сӑмахне.

Павӑл хальхинче пӗр ыйту та памарӗ, чӗнмесӗр ларчӗ. Лена ашшӗпе тепӗр виҫ-тӑват ҫын ыйтнине хирӗҫ Маруҫ чиперех тавӑрса каларӗ.

— Ну, мӗнле, май килчӗ-и?—ыйтрӗ вӑл, Салампи патне пырса.

— Лайӑх каларӑн.

— Ах, ачам, Шалтайкинран култӑм та куласса, ҫӑмӑл мар иккен халӑх умӗнче калаҫасси! Нихҫан тухман тар тухрӗ, ачам. Спаҫҫипах сана, Салампи!

Ҫав каҫхине Маруҫ клубра нихҫанхинчен те нумайрах, купӑҫҫӑсене ывӑнтаричченех ташларӗ, тепӗр кунне фермӑра пуринчен малтан ӗҫлеме тытӑнчӗ. Ҫав каҫранпа вӑл Салампи ҫине кӗвӗҫсе пӑхма пӑрахрӗ, унпа йӗркеллӗ калаҫма, ҫывӑх пулма тӑрӑшрӗ, хӑй сисмесӗрех кунран-кун Салампипе туслашса пычӗ.

Хӗрсем хушшинче чӑн-чӑн ӑмӑрту пуҫланса кайрӗ. Эрне хушшинче пӑру вити ҫӗнелнӗ пекех пулчӗ: телятницӑсем вите урайне кунсерен кусарпа хырса ҫӑваҫҫӗ, пӑрусем айне сарнӑ улӑма кунне иккӗ улӑштарса тӑраҫҫӗ, вараланнӑ пӑрусене ӑшӑ шывпа ҫуса, щеткӑпа тасатаҫҫӗ.

Районтан килленех килсе тӑран Казаков вӗсене ырларӗ:

— Матур хӗрсем! Капла эсир «Малалла» колхоз телятницисенчен иртсе каятӑрах,—терӗ.

— Вӗсенчен юлас пур — пурӑнас та мар ҫӗр ҫинче, ара!—сӑмах тавӑрчӗ Маруҫ, зоотехника хирӗҫ кулкаласа.

— Астӑвӑр эппин, вӗсенчен юлсан—кайча каймасӑрах вилмелле ан пултӑр,— шӳтлесе илчӗ Казаков. — Колхозра сирӗн пек пуян хӗр те ҫук вӗт: ҫулсерен пилӗкҫӗршер ӗҫкунӗ тӑватӑр. Халь те евчӗсем канӑҫ памаҫҫӗ пуль-ха?

Казаков шӳтлесе калани чӑн пулчӗ: ҫав кун Турикасран Анаткаса евчӗ килнӗ-мӗн.

Саламп иртенпех фермӑраччӗ. Тул ҫуталиччен тӑрса, витери кӑмакасене хутса ячӗ вӑл, пӑрусене сӗт ӑшӑтса ӗҫтерчӗ, вӑлашкасене, тазсене ҫурӗ, пӑрусен айӗнчи улӑма улӑштарса сарчӗ, вите урайне ҫуса тухрӗ, вара пӳрте кӗрсе выртрӗ те кӑнтӑрлаччен ҫывӑрчӗ. Кӑнтӑрлахи апата киле таврӑнмарӗ, Ленӑн яшкине сыпкаларӗ те каҫхи заняти валли конспект ҫырчӗ. Киле каҫа хирӗҫ тин таврӑнчӗ.



*Советсен суйлавӗ умӗн*

# ЦЕХРИ АГИТАТОР

Хула ҫийӗн завод сасси янӑраса кайрӗ. Рабочисем, станоксемпе машинӑсене чарса, столовӑйсемпе хӗрлӗ кӗтессене васкаҫҫӗ, хӑшӗсем ҫавӑнтах, станоксем умне пухӑнса, тӗрлӗрен калаҫу пуҫлаҫҫӗ.

Акӑ кустӑрмасем юсакан цехри рабочисем парторганизаци секретарӗн заместителӗ Кустова тавра пухӑнаҫҫӗ. Кустова вӗсене пӗрре кӑна мар ҫӗнӗ хаҫатсем вуласа панӑ, тӗнчери лару-тӑрупа паллаштарнӑ, пӑравуссем юсакан завод коллективӗ тунӑ ӳсӗмсем ҫинчен кала-кала кӑтартнӑ. Паян та рабочисем Кустовӑна ҫитес суйлавсем ҫинчен каласа пама ыйтрӗҫ.

— Эпӗ сире Чӑваш АССР Верховнӑй Советне 91-мӗш суйлав округӗ тӑрӑх депутата суйлама тӑратнӑ кандидат Николай Павлович Кондрашин ҫинчен каласа парасшӑн,—терӗ те Кустова юлташ рабочисене унӑн биографийӗпе, ӗҫри ҫитӗнӗвӗсемпе паллаштарма тытӑнчӗ.

*Улатӑр районӗ.* **П. Матюхин** фотоӳкерчӗкӗ.

Тӑвайккинче ҫунашкапа ярӑнакан Валерик ӑна аякранах асӑрхарӗ те хаваслӑн кӑшкӑрса хирӗҫ чупрӗ.

— Мама! Мама! Эпӗ чӑнкӑ ҫӗртен ярӑнтӑм, Маруҫсен Мишки хӑрарӗ, ярӑнаймарӗ ман хыҫҫӑн,—терӗ ача, тем хаклӑ хыпар пӗлтернӗ пекех савӑнса.— Мама, лар, сана та ҫунашкапа ярӑнтарам! Мама, лар!

Саламп ун кӑмӑлӗшӗнех, кӗрӗк аркине пуҫтарса тытса, пӗчӗк ҫунашка ҫине майлашса ларчӗ, Валерика чӗрҫи ҫине вырнаҫтарчӗ. Иккӗшӗ ҫырманалла ярӑнса анчӗҫ те юр кӗрчӗ ӑшне чӑмрӗҫ, хӑвӑрт сиксе тӑрса ахӑлтатса кулса силленчӗҫ. Пӗчӗк Валерик Саламп ҫинчи юра силлеме тӑрӑшрӗ, унӑн юр ӑшне путнӑ калушне тупса пачӗ.

— Мама, лар, эп сана туртса ҫитеретӗп, эсӗ ывӑннӑ. Кукам калать, эсӗ фермӑра питӗ нумай ӗҫлетӗн, тет. Ҫулла пӗчӗк тынашкисене пӑхма эпӗ те санпа пӗрле уя тухатӑп, ҫапла вӗт? Ун чухне сана пӑрусем хӑвалама пулӑшатӑп. Ҫапла вӗт, мама?

— Ҫапла, ҫапла, ывӑлӑм! Эсӗ мана туртаймастӑн, лар, хӑвна туртса каям,—терӗ те Саламп, телейлӗ ачана ҫунашка ҫине лартса туртрӗ. Ниҫта кайса кӗреймин савӑннӑ Валерик пӗр чарӑнми калаҫса пычӗ.

— Мама, сана ют яла илсе каясшӑн. Эсӗ каймастӑн вӗт, мама? Кукампа пӗрлех лайӑх, мама, ан кай ют яла, юрӗ-и?

— Кам илсе каясшӑн? — кулса ыйтрӗ Саламп.

— Пӗр усал хӗрарӑм килчӗ илсе кайма. Хӑй хӗп-хӗрлӗ, пирӗн сакайӗнчи хӗрлӗ кӑшман пек, тутӑрӗ те хӗп-хӗрлӗ. Эпӗ вӑл калаҫнине йӑлтах ӑнланаймарӑм, кукам йӑлтах ӑнланчӗ, вара ӑна: «Тухса кай пирӗн патран!» терӗ. Эп те каларӑм: «Тухса кай пирӗн патран!» терӗм. Кайрӗ вара.

— Кам килчӗ? — ыйтрӗ Саламп килте.

Яшка антаракан амӑшӗ малтанах шарламарӗ, унтан тарӑхнӑ сасӑпа каларӗ:

— Ҫӳреҫҫӗ ҫав сӗтӗрӗнсе!.. Турикасран Маруҫ инкӗшӗн аппӑшӗ килчӗ, Варук. Иккӗшӗ те пӗр майлах ҫав!

— Мӗн ҫӑмалпа килнӗ?

— Хӑтана янӑ ӑна, — терӗ карчӑк, йӗрӗнчӗклӗн кулса.

— Каччи мӗнлескер вара, хӑйшӗн хӑй калаҫайманскер?

— Аслӑ шкул пӗтернӗскер, тет. Ахаль, тем тесе мар та, «евчӗ пекех намӑссӑр» тени чӑн иккен. «Ун пек каччӑ таврара шыраса та тупас ҫук,— тет, ҫак ӑстиҫукскер, — миниҫтӑр пек тумланса ҫӳрет, вырӑсла анчах калаҫать, юрлама пӑттихвон пек юрлать ҫав!» тет. «Кам тавраш апла вӑл, унашкалскер?» тетӗп те: «Ара, Вирьял Кирилли ывӑлӗ. Кирилли вӑл пурӑнма ӳркенчӗ, тахҫанах анкарти хыҫне кайрӗ те, кусем халь иккӗшех пурӑнаҫҫӗ,

На веселый студенческий ужин
Собрались мы сегодня, друзья...

Çак институтра юрланă юрă Салампие хулари тусĕсене, хаваслă студентсене аса илтерчĕ — савăнтарчĕ те, кăшт хурлантарчĕ те. Çĕнĕ çул каçхине çапла, Анна Ивановна хваттерĕнче пухăнса юрланăччĕ...

Коля купăса тултанах ахăртса кĕчĕ. Виктор ăна куншăн вăрçса тăкасшăнччĕ (сивĕрен кĕрсен, купăса кăшт хашлаттарса уçăлтармалла-çке: унсăр чĕлĕхсем тутăхса татăлаççĕ!), анчах вăл хăйĕн тусĕ Павăл питĕ салхуллă ларнине асăрхарĕ те ятлаçма шутламарĕ.

Купăс сассине илтсенех, Валерик ташша ячĕ, ыттисем алă çупрĕç. Шавланă хушăра килсе кĕнĕ Лена та ташша ячĕ, ăна хирĕç Таруç, хĕрлĕ платье аркипе варкăштарса, вĕçсе тухрĕ, вăл савнине кўрентермелле такмаксем каласа çаптарма тытăнчĕ. Шўтлеме юратакан Казаков нихçан ташламан Виктора туртса кăларчĕ, лешĕ вара лўперрĕн силленкелесе, пурне те култарса пĕтерчĕ. Пуринчен те ытла Валерик хавасланса, кăшкăрса сикрĕ.

Сăра ĕçтерсе çаврăнакан Салампи кашнинех тимлĕ сăнарĕ: вăл Таруç мĕншĕн тарăхса-хурланса ташланине те, Павăл мĕншĕн салхуллине те асăрхарĕ, вĕсен кăмăлĕ çаплишĕн ним чухлĕ те тĕлĕнмерĕ, анчах ăна Коля Лена çине темле ытарайми, ачалла мар пăхни тĕлĕнтерчĕ. «Чăнах та, юрату куçран пуçланать-ши?..»

Салампи ташланă чух амăшĕ тўссе тăраймарĕ, макăрнине çын ан куртăр тесе, чăлана кĕрсе тăчĕ. «Çын пулчĕ, çын пулчĕ!» — вăрттăн савăнса йĕрчĕ вăл хĕрĕшĕн.

Ташласа-юрласа çитсен, пурте кино курма каймашкăн тухрĕç, купăс çеммипе юрласа, тăвалла утрĕç. Павăл вĕсем сисиччен йăмра хыçне тăрса юлчĕ. Юрă аякра шăплансан тин йăмра хыçĕнчен тухрĕ те килелле утрĕ.

— Анне, ыран ирех вăрат, вăрмана ферма вуттине кăларма каятăп,—терĕ вăл амăшне, хывăнса выртсан, анчах сывăрса каяймарĕ. Сав каçхине вăл хăйĕн пурнăçĕ-шăпишĕн нихçан пăшăрханманнине пăшăрханчĕ. Борисов сăмахĕсем пирки нумай шухăшларĕ, хăй йăнăш çулпа пĕччĕнех таçталла утнине питĕ лайăх ăнланса илчĕ...

Салампи те çав каçхине часах сывăрса каяймарĕ. Çак каçхине вăл Анна Ивановна сăмахне темиçе хут хăй ăссĕн каларĕ:

— Чăн, ĕмĕр ĕмĕрлесси — уй урлă каçасси мар: пурăнан пурнăçра тем тĕрлĕ кун та килсе тухать, хура кĕр пек хура хурлăх та пулкалать; çапах та пурнăç хурлăхлă мар, калама çук илĕртўллĕ!

* * *

...Хавалă тăри çуначĕ çинче килет кая юлнă шыв-шурлă çуркунне, тек вара хаяр сивве кун памасть. Тўпе кунсерен янкăр таса, кăн-кăвак тăрать; хĕвел хĕртсе пăхать; йăшнă юр лăстăр! туса пусăрнать, юр ирĕлнĕсемĕн ун айĕнчен тахçанхи йĕрсем тухаççĕ: çуна çулĕ тĕмескеленсех, хуралсах пырать. Уй уланать: сăрт-ту çамкисем, тўпем вырăнсем хуп-хура. Çĕмĕрт, чие, сирень папакĕсем хăмăрланаççĕ, çўçе кăчки — мамăк пек çемçе те шурă. Ял çинче хура курак краклатни, путек-сурăх макăрни, çăмарта пуçланă чăхсем кăтиклени, ача-пăча янтăрани кунĕпех лăпланмасть; çырмара шыв кĕрлесе юхать; уйра тăри, çураки çывхарни çинчен систерсе, хăйĕн пĕртен-пĕр «ĕçле-ĕçлеĕçле çи» кĕввине шĕкĕлчет.

Çакнашкал илемлĕ çурхи кун Салампи икĕ çыру илчĕ. Пĕри — Пĕчĕк Нинăран, тепри—темле Проворов Андрей Ивановичран, Владивосток хулинчен. Каллех пĕр-пĕр студент е салтак, пурнăçра ăнсăртран пĕрре курса калаçнăскер, юрату çырăвĕ çырнă пулĕ тесе, Салампи иккĕмĕш çырăвне уçмасăрах костюм кĕсйине чикрĕ, Нина çырăвне вара тем пекех васкаса вулама пуçларĕ. Тус-хĕр институтри хыпарсене, экзаменсем мĕнле пынине пĕлтерет, анчах Салампие халĕ урăххи илĕртрĕ: Алмазов. Ун çинчен çырнине Салампи ик-виçĕ хут вуласа тухрĕ:

«...Анатолий консерваторире вĕренме пăрахрĕ, Муза та музучилищĕне йăлишĕн çеç çўрекелерĕ. Пĕр вăхăтра иккĕшĕ пĕр-пĕринчен ниçта уйрăлмарĕç. Музăна пĕрмай театра, филармоние илсе кайма, тĕрлĕрен парнесем илсе пама укçа кирлĕрен Алмазов хулари вечерсене аккордеонпа çўреме пуçларĕ. Пĕрре вăл пирĕн хваттере ўсĕр пырса кĕчĕ те сан çинчен ыйтрĕ, анчах Анна Ивановна ăна ятларĕ: «Ман шанчăка пĕтертĕн, эп сана пысăк композитор пулатăн пуль теттĕм — эсĕ пур халтурить тума пуçларăн, теççĕ. Каларĕç-ха унта мана: сан çĕнĕ юррусене йăлтах тиркенĕ, терĕç»,—терĕ. «Мана халь пурпĕрех, Анна Ивановна, эпĕ ыранах кунтан пăрахса каятăп. Çĕпĕрти пĕр паллă театра кайса кĕретĕп, çарта пĕрле пулнă тусăм чĕнет».—терĕ. Çавăнтанпа эпĕ ăна курман. Вăл ăстине халь никам та пĕлмест. Муза пĕрре пирĕн пата пырса кĕчĕ, ун адресне ыйтса пĕлмешкĕн. Анчах Анна Ивановна ăна хăваланă пекех кăларса ячĕ»...

Пўртре тăвăр пек туйăннăран, Салампи сада чупса тухрĕ.

Çурхи садра юр кайса пĕтнĕпе пĕрех ĕнтĕ, çереме симĕс тĕс çапнă, анчах çĕр типсе хытайман-ха, пусмассерен ура вырăнĕ пăчăртатса тăрать. Сарай сулхăнĕнче кăшт юр юлнă, вăл та тĕлтĕл таткаланнă, йĕлтĕр йĕрĕ кăна çаплах сад урлă каçать-ха (пусăрăнса хытнă юр чи кайран кайса пĕтет), анчах вăл та йăшса çитнĕ, кĕçех ирĕлсе каймалла. Салампи сав асран каймн йĕлтĕр йĕрĕ çине чылайччен пăхса тăчĕ, ун чĕринче каллех хурлăх та, кўренў те вăранчĕ. Анчах та ку — кĕл айĕнче чылайччен сўнмесĕр тĕлкĕшекен кăвар мар ĕнтĕ, кăшт çеç сўни-сўнми йăлкăшакан вăйсăр хĕлхем кăна: сути пур-ха унăн, ăшши пурпĕр çук ĕнтĕ, пулас та çук.

Саламли, кĕç-вĕç ирĕлсе яланлăхах çухалас йĕлтĕр йĕрĕпе утса, анкарти хыçĕнчи тăлăх улмусси айне пырса тăчĕ, уялла тинкерсе пăхрĕ.

Ферма сурчĕсем патĕнчи тăвайккинче, симĕсленме пуçланă çерем çинче, пăрусем выляса çўреççĕ, унтах Маруçпа Таруç, Лена курăнкалаççĕ. Саланов, Шамбулкин, Виктор ферма çумĕнчи садра ĕçлеççĕ. Авă, уйри сукмакпа Турикасри шкултан Коля таврăнать. Унăн мăн çулпа утмалла пек ĕнтĕ, анчах вăл, ферма хĕрĕсем умне тухасшăн, типсе çитмен сукмакпах утать. Авă лере, вăрман енчи уйра, Борисовпа Яшманов çўреççĕ, вĕсем хир пăхма тухнă ĕнтĕ.

Çуркунне!..

Ашă çил Салампин çырă çивĕчĕпе вылять, кăвак платье аркине варкăштарать, питĕнчен лăпкать, сывăхри яштака хырăн типсе хăрнă йĕпписене силлесе тăкать.

«Хырăн малтанхи турат вырăнĕсем яланах типсе лараççĕ те палăрми пулаççĕ, хыр вара тата çўлĕрех ўсет, çĕнĕ турат хушать, — шухăшларĕ Саламли.— Юрату суранĕсем те çаплах пĕтмеççĕ-ши?»

Саламли иккĕмĕш çыру çинчен аса илчĕ те ăна кĕсъерен ирĕксĕртерехххĕн çеç кăларса вулама пуçларĕ. Вырăсла çырнă. Малтанхи йĕркесене Саламли çиелтен çеç пăхса иртрĕ, унтан, сасартăк аça çапнă пек, шартах сикрĕ, хăй мĕн вуланине те ĕненесшĕн пулмарĕ: Валерик ашшĕ çырать!.. Валерик ашшĕ!.. Ашшĕ!..

Вăй пĕтсе килнипе Саламли çатан карта çумне таянса тăчĕ, малтанлăха ним шухăшласа илме те пĕлмерĕ, кăшт лăплансан, çырăва тепĕр хут вуласа тухрĕ те хуйха ўкрĕ.

«Акă вăл килет те тăван ывăлне хăйпе пĕрле илсе каять, эпĕ вара каллех пĕччен тăрса юлатăп... Мĕнле пурăнăп эпĕ Валериксăр? Мĕн кăна тўсмерĕм уншăн, мĕнле кăна юратмарăм ăна!.. Акă палламан çын килет те ман чĕреме тепĕр хут амантса хăварать... Амантсан-амантмасан та, вăл çын ман пурнăçа каллех тепĕр майлă çаврăрса ярать... Кам вăл, мĕнле çын, ман шăпама улăштараканскер?.. Эй, çамрăк ĕмĕрĕм! Тата мĕн курассăм пур-ши?..»

Саламли каялла çаврăнчĕ те пуçне чиксе килелле утрĕ. Çак самантра вăл анкартинчи юлашки юр ирĕлсе пĕтнине, йĕлтĕр йĕрĕнчен ним те юлманнине асăрхамарĕ, ун çинчен аса та илмерĕ. Йĕлтĕр йĕрĕ ĕмĕрлĕхех çухалчĕ.

*(Юлашки пулать.)*

## ЭП КĔТЕТĔП

**Петр ЯЛГИР**

Вĕçен кайăк кăнтăртан
Васкаса вĕçсе килет.
Çавăн евĕр ман пата
Сан çыру, пĕлеп, çитет,—
эп кĕтетĕп.

Ашă, çепĕç сăмахсем,
Лăпкă уçă çил пекех,
Килĕç савăнăç илсе
Çамрăк чĕреме кĕçех,—
эп кĕтетĕп.

Тусăм, эс савсан мана,
Эп те ĕмĕр пулăп сан.
Хаклă ырă хыпарна
Ирĕн-каçăнах, ялан—
эп кĕтетĕп.

# Çĕнĕ çурт



*1954 çулхи декабрь уйăхĕнче пирĕн Гăван çĕршыв столицинче—Мускавра строительсен, архитекторсен, строительство материалĕсем, строительствăпа çул-йĕр машинисем тăвакан промышленноçра, проект тата наукăпа тĕпчев организацийĕсенче ĕçлекенсен пĕтĕм Союзри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Çак канашлу пирĕн çĕршывра строительство çав тери вăйланса пынине палăртрĕ, строительство планĕсене ирттерсе тултармалли, ĕç тухăçлăхне ÿстермелли, строительство ĕçĕн хакне йÿнетмелли тата строительство пахалăхĕшĕн кĕрешмелли çĕнĕ майсене кăтартса пачĕ.*

*„Пирĕн çĕршывра çав тери анлă строительство пырать,—терĕ çак канашлура Н. С. Хрущев юлташ,—вăрçă хыççăнхи вăхăтра халăх хуçалăхĕнчи капитальнăй строительство валли Совет государстви 900 миллиард тенкĕ ытла расходланă... Рабочисемпе служащисен поселокĕсенче тунă пурăнмалли çуртсен пĕтĕм лаптăкĕ 200 миллион тăваткал метртан иртет“.*

*Шупашкарта та пурăнмалли çурт-йĕр строительстви юлашки вăхăтра чылай ÿсрĕ. 1954 çулта пĕр „Чăвашстрой“ тресчĕ кăна 2 500 тăваткал метра яхăн пурăнмалли çуртсем лартнă.*

*Çак номерте эпир „Чăвашстрой“ трестĕнче ĕçлекен çамрăк рабочисен общежитийĕ çинчен çырнă фотоочерк пичетлетпĕр.*

Шупашкар ÿсет. Хулан тĕп урамне Канаш çулĕпе пырса кĕретĕн-и е Етĕрне тракчĕпе пынă май аякран хулана пăхса савăнатăн-и—пурпĕрех, чи малтан тÿпенелле кармашакан йăтмалли кран-семпе строительство площадкисене, халь çеç туса лартнă хитре çуртсене асăрхатăн. Пĕр-икĕ çул каялла чугун çул станци районĕнче таса хирсем сарăлса выртатчĕç, халь кунта пурăнмалли çуртсемпе промышленность предприятийĕсем ÿсе-ÿсе ларчĕç; пир-авăр комбинатне çĕнĕ хула тесе калăн.





Шупашкарта çĕнĕрен больница-хула тăваççĕ, унта уйăхран-уйăха хитре çуртсем çĕкленеççĕ. Кунта анчах-и, кашни урам хăйĕн сăн-сăпатне çултан-çул улăштарса пырать. Пĕлтĕр йывăçран тунă кивĕ çуртсем урам илемне ярса ларнă пулсан, кăçал вĕсем вырăнĕнче виçĕ-тăвата хутлă илемлĕ çуртсем куçа илĕртеççĕ...

Дуся Шупашкара ĕçлеме килнĕ чухне те кунта пачах урăх картина пулнă. Больница-хула участокĕнче ялти пек пĕр хутлă çуртсем кăначчĕ. Халь Дуся çÿлĕ сăрт çинчи виçĕ хутлă çуртран хула çине пăхать те, хăйĕн ĕçне хăй куçĕпе курса, чунтан савăнать.

Дуся Павлова Шупашкарти строительствăна çулталăк каялла килнĕ. Вăл — «Чăвашстрой» трестĕнчи чи çамрăк работницăсенчен пĕри. Ĕçе хăнăхни те нумаях пулмасть-ха унăн. Малтанхи вăхăтра Дусьăшăн лепщик ĕçĕ ытла та кăткăс та йывăр пек туйăнатчĕ. Строительствăра пурте Саша пичче тесе чĕнекен лепщиксен бригадирĕ хĕре хăй патне ĕçе илсен, Дуся шутсăрах савăннăччĕ.

Лепщик ĕçĕ пархатарлă та тĕлĕнтермĕш ĕç. Лайăх лепщик пуласси çăмăл мар пулсан та, Дуся малтанхи кунсенчех ĕçе çав тери тимлĕн вĕренме тытăннă. Александр Сидельников пулăшнипе халь Дуся Павлова темиçе çул хушши лепщик пулса ĕçлекенсенчен пĕрре те кая юлмасть. Çĕнĕ çуртсен стенисемпе балконĕсенче Дуся аллипе тунă ÿкерчĕксем те сахал мар.

Павлова пек ăста алăсем «Чăвашстрой» трестĕнче татах та нумай. Акă Нина Ефремовăна пĕрле пурăнакансем хисеплесе «вăтă строитель» тесе чĕнеççĕ. Çулĕпе Нина çамрăк-ха. Çапах та пилĕк çул хушши Шупашкарти строительствăра ĕçленĕ вăхăтра Нина пĕр специальноçа кăна мар вĕреннĕ. Вăл кирпĕч хума та, кирлĕ пулсан, лепщике куçма та пултарать. Пĕлтĕр ăна строительство деталĕсем хатĕрлекен завода куçарчĕç. Василий Ефремович Ефремов мастер пулăшнипе Нина кăткăс станоксене хăвăрт вĕренсе çитрĕ. Халь вăл тăватă станок çинче ĕçлет.

Ĕçлĕ кун вĕçленсен, Константин Иванов урамĕнче яланах халăх йышлă пулать. Акă, вĕр-çĕнĕ автобус аслă урампа кĕрлесе хăпарчĕ те çитмĕл пĕрремĕш çуртран инçе мар чарăнчĕ. Автобус çинчен аннă хĕрсем, хавассăн та шавлăн калаçса, виçĕ хутлă çурт вестибюльне кĕрсе кайрĕç.

Ку «Чăвашстрой» трестĕнче ĕçлекен хĕрсен общежитийĕ. Ку çурта нумаях пулмасть туса пĕтернĕ те унта çамрăк работницăсене пурăнма куçарнă. Кунта кашни пÿлĕмрех икĕ е виçĕ хĕр вырнаçнă. Пÿлĕмсем пурин те таса та çутă, радио, библиотека, вулав пÿлĕмĕ работницăсене тухăçлă ĕç хыççăн культурăллă канма май парать.

Нина Курбановăпа Мария Емельянова пĕр пÿлĕмре пурăнаççĕ. Вĕсем пĕр тăван пекех туслă. Каçхине ĕçрен килсен те икĕ хĕр пĕрлех апат хатĕрлеççĕ.

— Çĕнĕ çуртри çĕнĕ кухня апатне те тутлă пĕçерет, — шÿтлерĕ Нюра, вĕри яшкана вĕре-вĕре тутанса.

Хĕрсем каçхи апата ларaççĕ. Çав вăхăтра коридорта радио сасси хавaслăн илтĕнет. Вĕсем пурте туслă, пурте пĕр çемьери аппăшĕсемпе йăмăкĕсем пек килĕштерсе пурăнаççĕ, йывăр самантра пĕрне-пĕри пулăшаççĕ, пĕр-пĕрин çитĕнĕвĕсемпе савăнаççĕ.



Таса та çутă пӳлĕмсенче каçхине те кăнтăрлахи пекех çап-çутă. Электричество çутипе темле ĕç те тума пулать.

Юлия Филипповнăна строительствăри работницăсем яланах ырă сăмахпа асăнаççĕ. Вăл ĕçлеме те, вăйя-кулла хутшăнма та, юлташĕсемпе пĕрле пулса чĕререн калаçма та нихçан та ӳркенсе тăмасть. Каçхине, ĕçрен таврăнсан, вăл пĕр минут та ахаль лармасть. Пĕчĕкрен ĕçе вĕреннĕ аллисем ăна канăç памаççĕ. Вăл, ялти пек, аллине таса катан пирпе пурçăн çип илет те тĕрĕ тĕрлеме ларать. Вара шур пир çине тем-тем тĕрлĕ хитре тĕрĕ эрешленет.

Юльăна хирĕç сĕтел хушшине Альбина Петрова ларать. Вăл нихçан та, нимле ĕçре те тантăшĕнчен юласшăн мар. Тĕрĕ тĕрлеççĕ-и вĕсем е ĕçре пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ-и,—Альбина яланах Юльăпа юнашар.



Каçхи тутлă апат хыççăн Зина Ивличева умне учебниксем уçса хучĕ те ыранхи уроксене хатĕрленме тытăнчĕ. Зина строительствăра ĕçленĕ хушăрах каçхи шкулта вĕренет.

Зина юлташĕ Ирина Григорьева строительствăна вăтам шкултан вĕренсе тухнă хыççăн килнĕ. Вăл малашне те вĕренме шутлать, строительствăри кăткăс бухгалтерие вĕренсе алла илесшĕн çунать. Анчах халь унăн Зинăна пур енчен те пулăшма лекет-ха. Каç-каç вăл нумай чухне Зинăшăн «учительница» пулса тăрать. Зинăшăн математикăран йывăр предмет çĕр çинче те урăх çук пек туйăнать, анчах Ирина пулăшнипе вăл юлашки вăхăтра математикăна та юратма пуçларĕ.

Пĕр пӳлĕмре пурăнакан Клавдия Ершова икĕ хĕрĕн вĕренӳне кĕвĕçсе сăнать. Халлĕхе унăн, тантăшĕсем пек, каçхи шкулта вĕренме май килмерĕ. Килес çул пурпĕрех каçхи вăтам шкула вĕренме кĕретĕп, — тесе шухăшлать те Клавдия, юлташĕсене вĕренме кансĕрлес мар тесе, вестибюле каять.



Каçхине вестибюльте яланах шавлă та савăнăçлă. Вулав пӳлĕмне вырнаçайманнисем, библиотекăран хаçатсемпе журналсем илеççĕ те, е хăйсен пӳлĕмĕсене васкаççĕ, е вестибюльте вырăн йышăнаççĕ. Паян хĕрсем патне çĕнĕ больница тунă çĕрте ĕçлекен Петя Архипов хăнана килчĕ. Петя кĕнеке вулама юратнине пĕлекен хĕрсем ăна хавассăн кĕтсе илчĕç. Уйрăмах Серафима Галкина хыпăнса ӳкрĕ. Петя хăйпе пĕрле çĕнĕ журнал илсе килнине курсан, хĕрсем ăна пур енчен те сырса илчĕç, интереслĕ калавсене сасăпа вуласа пама ыйтрĕç. «Пирĕн агитпроп», теççĕ хĕрсем ăна шӳтлесе.



Çав вăхăтра вестибюльти телефон хыттăн чăнкăртатса илет те, часах дежурнăй Аня Артемьевăна телефон патне чĕнет. Кунта, общежитирен ниçта тухмасăрах, кирек мĕнле районпа та калаçма пулать иккен. Аня çуралнă ял Шупашкартан инçе мар. Ишлей районĕнчи Митрафанкассине вăл кашни канмалли кунах çитсе килет пулсан та, паян унпа тăван ялĕнчен телефонпа калаçрĕç. Аня ашшĕ—Ефим Васильевич—хĕрне çĕнĕ çул тĕлне хăнана чĕнет.

— Сана йăмăкусем кĕтеççĕ, çĕнĕ çул тума кил вара,—терĕ ашшĕ хăйĕн аслă хĕрне. Йăмăксем кĕтеççĕ пулсан, паллах, çĕнĕ çул валли хула кучченеçĕ илсе хумалла пулать...



— Ман сире ĕçлеме кансĕрлес мар-ха, — хавассăн сăмах хушать те пĕр вăхăт вĕсен ĕçĕсене пăхса тăнă Тоня Семенова, пӳлĕмрен пĕр сассăр тухса çухалать. Вăл хăй те тĕрĕ тĕрлеме ăста, анчах паян унăн çĕнĕ юрă вĕренмелле. Тен, юлташĕсем ăна тахçанах кĕтеççĕ-тĕр?

Часах юнашар пӳлĕмре рояль сасси илтĕнсе каять. Вăл пĕр вăхăт коридорсенче янăраса тăрать, пӳлĕмсенчи хĕрсен кăмăлне çĕклентерет, хăй патне илĕртет. Вара, хăватлă аккорд хыççăн, çинçе те янăравлă, чĕререн шăранса тухакан сасă юхма пуçлать. Унччен те пулмасть, Тоньăпа пĕрле ытти хĕрсем те юрра харăс хутшăнаççĕ.

Ох, недаром славится
Русская красавица...—

пĕтĕм çурчĕпе янăрать хаваслă юрă. Ку юрăра хĕр мăнаçлăхĕ, ĕçченлĕхĕ сисĕнет.

Çĕнĕ çуртра пĕр юрă хыççăн тепри шăранать, çак юрăсенче телейлĕ совет çамрăкĕсен савăнăçĕ янăрать.



П. Матюхин
фотоӳкерчĕкĕсем.



# ПУÇЛАМĂШĔ

*Вырăссен пĕррремĕш революцийĕ пулнăранпа 50 çул çитнĕ май*

Вырăссен пĕрремĕш революцийĕ (1905—1907) пулса иртнĕренпе кăçал аллă çул çитрĕ. Çакна пĕтĕм совет халăхĕ паллă тăвать: пĕрремĕш революцире хăй мĕншĕн кĕрешнине, вăл кĕрешӳ халăха мĕн панине пăхса тухать.

Çак революци халăх революцийĕ пулнă. Унăн пуçламăшĕ — 1905 çулти январĕн 9(22)-мĕшĕнче Петербургра пулса иртнĕ событисем.

Ку событисем пуçланиччен Петербургри заводсенчен пĕринче — Путилов заводĕнче (халĕ ăна Кировски завод теççĕ) тăвата рабочие ĕçрен кăларса янă. Çак хыпар часах пĕтĕм завода сарăлнă. Унтан вăл ытти фабрикăсемпе заводри рабочисем патне те çитнĕ.

1905 çулти январĕн 3(16)-мĕшĕнче Путилов заводĕнчи рабочисем, тăвата рабочи хутне кĕрсе, стачка пуçланă. Стачка хăвăрт ӳссе, вăйланса кайнă. Ытти заводсенчи рабочисем те, ĕçлеме пăрахса, стачка хутшăннă. Çапла вара путиловецсем пуçланă стачка пĕтĕм рабочисен стачки пулса тăнă.

Патша правительстви çак юхăма çиййĕнчех, пуçламăшĕнчех, путарса лартма шутланă. Рабочисене революцилле кĕрешӳрен пăрса ярас тесе, Гапон пуп провокацилле план шутласа кăларнă. Петербургри рабочисен ячĕпе петици (ыйту) çырма сĕннĕ. Çав петицие вара рабочисем, пĕрле пухăнса, патшана кайса памалла пулнă.

Январĕн 9(22)-мĕшĕнче, вырсарникун, ирхине ирех, Петербургри рабочисем урама тухнă та, ялавсем, иконăсем, патша портречĕсем çĕклесе, Зимний двореца патшана петици пама кайнă. Хула урамĕсенче 140 пин çын ытла пухăннă.

Петицире çакăн пек çырнă: «Эпир, Петербургри рабочисем, пирĕн арăмсем, ачасем тата пирĕн ватă, пулăшусăр атте-аннесем, сан патна, государь, чăнлăхпа хӳтлĕх шырама килтĕмĕр. Эпир мĕскĕне тухса кайрăмăр, пире пусмăрлаççĕ, пирĕн çине чăтма çук йывăр ĕç тиеççĕ, пиртен мăшкăллаççĕ, пире çын вырăнне те хумаççĕ... Эпир ĕнтĕ чăтса та пăхрăмăр, анчах пире чухăнлăхпа правасăрлăх тата тĕттĕмлĕх авăрне тарăнрах та тарăнрах путарса пыраççĕ, пире деспотизм, пусмăрлăх пăвать... Чăтăмлăх вĕçне çитрĕ. Пирĕншĕн хăрушă вăхăт çитрĕ, чăтма çук йывăр асапсене тӳссе пурăниччен вилни лайăхрах...»,—тенĕ.

Петицире халăх требованийĕсем те пулнă: амнисти, обществăлла ирĕклĕхсем, виçеллĕ те тивĕçлĕ ĕç укçи, çĕре майĕпен халăх аллине парасси, пурне те тивĕç тата пĕр тан суйлав прави тăрăх учредительнăй собрани пухасси.

«Патшамăр! — тенĕ петици вĕçĕнче. — Хăвăн халăхна пулăшма хирĕç ан пул. Хупа хăвăн халăхăр хушшинчи хӳмене çĕмĕрсе тăк! Эпир ыйтнисене туса пама хуш та тупа ту, Эсĕ вара Российăна телейлĕ тăвăн. Çавна тумасан эпир çакăнтах вилме хатĕр. Пирĕн икĕ çул кăна: ирĕклĕхпе телей е вилĕм».

Патша хăй патне пыракан рабочисене сиввĕн кĕтсе илнĕ. Вăл, малтанах рабочисен революцилле кĕрешĕвне путарма хатĕрленнĕскер, петици пама пынă рабочисене пульăпа та штыкпа ответленĕ. Патша çарĕсем мирлĕн пыракан рабочисене Зимний двореца кĕртмен. Çавăн чухне вĕсем пĕр пин ытла рабочи персе вĕлернĕ, икĕ пин çын ытла амантнă. Вĕсен шутĕнче ватă стариксемпе ачасем те пулнă. Большевиксем çавăнтах, рабочисен юнĕпе тулнă урамсенчех, рабочисене çак тискер ĕçшĕн кам айăплине каласа панă, патша йĕркине хирĕç, пусмăрçăсене хирĕç урăхла кĕрешме кирлине ăнлантарнă.

Январĕн 9(22)-мĕшне халăх «юнлă вырсарникун» тенĕ. Çак кун патша рабочисене улталанă. Анчах вĕсем, январьти событисене пула, политикăлла ăнланулăх илме тата революцилле кĕрешме вăраннă.

Шăпах çакăнта пулнă ĕнтĕ 1905 çулти январĕн 9(22)-мĕшĕнчи событисен историлле пĕлтерĕшĕ. «Юнлă вырсарникунччен» рабочисем патшана ĕненнĕ. Халĕ вĕсем ăна ĕненме пăрахнă: патша правительстви рабочисен ĕненĕвне хăех пĕтерсе хунă.

«Пирĕн патша çук»,—тенĕ тарăхса çитнĕ рабочисем. Çавăнтах патша портречĕсене çура-çура тăкнă, ура айне пăрахса таптанă. Аллисенчи ялавсене çĕклесе кĕрешĕве кайнă. Большевиксен прокламацийĕсене вуланă. «Алла пăшал тытăр, юлташсем!» — тенĕ большевиксен прокламацийĕсенче.

Петербургри рабочисем чи пуçласа баррикадăсем тунă. Нихçанхинчен те хаяр кĕрешме тытăннă. «Патша пире асăнтарчĕ,—ну, эпир те ăна асăнтарăпăр!» — тенĕ рабочисем. Унта та кунта: «Тĕп пултăр патша йĕрки!» тенĕ сасăсем илтĕннĕ.

Российăра революци пуçланнă.

1905—1907 çулсенчи революцие экономикăпа политика пурнăçĕнчи объективлă условисем çуратнă. Унăн пысăк сăлтавсем пулнă.

XX ĕмĕр пуçламăшĕнче патша Российи «тĕрлĕ йышши чи усал та чи тискер пусмăрăн—капитализмла пусмăрăн та, колонилле пусмăрăн та, çар пусмăрĕн те — вучахĕ пулнă» *(И. Сталин)*. Çакна пула Российăри халăхсем пĕр вăхăтрах патша йĕркин, помещиксен, капиталистсен пусмăрне тӳссе пурăннă.

Капитализм аталаннă май Российăра рабочисен класĕ пулса тăнă. Рабочисене калама çук хытă эксплуатациленĕ. Фабрикăсемпе заводсенче 12—14 сехет хушши ĕçлеттернĕ. Ĕç укçи пĕчĕккĕ пулнă. Çапла пулин те, рабочисен ĕç укçинчен тĕрлĕ штрафсем тытса юлнă. Ĕç укçи панă чухне юриех тĕрĕс мар шутласа, рабочисене улталанă. Вĕсен хутне никам та кĕмен.

Эксплуататорсене хирĕç пĕрлешсе кĕрешни кăна рабочисене çĕнтерӳ патне илсе пыма пултарнă. Пролетарилле парти çеç вĕсене тĕрĕс çулпа пыма, пĕрлешсе кĕрешме пулăшнă. «1905 çулти январĕн 22-мĕшчен, — тет В. И. Ленин,—Российăн революцилле партийĕ пĕчĕк ушкăн çеç пулнă...», «анчах темиçе уйăх хушшинчех картина пачах улшăнчĕ. Çӳршер революцилле социал-демократсем «сасартăк» пиншере çитрĕç, пинсем икĕ-виçĕ миллион пролетарисен çулпуçĕсем пулса тăчĕç».

Российăри хресченсем помещиксен, çĕр улпучĕсен, пусмăрĕнче пурăннă. Вĕсем çĕрсĕр аптранă. Чи лайăх çĕрсем помещиксен аллинче пулнă: 30 пин шултра помещик 70 миллион геçеттин çĕр тытнă, 10 миллион хресченĕн пĕтĕм çĕрĕ те çав помещиксен çĕрĕнчен иртеймен. Хресченсене тĕрлĕ парăмсем, кулачайсем хупланă. Выçлăх çулсем киле-киле çапнă. Чухăн хресченсем выçăллă-тутăллă пурăннă. Ачи-пăчи чир-чĕрпе асапланнă. Пинĕ-пинĕпе вилнĕ.

Пусмăрти пурнăç хресченсене те кĕрешӳ çулĕ çине илсе пынă. Вĕсене никам та пулăшман. Рабочисем кăна хресченсен нушисене ăнланнă, хресченсен хутне кĕнĕ. Хресченсем рабочи класăн пĕртен-пĕр союзникĕ пулнă. Рабочисемпе хресченсем кĕрешĕве пĕрле тухнипе çеç пĕтĕмĕшле тăшмана çĕнтерме пултарнă.

Российăри вырăс мар халăхсем икĕ пусмăр



# ТИВĔÇЛИСЕНЕ СУЙЛАТПĂР

«20 лет Октября» промартельти çамрăк çĕвĕçĕсем халь кăна ĕçрен пушанчĕç. Анчах никам та киле кайма васкамасть-ха. Кĕçех вĕсем патне агитатор килмелле, вăл çĕвĕçĕсене Советсен суйлавĕ çинчен, хамăр республика ӳсĕмĕсемпе район çитĕнĕвĕсем çинчен каласа парать. Промартельте ĕçлекенсем Ишлей вăтам шкул учительницине Ольга Александровна Калининăна хавасланса кĕтеççĕ. Вăл кашнинчех интереслĕ калаçусем ирттерет, ăна çав тери итлес килет.

Ольга Александровна—Ишлейри чи лайăх агитаторсенчен пĕри. Кăçалхи суйлавсем вăхăтĕнче унăн ĕçсем чылай нумайланчĕç. Февралĕн 27-мĕшĕнче РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсемпе вырăнти Советсене суйлаççĕ. Пĕр вăхăтра виçĕ суйлав ирттерни агитаторсене татах та тăрăшса ĕçлеме хавхалантарать. Агитаторăн, депутата суйлама тăратнă кандидатсем çинчен ăнлантарса панипе пĕрлех, республикăри икĕ суйлав хушшинчи çитĕнӳсене, пирĕн Тăван çĕршывăн мухтавлă ывăл-хĕрĕсем тунă çĕнĕ ӳсĕмсене халăха яр уççăн кăтартса памалла. Çавна пулах ĕнтĕ Ольга Александровна суйлавçăсем патне каяс умĕн калаçу ирттерме тĕплĕн хатĕрленет, унăн тетрачĕсенче яланах çĕнĕ хыпарсем нумай тупăнаççĕ.

Ӳ к е р ч ĕ к с е н ч е: Ишлейри чи лайăх агитатор Ольга Александровна Калинина «20 лет Октября» промартельте ĕçлекенсем хушшинче калаçу ирттерет.

В. Зайцевпа Н. Игнатьев художниксен Советсен суйлавĕ тĕлне кăларнă плакачĕ (ç ӳ л т и).

ТАСС фотохроники тата П. Матюхин фотоӳкерчĕкĕсем.



# Н. К. ДМИТРИЕВА АСĂНСА



1954 çулхи декабрĕн 22-мĕшĕнче Мускавра кĕтмен çĕртен хальхи вăхăтри чи паллă тюркологсенчен пĕри Николай Константинович Дмитриев вилсе кайнă. Вăл нумай пĕлекен профессорччĕ. Пысăк ĕçсем туса пынăшăн ăна СССР Наукăсен академийĕн член-корреспондентне, РСФСР Педагогика наукисен академийĕн действительнăй членне суйланă.

Н. К. Дмитриев 1898 çулта вырăс çемйинче çуралнă. Вăл хăйĕн пурнăçне пушкăрт, тутар, тĕрĕк, туркмен, чăваш, азербайджан, гагауз, кумык, хакас тата ытти тюрк чĕлхисене тĕпчес ĕçе халалланă. Тюрк чĕлхисенчи кирлĕ ыйтусене, сăмахран, пăхăнуллă предложенисене, сăмахăн грамматикăлла аталанăвне, пулăшу ячĕсене, паллăлăх тата паллăмарлăх категорине тата ытти чылай ыйтусене тĕпчесе, уççăн татса панă. Тюрк чĕлхисене пĕлнисĕр пуçне, вăл нимĕç, француз, акăлчан чĕлхисене тата латин, араб, перс чĕлхисене те аван пĕлнĕ, чылайăшне вулама, çырма, калаçма та пултарнă. Çакăн пек нумай чĕлхене лайăх пĕлни Н. К. Дмитриев профессора хăйĕн наука ĕçĕнче чылай пулăшнă, чĕлхесене пĕрпĕринпе танлаштарса тĕпчеме май панă. Вăл çырнă ĕçсем ытти чĕлхеçĕсемшĕн пример пулса тăраççĕ; сăмахран: «Тĕрĕк чĕлхин стройĕ», «Тĕрĕк чĕлхинчи пулăшу ячĕсем», «Гагауз этюдĕсем», «Кумык чĕлхин грамматики», «Пушкăрт чĕлхин грамматики», «Вырăс тата тăван чĕлхесене тутар шкулĕнче вĕрентмелли методика очеркĕсем» (В. М. Чистяков тата Н. З. Бакеевăпа пĕрле çырнă), «Хакас чĕлхине тата унăн диалекчĕсене тĕпчес ыйтусем» (Ф. Г. Исхаковпа пĕрле çырнă) тата ыттисем те. Н. К. Дмитриев профессор чылай пысăк словарьсем редакцилесе кăларнă: вырăсла-пушкăртла словарь, вырăсла-чăвашла словарь (1951 ç.). Вырăсла-чăвашла словарьте С. П. Горский профессорпа пĕрле чăваш чĕлхи грамматикин кĕске очеркне пичетлесе кăларчĕ.

Юлашки вăхăтра Языкознани институтĕнчи тюркологсем Н. К. Дмитриев профессор ертсе пынипе тюрк чĕлхисен танлаштаруллă грамматикине çырса пĕтерсе пичете панă, çак чĕлхесен танлаштаруллă-историллĕ словарьне хатĕрлеме пуçланă.

Н. К. Дмитриев профессор наука тĕлĕшĕпе çеç мар, кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе те тимлесе ĕçленĕ. Вăл Мускав университетĕнче тюрк чĕлхисен кафедрине ертсе пынă. Вăл вĕрентнĕ студентсем халĕ чылай республикăсенче паллă çынсем пулса ĕçлеççĕ.

Н. К. Дмитриев профессор çулсерен вуншар аспирантсемпе докторантсен ĕçĕсене ертсе пынă, çамрăксене наука çулĕ çине тăратнă. Вăл пулăшнипе Чăваш республикинчен С. П. Горский филологи наукисен докторĕ ятне, Р. И. Цаплина, А. С. Канюкова тата çак строкасен авторĕ филологи наукисен кандидачĕ ятне, З. П. Эльдарова, С. П. Юшков педагогика наукисен кандидачĕ ятне илме тивĕç пулчĕç.

Чăваш чĕлхи вĕрентĕвĕшĕн пысăк ĕçсем тунине шута илсе, Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ 1953 çулта Н. К. Дмитриева ЧАССР наукăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ ятне пачĕ.

Н. К. Дмитриев профессор ывăнма пĕлмесĕр ĕçлетчĕ. Вăл редакцилесе кăларнă кĕнекесен шучĕ чылай. Унсăр пуçне, кунсеренех ун патне тĕрлĕ республикăсенчен 5—6 çын чĕлхе ыйтăвĕсемпе консультаци илме, канашлама пыратчĕç. Кашнинех вăл кирлĕ кăтартусем парса пулăшатчĕ.

Вăхăтсăр вилĕм хаклă та хисеплĕ Д. К. Дмитриев юлташа пирĕнтен ĕмĕрлĕхе уйăрчĕ. Анчах унăн пархатарлă ĕçне совет тюркологийĕнче ялан хисеплĕ вырăна хурĕç.

**И. ПАВЛОВ,**
*филологи наукисен кандидачĕ.*

# СУЙЛАВÇĂ СĂМАХĔ

**Георгий ОРЛОВ**

Профессор-и, колхозник-и — çавах,
Пурне те пĕр танах эп хисеплетĕп,—
Хĕрарăм-и, арçын-и вăл... Анчах:
— Шанчăкăма тӳрре кăлартăр! — тетĕп.

Хĕвеллĕ çĕрĕм-шывăмшăн ялан
Хавасланса,
ырми-канми ĕçлетĕр.
Нихçан ан чактăр йывăрлăх курсан,—
Ăна çĕнесшĕн паттăррăн кĕрештĕр.

Хастаррăн уттăр Парти çулĕпе,
Ун ялавне,
чысне куç пек упратăр.
Чăн коммунист вăл пултăр
чунĕпе,
Çĕн ӳсĕм хыççăн ӳсĕмшĕн вăл тăтăр.

Чунтан юраттăр, савтăр халăха,
Мухтавлă хулана,
яла та...
Асрах вăл тыттăр манăн сăмаха,
Кăвар чĕреллĕ çыншăн сасăлатăп!

# ҪӐПАЛА ИВАНӖ КАЛАСА ПАНИСЕМ

Леонид АГАКОВ

*Ҫитес кунсенче Чӑвашгосиздатра Леонид Агаковӑн „Кулас килет“ ятлӑ кӗнеки тухать. Унта „Паттӑр салтак Ҫӑпала Иванӗ каласа панисем“ чылай пысӑк вырӑн йышӑнаҫҫӗ.*

*Вулакансем Ҫӑпала Иванне пӗлеҫҫӗ ӗнтӗ. Ун ҫинчен ҫырнӑ калавсем: „Тигр чӗлхи“, „Мыскараллӑ кун“ иртнӗ ҫулсенче пирӗн журналта тухнӑччӗ. Халӗ, ҫӗнӗ кӗнекерен илсе, икӗ калав пичетлетпӗр.*

## МУНЧА

Тепринче тата манпа акӑ мӗнле истори пулса иртрӗ. Пӗр енчен — тарӑхмалла, тепӗр енчен—кулмалла истори, тес пулать. Ҫав вӑхӑтрах тата савӑнмалли те пулчӗ.

Днепр урлӑ каҫсан, эпир Белоруссири пӗр пысӑк ялта чарӑнса тӑтӑмӑр. Октябрь уйӑхӗ пуҫланнӑ пулин те, ҫанталӑк питӗ лайӑхчӗ, пӗрмай хӗвел пӑхать, ҫил-мӗн ҫук... Пӗр хушӑ кунта ытла вӑйлӑ ҫапӑҫусемех пулмарӗҫ те, самаях лӑпкӑн пурӑнтӑмӑр. Анчах пирӗн йӗкӗтсен—разведчиксен — ҫав-ҫавах ерҫӳ ҫукчӗ, вӗсем пӗрмаях заданисене каятчӗҫ те тепӗр чух ик-виҫ кунтан тин таврӑнатчӗҫ.

Пӗррехинче, темлерен, пурте килте пулчӗҫ ҫавсем.

— Паян, атьсемӗр, мунча хутса кӗретпӗр! — терӗ старшина, ирхи апат хыҫҫӑн. — Пӗр анкартинче тӗрӗс-тӗкел мунча тупрӑм эпӗ.

— Ӑшши пама та пулать-и?— ыйтрӗ тахӑшӗ.

— Хуть те антӑхса кайиччен ҫапӑн!

— О! Апла пулсан—тавай, хутас!

— Хутас!..

Разведчиксем вӗсем — ҫав тери туслӑ халӑх. Мӗн те пулин тума шут тытаҫҫӗ пулсан — кар пухӑнаҫҫӗ те ӗҫе часах туса хураҫҫӗ. Халь те ҫавӑн пекех пулчӗ: пӗрисем вутӑ тупса, татса ҫурчӗҫ, теприсем шыв ҫӗклеме тапратрӗҫ, иккӗшӗ вӑрмана милӗк хуҫма кайрӗҫ...

Ман хурансенче кӑнтӑрлахи апат пиҫиччен мунча пулса та ҫитнӗ.

— Эс те кӗретӗн пуль?—ыйтрӗ манран старшина, кухньӑна пырса тухсан. — Ҫапӑнма юрататӑн вӗт-ха?

— Епле пултӑр-ха тата? Паллах, юрататӑп! — терӗм. — Анчах та манӑн чи юлашкинчен каймала пулать пулӗ ӗнтӗ, ма тесен каҫхи апат хатӗрлемелле...

— Юрать,—терӗ вӑл, — ӗлкӗретӗн, ӑшши те, шывӗ те нумай, пурне те ҫитмелле. Таса кӗпе-йӗм хӑваратӑп эп унта сан валли.

— Тавтапуҫ!

Унтан эпӗ пурне те апат ҫитерсе ятӑм, шыв ӑсса пырса хурансене ҫуса тасатрӑм, каҫхи апат пӗҫерме вутӑ хатӗрлерӗм... Вӑхӑт самаях иртрӗ. Кайран вара хамӑн трофейлӑ автомата хулпуҫҫинчен ҫакрӑм та (хӗҫпӑшалсӑр эпир пӗр утӑм та тумастӑмӑр) мунча енелле уттартӑм.

Мунчи хамӑр чарӑнса тӑнӑ килтен чылай инҫетре, ял хӗрринчи пӗр анкарти вӗҫӗнче, ҫурта пек тӳрӗ ӳсекен ҫамрӑк шурӑ хурӑнсем хушшинче ларать-мӗн. Хурӑн ҫулҫисем саралнӑччӗ ӗнтӗ, хӗвел ҫуттинче вӗсем ылтӑн пек йӑлтӑртатаҫҫӗ. Анкарти хыҫӗнчи тӳрем улӑхра пысӑках мар кӗтӳ ҫӳрет. Ҫав улӑх варрипе пӗчӗк кӑна юханшыв лӑпкӑн шӑнкӑртатса выртать, ун леш енче — пӗр ҫур километртра — вӑрман, вӑл та ылтӑн тум тӑхӑннӑ ӗнтӗ, шухӑша кайнӑ пек, ним хускалмасӑр тӑрать. Аҫта кӑна ан пӑх — пур ҫӗрте те чуна ҫав тери йӑпатакан кӗрхи илем...

Мана тӑван кил, хам ҫуралса ӳснӗ ҫӗршыв аса килсе кайрӗ.

— Эх! Хӑҫан таврӑнмалла пулӗ-ши унта?.. Хӑҫан ҫакӑн пек хамӑр мунчара ҫапӑнмалли вӑхӑт ҫитӗ? Нумаях юлмарӗ те-ха ӗнтӗ...

Ҫапла шухӑшласа эпӗ мунчана кӗрсе кайрӑм. Унта никам та ҫук иккен, пурте ҫӑвӑнса тухса кайма ӗлкӗрнӗ.

— Ҫурӑм ҫуса яракан кирлӗччӗ те... Юрӗ-ҫке, мунчи хама ирӗк!— терӗм ӑшӑмра.

Салантӑм та, малтан ҫине-ҫине ӑшши парса, питӗ вӑйлӑ тарларӑм. Мунча вӗри пулнине питӗ шутсӑр юрататӑп ҫав эпӗ, — ку енчен хамӑрӑн асаттене хывнӑ пулмалла. Астӑватӑр та пулӗ, вӑл мунчара ӑшши парса тултарса ҫапӑнма тытӑнсан, никам та тӳссе тӑраймастчӗ вӗт, пурте тухса таратчӗҫ! Эпӗ те ҫавӑн манерлӗрех... Пӗрре ҫапӑнтӑм, иккӗ ҫапӑнтӑм, унтан пахчана тухса пӗр кана курӑк ҫинче пӑсланса выртрӑм... Эх, ырӑ-ҫке! Унтан каялла кӗтӗм те тапратрӑм ҫӑвӑнма... Шывӗ нумай, вӗри... Пуҫа ик-виҫӗ хут ҫурӑм, унтан пӗтӗм шӑмма-шакка кӑпӑкласа лартрӑм — ниҫта пӗр ӳт татки курӑнмасть, мамӑк кӗрӗк тӑхӑннӑ пек!.. Фронтра кун пек мунчасем ытла час-час тӗл пулмаҫҫӗ-ҫке, пӗрре май килнӗ чух—ырӑ курас...

Анчах ҫав вӑхӑтра маншӑн пачах кӗтмен япала сиксе тухрӗ: мунча тулашӗнче тӑрук кӗрс-кӗрс! кӗмсӗрт! турӗ те, мунча чӳречи чанкӑр-р! вӑркӑнса тухса кайрӗ...

Мӗн шуйттанӗ? Мӗне пӗлтерет ку? Ниҫта та ним те ҫукчӗ-ҫке?

— Кӗрс! кӗрс! шӑтӑр-шарт!— турӗ каллех. Мунча сивчир тытнӑ пек чӗтресе илчӗ, маччаран ман тап-таса пуҫ ҫине шӑпӑр! тӑпра тӑкӑнчӗ...

Ак сана мунча! Вӗри мунча вырӑнне тип мунча!

Пӗрех сиксе тухрӑм тулалла...

Хӑлхана самолет сасси кӗрсе кайрӗ:

— Аррр... ӑррр...

Пӑхатӑп—сывлӑшра, шӑп ман пуҫ тӑрӗнче, нимӗҫсен «хейншелӗ», хайхи «турчка» текенни, вӗҫе парать! Ху-уллеи вӗҫет, пӗр вырӑнта тӑнӑ пекех...

— Кӗрс! кӗрс!

Шуйттан пуҫӗ, ҫӗр ҫинче никамӑ сиен тумалли тупайманнипе, улӑхра ҫӳрекен пӗчӗк кӗтӳ ҫине гранатӑсем ывӑтать иккен. Тупнӑ вӗт «объект»! Пирӗн выльӑхсене те пулин вӗлерсе хӑварасшӑн, ҫӑхан! Анран тухса кайнӑ мӗскӗн ӗнесемпе пӑрусем ниҫта кайса кӗме пӗлмеҫҫӗ, тискерле мӗкӗрсе, унталла та кунталла ыткӑнаҫҫӗ, виҫҫӗшӗ-тӑваттӑшӗ вилнӗ е аманнӑ пулмалла, улӑх варринче выртаҫҫӗ.

Ы-ых, ҫилӗ килсе кайрӗ манӑн! Чышкӑсем хӑйсемех чӑмӑртанчӗҫ, шӑлсем шӑтӑртатса илчӗҫ... анчах мӗн тӑвӑн-ха ӑна? Нимӗн те тӑваймастӑн! Тӑратӑп ухмах пек пӑхса... Хам ҫаппа-ҫарамас, ӳт ҫинчи супӑнь кӑпӑкӗ типсе хытса ларма пуҫларӗ, тата ытла пит ӑшах та мар, тес пулать. Анчах мунчана кӗме шикленетӗп ӗнтӗ—пӑклаттарӗ те пӗрре, патӗнчех кукӑрӑлса выртӑн!

Унччен те пулмарӗ, ҫак «турчка» пулеметран шатӑртаттарчӗ. Темиҫе пуля ман таврашрах ҫӗре тӑрӑнса тусан сирпӗтрӗҫ...

Аяккалла тапса сикрӗм вара, мӗн тӑвас тетӗн? Чип-чипер курса тӑнӑ ҫӗртех вилсе выртни е аманни — кама кирлӗ вӑл? Аҫта та пулин пытанас пулать кунтан! Анчах ӑҫта пытанас-ха? Йӗри-тавра тип-тикӗс, пӗр шӑтӑк-путӑк та ҫук, пӗр лакӑм та! Пульӑсенчен хӑтӑлма пулӗ-ха хуть, анчах та вӑл эсремет каллех гранатӑсем ывӑтма тытӑнсан? Тен, унӑн бомбӑсем те пур, кам пӗлет ӑна...



Хăвăрах чухлатăр ĕнтĕ, манăн шухăшласа тăма вăхăт пулман.. Эпĕ çатан карта урлă яшт! сиксе каçрăм та юханшыв еннелле вăркăнтăм кăна — çат-çат-çат-çат... Хыçалта татах кĕрслетрĕ, татах шатăртатрĕ... Кĕç, малта пăтранчăк шывлă лупашка пуррине асăрхарăм. Те таран вăл, те ăшăх, ăна-кăна шутламарăм, часрах чупса çитрĕм те—лап! выртрăм çаванта... Çулла, шăрăх чух, кунта ăшăпа аптранă кăвакал чĕпписем ырă курнă пулмалла та ĕнтĕ, анчах халь мана та юрарĕ. Лайăхах вырнаçрăм — çывăхрах граната мар, бомба çурăлсан та осколоксем тивес çук мана. Ку та темех тăрать ун пек чух!

Выртатăп ĕнтĕ хашкаса... Хĕрсе кайнаскер, малтан нимĕнех те сисмерĕм, анчах та шывĕ сивĕ иккен. Ал-урана çатăрах чĕпĕтме пуçларĕ. Туятăп — нумаях тÿссе выртаяс çук. Ытларах выртсан—пăсăлма та пулать, мур илесшĕ! Нимĕç тата пĕр-икĕ хутчен печĕ те шăпланчĕ... Хуллен кăна пуçа çĕклесе пăхатăп... «Хейншель» улăх çийĕн тата тепре çавранчĕ те хĕвеланăçнелле çул тытрĕ. Киле каять... Выльăхсене вĕлерсе, амантса пĕтерчĕ те — чиперех, лăпкăнах каять халь! Никам та тивмест ăна, никам та кансĕрлемест! Эх, ирсĕр!..

Эп лупашкаран сиксе тухрăм. Ну, тунмасăрах калас пулать: хам çине пăхма та хăрушăччĕ çав! Тăп-тăр лапра вĕт! Лупашкинче шывран ытларах йăлмака пулнă та... Çав вăхăтра кам та пулин курас пулсан, кулсах вилмелле ĕнтĕ манран. Ну, Çăпала-а, пи-ит лайăх çăвăннă иккен эс мунчара! Тепĕр сысна çури те кун пекех вараланаймасть! — тенĕ пулĕччĕç мана.

Анчах эпĕ хам çинчен шухăшламарăм. Эпĕ «турчка» çинчен куç илеймесĕр тăтăм. Темĕн тĕрлĕ те ылхантăм ăна. Вăл инçетрен инçете кайса пырать, часах куçран та çухалать акă... Епле мăшкăл! Епле тарăхмалла ку!

Чунăм кÿтсе çитнипе лач! сыртăм та каялла, мунча патнелле чупрăм.

— Тепре ăшши парса лайăххах хĕртĕнес те тасалкаласа часрах ротăна таврăнас...

...Нумай та каяймарăм — сулахай енчен самолетсем хыттăн кĕрлени илтĕнчĕ. Пат! чарăнса тăтăм. Камăн-ши кусем? Каллех фашист çăханĕсем-ши?.. Çук иккен, хамăрăн! Хамăрăн! Вăрман хыçĕнчен хĕрлĕ çăлтăрлă икĕ самолет çиçĕм пек вăркăнса тухрĕç те тÿрех хайхи «турчка» çинелле ыткăнчĕç.

Иккĕшĕ ик енчен пырса тапăнчĕç фашиста. Пĕри çÿлерехрен, тепри аяларахран... Тапратрĕç пулеметсенчен çунтарма! Кун пек пуласса кĕтмен тăшман унталла пăрăнма тăчĕ, кунталла — çук, шалиш!

— Аха-а, лекрĕн-и, бандит!—кăшкăрса ятăм эпĕ, çав тери хĕпĕртесе кайса.—Тин вĕçерĕнеймĕн пирĕн алăран!..

Унччен те пулмарĕ, вут хыпса та илчĕ çакна. Малтан çулăм курăнчĕ, унтан хура-кăвак тĕтĕм палкаса тухрĕ... Çав самантрах ун айĕнче шурă чăмăркка курăнчĕ—летчикĕ парашютпа сикрĕ ĕнтĕ...

— Пулчĕ! Капут! — такама илтерме тăрăшнă пекех кăшкăрса ятăм та эпĕ, мунча еннелле тата хытăрах чупрăм...

— Тытатăпах ку çăхана! Чĕрĕллех тытса килетĕп!..

Мунчана кĕнĕ-кĕменех хам тăрăх ик-виç курка шыв ятăм, унтан, васканипе, çара ÿт çинех брюки, пуртенкке чĕркемесĕрех атă тăхăнса ятăм та, автомата çĕклесе, каялла сиксе тухрăм.

Парашютист вăрман çинелле анать... Часах йывăçсем хушшине кĕрсе куçран çухалма та пултарать. Васкас пулать манăн! Эпĕ мĕнле чупнине хăвăрах чухламалла ĕнтĕ. Пĕлместĕп, тен эпĕ нихçан та ун пек чупман пулĕ..

Эпĕ вăрман патне çитеспе парашютист чăнах та курăнми пулчĕ. Анчах куншăн эпĕ пăшăрханмарăм: пĕлетĕп вĕт-ха, парашютран ытла тăруках вĕçерĕнсе пытанма çук. Мана урăххи тарăхтарчĕ: кунта шурлăх пуçланать иккен... урасем путма пуçларĕç! Анчах ним тума та çук, пурпĕрех малалла каймалла, тăшмана тытмаллах манăн. Тĕмеске çинчен тĕмеске çине, тунката çинчен тунката çине сиксе, тепĕр чух чĕркуççисем таранах кĕрсе ларса, вăрмана çитрĕм. Вăрманĕ ытла çăрах мар иккен—чылай инçетри курăнать. Маншăн ку аван пулчĕ-ха...

Вăрмана кĕрсен, пĕр икçĕр метр та чупмарăм пулас — йывăçран çакăннă сенкер парашют курăнса та кайрĕ хайхи. Йывăç çумĕнче çын мĕлки тĕрмешет: ахăртнех, парашют строписсенчен часрах вĕçерĕнме тăрăшать-тăр.

— Сто ой! Ха-альт!..—кăшкăрса ятăм эпĕ.

Фашист, паллах, нимĕн те чĕнмерĕ. Йывăç хыçне пытанчĕ те ман еннелле умлăн-хыçлăн виçĕ хут печĕ. Пĕр пули хампа юнашар йывăçах пырса тиврĕ.

— Чанк! — турĕ те йывăç хуппине вистесе кайрĕ.

«Аха-а, эс капла эппин-ха, парăнма шутламастăн пулать! — терĕм, тата ытларах тарăхса.—Юрĕ апла пулсан!..»

— Шатăрр!—тутартăм автоматран.

Пĕр хушă шăп пулчĕ. Эп малаллах пыратăп: пĕр йывăç хÿттинчен тепĕр йывăç патне.. Унтан нимĕç татах печĕ ман çинелле. Эпĕ те хирĕç петĕм... Вăл перет — эпĕ перетĕп.

— Сдавайсь! Ха-альт!—кăшкăртăм каллех.

Анчах та нимĕç епле пулсан та хăтăлатăпах тенĕ пулмалла. Питĕ хытă тарма тапратрĕ! Йывăçсем хушшинче вĕлт те вĕлт кăна тăвать унăн кĕлетки. Эп — ун хыççăн... Чухласа илтĕм: унăн пистолетĕнче патронсем пĕтнĕ иккен, тин ĕнтĕ мана нимĕнле сиен те тăвайрас çук та,—тарса ÿкесшĕн...

Чылай хăваламалла пулчĕ çакна. Чупатăп-чупатăп та, автоматран çунтарса илетĕп, унтан каллех чупатăп. Патронсем пур-ха манăн, ĕнер кăна диска туп-тулли авăрланăччĕ!

Çав вăхăтра урасем каллех путма тытăнчĕç—татах шурлăх пуçланчĕ. Куратăп—фашист шурлăха чĕркуççи таранах кĕрсе кайрĕ, путасран аллисемпе сывлăшран тытма хăтланнă пекех хăлаçланать. Кĕçех манăн та ун хыççăн кĕрсе кайма тивет. Каллех вараланмалла пулать! Вара тепре чарăнса тăтăм та тарăхнипе лайăх кăна тĕллесе шатăртаттартăм...

Фашист аллисене тăрук çÿлелле çĕклерĕ те, вăраммăн çухăрса ярса, малалла тирĕнсе кайрĕ. Пулчĕ хайхискер!

Тепĕр минутран, шĕвĕ пылчăка сирпĕтсе, ун патне чупса çитрĕм. Хам та ĕнтĕ пĕç ·кăкĕ таранах лапра ăшне путнă.

— Цурюк, эсрелĕ! Цурюк!—автоматпа султăм ун çинелле.

Ман тăшман, этем сăнне çухатмаллах вараланса пĕтнĕскер, ура çине тăма пикенчĕ, анчах çавăнтах ÿкрĕ. Аманнă ĕнтĕ, тăраймасть.

— Мой нога нет... — йынăшса ячĕ хăй.

Уринчен тивнĕ иккен. Утаймасть. Мĕн тăвас-ха кунпа? Тыткăна лекнĕ чĕрĕ тăшмана лачакара пăрахса хăвармастăн ĕнтĕ! «Чĕлхе» вĕт вăл! Епле паха «чĕлхе» тата!..

Нумай шухăшласа тăмасăрах, çухавирен çавăрса тытрăм та çакна, шурлăхран типĕрех çĕре туртса кăларса хутăм.

— Нога...—каллех йынăшса ячĕ вăл.

— Кăгарт, хăш тĕлте?—тетĕп.

Вăл чĕркуççисенчен çÿлерех тĕллесе кăтартрĕ. Ăна икĕ уринчен те лекнĕ пулнă. Ним тума та çук, хăйĕн аялти кĕпине çурсах суранĕсене çыхса ятăм. Анчах та ку нимех те мар-ха. Манăн ăна ротăна илсе çитермелле, унтан штаба ăсатмалла вĕт-ха! Таврара никам та çук... Ирĕксĕрех çак тăптăр лапра пулнă фашиста хамăн йăтса каймалла пулчĕ. Паллах, вăл мана çул çинче кансĕрлесрен эпĕ унăн аллисене каялла çыхса лартрăм. Тăшман мĕн шутланине ăçтан пĕлетĕн! Пычĕ вара ман хулпуççи çинче сысна тушки пек силленсе. Йывăр тата хăй. Юрать-ха, хамăн вăй пур та— аптрамарăм...

Вăрмантан тухнă чух мана хирĕç хамăрăн ротăри йĕкĕтсем чупса çитрĕç. Пирĕн самолетсем «хейншеле» çапса антарнине вĕсем те курнă-мĕн, вĕсем те çак парашютиста тытма васканă пулнă. Анчах вĕсем кăшт каярах юлчĕç, эп маларах ĕлкĕртĕм.

Хамăр йĕкĕтсем мана епле мухтани çинчен каламастăп ĕнтĕ, вăл ахалех паллă. Вĕсем çавăнтах йывăç турачĕсенчен носилкка пекки турĕç те нимĕçе йăтса кайрĕç. Эпĕ вара тепĕр хут мунчана таврăнса питĕ лайăх çăвăнса тухрăм...

## ЧЕЧЕК ÇЫХХИ

Юлашкинчен, хам авланни çинчен каласа парам ĕнтĕ сире. Ман арăма пĕлетĕр-ха вĕт эсир, вăл пĕлтĕр ялхуçалăх институтĕнчен вĕренсе тухрĕ те халь МТС-ра агрономра ĕçлет...

Вăрçă пĕтнĕ хыççăн эпĕ киле часах таврăнаймарăм, виçĕ çула яхăн сверхсрочнăйра пултăм. Командирсем юрататчĕç те мана, шав ÿкĕтлетчĕç:

— Тепрер çула юл ĕнтĕ службăра! Ăçта васкатăн? Килте сана арăму кĕтет-и, ачу-пăчу пур-и?— тетчĕç.

Старшина званине çитерчĕç, офицерсен столовăйĕнче начальник помощникĕ турĕç, ĕç укçи лайăх тÿлесçĕ. Васкамарăм вара, служить турăм та турăм. Пурпĕр мар-им, кирек ăçта ĕçлесен те— çĕршыв валли!

Анчах пĕр-ик çултан анне киле чĕнме пуçларĕ: ватăлатăп ĕнтĕ, кил-çуртăмăр пушă пек туйăнать, санпа пĕрле кайнисем таврăнса арлă-арăмлă, ачаллă-пăчаллă пулчĕç ĕнтĕ, манăн кăна кин те, мăнуксем те çук, тет...

Шел пек туйăнчĕ карчăка. Хăçантанпа пĕччен пурăнать вĕт. Атте 1941 çултах, Мускава хÿтĕленĕ чух, пуçне хунă, аппан хăйĕн çемйи пур, эпĕ те килтен кайни нумай пулать.

Таврăнтăм вара. Çуркунне, çутçанталăк илемлĕ ешĕл тум тăхăнсан, çарансем çинче чечексем çурăлма тытăннă вăхăтра çитрĕм. Ну, паллă ĕнтĕ, анне калама та çук хĕпĕртерĕ, сăра турĕ, тăвансем пыра-пыра кайрĕç, хăйсем патне те чĕнчĕç.

Çапла ик-виç кун иртрĕ те, анне мана авлантарас пирки калаçма тытăнчĕ. Вăхăчĕ çитрĕ ĕнтĕ, çирĕм пиллĕкрен иртрĕн, атту тата ват хусах ячĕ тухĕ, текелет.

Ăна хирĕç тăруках нимĕн те каламарăм. Кулкалатăп çеç:

— Халь те тиркеççĕ пуль ĕнтĕ мана,—тетĕп.

Çак вăхăтра, утта тухиччен, пирĕн тăрăхра «пухăсем» йышлă пулаççĕ: Ишлей пуххи, Ишек пуххи, Мамăш пуххи.. Çуллахи ярмăркăсем ĕнтĕ вĕсем. Хăшпĕр çĕрте вĕсене çимĕк теççĕ пулас.

— Хамăр ялта кăмăла каяканни çук пулсан, пухăсенче лайăхрах пăхса çӳре,—вĕрентет мана анне.

— Лайăхраххине тĕл пулсан, вăрласа килес-и?

— Вăрлама саккун çук-ха вăл, ун пек тăвас мар, анчах паллашсан—кайса калаçма юрамасть-им? Сан пек каччăнах тиркес çук-ха,—тет анне.

Ман хыççăн пĕр эрнерен хамăн ача чухнехи тусăм Христофор таврăнчĕ. Шкулта вĕреннĕ чух эпир ăна «Христофор Колумб» тесе чĕнеттĕмĕр, ма тесессĕн вăл çырмари пĕвере кĕпе çумалли вăлашкасене пухса «флот» тума юрататчĕ. Эпир пĕр çыранра индеецсем пулаттăмăр, унăн «флочĕ» çине ухăсемпе перетттĕмĕр, вăл испанецсен командирĕ пулса пире тапăнатчĕ. Вăрçă вăхăтĕнче çак Христофор флота лекнĕ те—чăнах та Америкăра пулса курнă иккен. Ик-виçĕ кун хушши каласа кăтартрĕ вăл Америка çинчен, хăй сура-сура вăрçать; пуринчен ытла унта негрсене этем вырăнне хуманни тарăхтарнă-мĕн ăна.

Анчах ку—сăмах майĕн кăна-ха. Çак «Колумб» та ман пекех хусахчĕ. Ăна та амăшĕ авлантарасшăнччĕ. Ман аннерен те ытларах хистетчĕ:

— Ĕç çине тухиччен кин тупнă пултăр ман валли! — тет.

Хайхи, тытăнтăмăр çакăнпа пухăсене çӳреме. Ятарласа хĕрсем тупас тесех мар, халăхпа пĕрле пулма, вăл савăннине курма. Ну, хĕрсемпе калаçма та хирĕçех пулман ĕнтĕ: каччăсем вĕт.

Чăн малтан Ишлее кайрăмăр. Христофорăн кунта аппăшĕ пур, почтăра ĕçлет. Юлташ мана ун патне илсе кĕртрĕ. Хăна турĕç пире. Эпир сĕтел хушшинче ларнă чух темле икĕ хĕр пырса кĕчĕç. Пĕри—сап-сарă, пысăк кăвак куçлă, вырăсла тумланнă, теприхурарах сăнлă, куçĕсем хура хурлăхан пек, пĕвĕпе сарринчен лутрарах, ялти пек тумланнă: кĕрен тутăр, шап-шур катан пир кĕпе, симĕс пурçăн саппун, уринче хура туфли. Иккĕшĕ те çав тери кăмăла каймалла хĕрсем...

Пире паллаштарчĕç.

— Тоня,—терĕ сарри, пире алă парса.

— Вера,—пуçĕпе сулса илчĕ хурараххи.

Вĕсене сĕтел хушшине лартрĕç. Эпир ĕнтĕ ку хĕрсемпе сăмахъюмах пуçласа ярасшăнччĕ, анчах Христофор аппăшĕсем патне татах эпир палламан çынсем пырса кĕчĕç те, калаçасси пулмарĕ. Часах эпир ярмăрккăна кайса çаврăнса çӳрес терĕмĕр.

— Атьăр пирĕнпе, — чĕнтĕмĕр хĕрсене.

Вĕсем килĕшрĕç. Урама тухсан, Христофор саррипе юнашар утрĕ, эпĕ — хурараххипе. Христофор тӳрех ыйтса пĕлме тытăнчĕ. Хĕрсем енĕпе моряксем хăюллăрах вĕт-ха.



— Ăçтисем пулатăр эсир, хĕрсем? Пĕлме ирĕк парсамăрччĕ..

— Эп кунтисемех,—терĕ Тоня.

— Ăçта ĕçлетĕр?

— Почтăра, сирĕн аппупа пĕрлех, телефонисткăра ĕçлетĕп.

— Эсир тата?—ыйтрăм эпĕ те Вера тенинчен.

— Çĕньялсем...

— Ĕçлетĕр-и?

— Ĕçлемесĕр кам çăкăр çиет?—темшĕн Вера хăйĕн юлташĕ çине чăрр!.. пăхса илчĕ. Унăн илемлĕ пит-куçĕ çинче вăрттăн кулă палăрчĕ.

— Секрет эппин?

— Ним секречĕ те çук. Колхозра ĕçлетĕп.

— Мĕнле ĕçре? Сирĕн пек çамрăк пикесем ку чухне фермăсенче ĕçлекен...

— Çук, унта мар. Пожарникре ĕçлетĕп. — Вера тутисене тутăр вĕçĕпе хупласа, сасăпах кулса илчĕ. Тӳрех сисрĕм—улталать ку, анчах сисмĕш пултăм.

— Пур йышши пушарсене те сӳнтеретĕр-и вара?—ун куçĕсенчен пăхса ыйтрĕ Христофор.

— Пурне те,—терĕ Вера.

— Қалăпăр, пĕр-пĕр каччăн чĕри çунма тытăнсан, ăна та сӳнтерме пултаратăр-и?

— Ун пеккинех сӳнтерсе курман та, анчах, кирлех пулсан, сӳнтерме пулать те пулĕ.

— Пултармалла пек çав...

Чылай çӳрерĕмĕр çавăн пек калаçкаласа, кăмăллăн кулкаласа. Çав хушăрах хĕрсене пушкăрт майăрĕ илсе çитертĕмĕр, вĕсемпе пĕрле карусель çине ларса çаврăнтăмăр, цирк курса тухрăмăр, унтан тухсан крем-сода ĕçрĕмĕр.

Ун пек чух вăхăт иртни сисĕнмест те вĕт: каç пулма та пуçларĕ.

— Ну, вăхăта лайăх ирттернĕшĕн тавтапуç сире, манăн каяс пулать,—терĕ Вера, аллинчи сехечĕ çине пăхса илсе.—Сывă пулăр...

— Чимĕр-ха, мĕншĕн пит час?

— Ултă сехетре пирĕн колхоз машинĕ каять. Юлсан—çуран утмалла пулать...

— Ан васкăр ĕнтĕ!—хам сисмесĕрех çакна ик аллинчен те ярса тытрăм.—Çӳрер кăштах!

— Çук, çук... Ан та ӳкĕтлĕр...—Ман çине çав тери ăшшăн пăхса, пуçне пăркаласа илчĕ хĕр.

— Эппин, хăçан курăп-ха эп сире?—Чĕрем сикме тытăннине туйса ыйтрăм эпĕ.—Çитес вырсарникун Мамăш пуххине пымастăр-и?

— Пĕлместĕп... Тен, пыратăп та-и...

— Эппин, тĕл пулатпăр? Тупатăп эп сана!

— Халăх нумай пулать те унта, ăçтан шыраса тупăн?

— Эс карусель патне пыр!

— Каруселĕ пулмасан?

— Епле пулмасть? Пулать!

— Ну, сыв пулăр...—Вăл мана юлашки хут куçĕсемпе çунтарса илчĕ те, татах сехечĕ çине пăхса илсе, халăх хушшине кĕрсе çухалчĕ.

— Тарчĕ пулать? — кулса илчĕ Тоньăна хулĕнчен тытса тăракан Христофор.—Эх, эсĕ те çав... кавалер! Хам пулсан — ниепле те вĕçертессĕм çук...

— Ничего,—терĕм эпĕ,—тен, вĕçерĕнеймĕ-ха!

Сисетĕр пуль ĕнтĕ, çак хура хĕр ман чĕрене хытах хускатрĕ. Киле таврăннă чух та куç умĕнчех тăчĕ вăл, çĕрле тĕлĕкре те куранчĕ, ир тăрсан та тӳрех ăна аса илтĕм. Хам унăн ятне кăна пĕлетĕп те-ха ĕнтĕ... Паллах, пожарник пирки юри каларĕ вăл. Хĕрсен йăли çавăн пек вĕт — хăйсем çинчен ытла тăруках каласа памаççĕ... Анчах, тепĕр тесен, вăл ăçта тата кам пулса ĕçлени пурпĕр мар-и? Çынни лайăх пултăр! Ытти — тарăм.

Эрнипех шухăшласа пурăнтăм çак Вера çинчен. Хăçан çитĕ-ши ку вырсарникун! Тӳсме çук курас килет вĕт... Христофора кун çинчен тĕрĕссипех, ним пытармасăрах каласа патăм. Анчах вăл кулчĕ çеç:

— Швартоватьˡ туса лартрĕ эппин сан чĕрӳне! Полундра[2], старшина!..

— Ан кул, санăн хăвăн та ĕçсем çавăн пекрех-ха,—терĕм ăна хирĕç.—Çак эрне хушшинче Ишлее мĕншĕн виçĕ хут кайса килнине лайăх чухлатпăр!

— Аппа патне кайрăм...—каллех кулчĕ вăл.

— Асту, аппу патне пулмасăр!

Вырсарникун ирех тухса кайрăмăр Мамăша. Эпир çитнĕ чух ярмăркка тин çеç пухăнма пуçланăччĕ-ха. Тӳрех карусель патне пырса тăтăмăр. Никамах та çук...

— Улталанă сана хура куç,—йĕкĕлтесе илчĕ Христофор.

— Пулма пултараймасть!—тетĕп.

— Пултарать çав; пĕлетĕн-и, вырăссен çавăн пек такмак пур: не влюбляйся в черный глаз, черный глаз—обманчив...

Чăнах, мана хама та Вера улталанă пек туйăнма пуçларĕ. Вуникĕ сехет иртрĕ, пĕрре... Темиçе хут та çаврăнса пытăмăр карусель патне — ман хура куç курăнмарĕ. Çиллĕм те киле пуçларĕ: мĕнле тивĕçпе кун пек турĕ вăл? Мана, гварди старшинине, хăйĕнпе çав тери ыра кăмăлпа калаçнă çынна...

Çӳресен-çӳресен, Христофорпа иксĕмĕр хайхи çĕре тепĕр хут çаврăнса пытăмăр та, карусель тавра тăракан çамрăксем хушшинче сасартăк Вера майлăрах хĕре асăрхарăм: çавăн пекех çаврака питлĕ, хуп-хура куçлă... Анчах ку... чăвашла мар, вырăсла тумланнăччĕ. Чечеклĕ крепдешин платьепе, çӳçĕсене ĕнсе таран кастарнă та кăтралатнă, аллинче пĕчĕкçеç ридикюль... Шăтарас пек пăхатăп. Вăл-ши, вăл мар-ши? Хĕр те ман çине темиçе хутчен пăхса кула-кула илчĕ. Кулли çавăнах! Вера ку! Ак сана... пожарник!

Вара çынсене сиркелесех ун патне пырса тăтăм та хăюллăнах алă патăм:

— Ырă кун пултăр!

Ман хыççăн Христофор та çитсе сывлăх сунчĕ ăна.

— Тупрăмăр хайхи таркăна! Ăçта çухалса пурăнтăр паян?—терĕ унтан.

1 Моряксен чĕлхипе — кăкарса лартрĕ, тени пулать.
2 Сыхлан!

— Нимӗнле таркӑн та мар,— кулса илчӗ Вера, — ҫухалса та ҫӳремен. Сире эпӗ паҫӑрах куртӑм... Хӑвӑр палламастӑр та, эп айӑплӑ-им унӑн?

— Артистка пулмалла эсир, мӗн тери улшӑнма пултаратӑр!

— Урӑх тум тӑхӑнни — улшӑнни пулать-и?

Христофор, мана шелленӗ пек, ассӑн сывласа ячӗ:

— Эх, Ваня, Ваня! Хӑвна ху разведчик, тетӗн, анчах пӗрре курнӑ хӗре паллаймастӑн!..

Унтан вӑл, нумай та тӑмарӗ, таҫта пӑрӑнса ҫухалчӗ. Пире кансӗрлес мар, терӗ пулмалла ӗнтӗ. Паллах, тӗрӗс турӗ, ун пек чух— виҫҫӗмӗш ытлашши, теҫҫӗ...

Каҫченех ҫӳрерӗмӗр вара Верӑпа. Питӗ уҫӑмлӑ хӗр пек туйӑнчӗ вӑл мана. Эп ун ҫинчен ытларах та ытларах ыйтса пӗлме тӑрӑшрӑм, хам пирки те чылай каласа патӑм. Пӗр-пӗринпе сывӑхрах паллашас пулать-ҫке! Анчах хӑй ҫинчен вӑл ытлашши нимех те каламарӗ ҫав. Хӗрсем вӗсем именекен халӑх...

Хальхинче эпӗ ӑна машинӑпа ямарӑм, хӑйсен ялне ҫитиех хам ӑсатрӑм. Ешӗл вӑрман витӗр тухрӑмӑр эпир, чечеклӗ улӑхсем тӑрӑх, тинӗс пек хумханакан хирсем урлӑ утрӑмӑр... Ман чӗрем тулнӑҫемӗн тулса пычӗ. Юратса пӑрахрӑм эпӗ ку хӗре, фронтра пӗрре Сахвине ятлӑ тутар хӗрне юратнӑ пекех хӗрӳллӗн юратрӑм...

Ял хыҫне ҫитсен, вӑл чарӑнса тӑчӗ:

— Урӑх ан пыр... Аван мар...

Вӑл ман алла тытса чӑмӑртарӗ. Ку вара мана кӑварпа пӗрех пулчӗ.

— Вера!..

— Мӗн?—кусран ҫав тери йӑвашшӑн пӑхрӗ хӗр.

— Эпӗ... Эпӗ ыранах сирӗн пата пыратӑп!

— Мӗн тума?

— Аҫу-аннӳпе калаҫма! Ӑнлан эс мана...

— Ҫук, Ваня, ун пек пулма пултараймасть.

— Мӗншӗн? Неушлӗ эс мана ним чухлӗ те килӗштерместӗн?

— Ыран ирех эпӗ Шупашкара тухса каятӑп...

— Мӗн тума?

— Эп Шупашкарта ӗҫлетӗп вӗт. Отпуск пӗтрӗ манӑн.

— Ӑҫта ӗҫлетӗн?—тӗлӗнсех кайрӑм эпӗ.

— Ун ҫинчен сана пӗлмех те кирлӗ мар.

— Мӗншӗн апла?

— Ахалех.

Пӗр хушӑ эпӗ ним калайми пулса тӑтӑм. Чӗре пӑчӑртанса илчӗ: эппин, ку хӗр ман валли мар, хулара унӑн урӑххи те пулма пултарать!..

— Анчах сана Шупашкара пырса курма пулать-и?—ыйтрӑм чылайран тин.

— Ма юрамасть пуль? Уркенмесен — пыр: Белинского, 22. Яланах хавас пулӑп сана кӗтсе илме...

— Ҫак кунсенчех пыратӑп! Мӗншӗн тесен малашне эпӗ сансӑр...

— Юрӗ, пыр... Анчах халь кай. Ҫынсем курсан — аван мар. Сывӑ пул!

Вӑл ман алла икӗ аллипех тытса чӑмӑртарӗ те пахчаналла вӑшт кӑна кӗрсе кайрӗ. Эп чылайччен такам тухатнӑ пек пулса тӑтӑм...

— Белинского, 22, 22...—пӑшӑлтатса илтӗм те унтан хамӑр ял еннелле тӳрӗрен тӳрӗ утрӑм. Хамӑн ҫав тери юрлас килчӗ...

Хӑвӑрах чухлама тивӗҫ, халь ӗнтӗ эпӗ кунӗн-ҫӗрӗн Вера ҫинчен шухӑшласа, ӑна хам майлӑ ҫавӑрас ӗмӗтпе ҫеҫ пурӑнтӑм. Тепӗр шӑматкун, вырсарние хирӗҫ, каҫ пуласпа, Шупашкара персе те ҫитрӗм. Ыран — канмалли кун, калаҫмалӑх вӑхӑт пулать...

Автобус ҫинчен ансанах, Хӗрлӗ площадь варринче постра тӑракан яштака милиционер патне пытӑм та Белинский урамне мӗнле тупмалли ҫинчен ыйтрӑм.

Вӑл мана честь парсах ӑнлантарчӗ:

— Ҫапла хӑпармалла та ҫавӑнталла пӑрӑнмалла...

— Тавтапуҫ! — тесе, хам та честь патӑм.

Анчах эпӗ темиҫе утӑм тусан, вӑл мана каялла чӗнсе илчӗ:

— Хӑш ҫурт кирлӗ сире?

— 22.

— Пӗлетӗп вӑл ҫурта. Кама курасшӑн унта эсир?

— Хамӑр ялсене, — терӗм те уттара патӑм. Анчах хам ӑшӑмра: «Верӑна паллакансквер мар-ши ку? Каччи аптрамасть пек...»—тесе шухӑшларӑм. Анчах кӗвӗҫес-тӑвас кӑмӑл пулмарӗ.

Ҫитрӗм ҫитес ҫӗре. Крыльца ҫине хӑпарса шаккарӑм. Мана хирӗҫ шап-шурӑ ҫӳҫлӗ, питӗ кӑмӑллӑ карчӑк тухса тӑчӗ.

— Вера Петрова сирӗн патӑрта пурӑнать-и, асанне?

— Пирӗн патра та-ха, ҫук-ха вӑл, ывӑлӑм. Вуниккӗччен дежурствӑра пулать.

— Дежурствӑран тӳрех киле килет-и?

— Ӑҫта кайтӑр ӗнтӗ тата?

Ӑнмарӗ ман ӗҫ. Ну, юрӗ эппин, текелесе, крыльца ҫинчен хуллен кӑна каялла антӑм.

— Ыран ирпе килӗр эппин!—терӗ карчӑк.

— Тавтапуҫ.

— Кам килчӗ тесе калас Верӑна?

— Хӑвӑр ялсем, те...

Каҫ пулса килме пуҫларӗ. Темӗн пысӑкӑш хӗрлӗ ҫатма пек хӗвел йӑлӑмри вӑрман хыҫнелле анать. Заводсен трубисенчен тухакан тӗтӗм те ун ҫуттинче ҫутӑкӗрен тӗслӗн курӑнать. Унта-кунта электричество хунарӗсем ҫутӑлчӗҫ...

Эпӗ, Хӗрлӗ площаде анса, Атӑл хӗрринелле утрӑм. Тротуарсем ҫинче лӑк тулли халӑх — ӗҫ хыҫҫӑн уҫӑлма тухнӑ ӗнтӗ. Ҫамрӑк мӑшӑрсем питӗ нумай, ман пек салтак пулнисем те хӗрсене ҫавӑтнӑ шӑкӑл-шӑкӑл калаҫса пыраҫҫӗ. Эп кӑна пӗччен...

Атӑл ҫине тухрӑм — унта та халӑх тем чухлех, анчах эп палланӑ пӗр ҫын та ҫук. Кичем пулма пуҫларӗ мана. Аптранӑ енне, кино кӗрсе курас терӗм. Унтан пӗр вунӑ сехет тӗлӗнче тухрӑм та сада кайса лартӑм—музыка итлес кӑмӑл пулчӗ. Анчах хамӑн шухӑш — Вуниккӗ тӗлне вӗсен крыльци ҫине кайса ларатӑп... Мӗнле тӗл пулӑпӑр-ши, мӗн калӗ вӑл мана?..

Чӗре хытӑран хытӑ тапать хамӑн...

Вунпӗр сехет иртсен, садра халӑх сахалланчӗ. Унта-кунта, йывӑҫ тӗмӗсем айӗнчи саксем ҫинче, кӑвакарчӑнсем пек мӑкӑртатакан мӑшӑрсем ҫеҫ юлчӗҫ.

— Каяс ӗнтӗ,—терӗм те тӑрса утрӑм...

Кукӑр аллея мана чечексем патне илсе тухрӗ. Пысӑк, илемлӗ клумба. Электричество ҫуттинче хӗрлӗ, кӑвак, сенкер чечексем тӗлӗрсе ларҫҫӗ. Таҫтан шухӑш пырса кӗчӗ мана:

— Вера валли лайӑх кӑна букет туса каяс! Ӑна чечек ҫыххипе кӗтсе илес... Питӗ лайӑх пулать вӗт!..

Пӗлетӗп-ха ӗнтӗ кун пек ҫӗрте чечексем татма юраманнине, анчах... мӗн тӑвас тетӗн? Юрату вӗт! Ҫав шар кӑтартать ҫынна час-часах!

Унталла-кунталла пӑхса илтӗм те, хӳтӗрех вырӑна кукленсе ларса, ҫӑтӑр-ҫатӑр, ҫӑтӑр-ҫатӑр татма тытӑнтӑм... Сылтӑм алӑпа тататӑп, сулахай алла пухатӑп... Хитре букет пулать! Анчах...

— Мӗн тӑватӑр эсир, гражданин?—терӗ хыҫалта хулӑм сас.

Эп вӑшт кӑна сиксе тӑтӑм та букета ҫурӑм хыҫне тытрӑм. Ман умра милиционер тӑра парать.

— Мӗн тӑватӑр, тетӗп!

— Нимӗн те тумастӑп-ҫке...

— Ҫурӑм хыҫне мӗн пытартӑр?

— Нимӗн те мар...

— Чечек татрӑр эсир! Тӳлӗр 15 тенкӗ штраф!

— Мӗншӗн?—тӗлӗннӗ пек пултӑм эпӗ.—Ҫак курӑкшӑн 15 тенкӗ-и? Чипер калаҫӑр...

— А эсир чипер хӑтланӑр!—сассине хытарчӗ милиционер. Тӳлеместӗр? Апла пулсан, атьӑр отделение.

— Тӳлеместӗп те, отделение те пымастӑп,—татса хутӑм эпӗ. Манӑн, айванӑн, укҫа кӑлармалла та тыттармалла пулнӑ, ӗҫӗ те пӗтетчӗ, анчах... характер вӗт! Салтак вӗт, гвардеец! Кайран хама хам тем тери вӑрҫрӑм уншӑн...

Милиционер пӗррех шӑхӑртрӗ.

— Кайрӑмӑр! Утӑр малтан! Чечекӗсене пӑрахса хӑварма ан шутлӑр тата!—асӑрхаттарчӗ вӑл мана.

Мӗн тӑвас тетӗн? Власть представительне хирӗҫ каятӑн-им? Утрӑмӑр. Эп — малта, ман алӑра чечек ҫыххи, вӑл — ман хыҫран. Каялла ҫаврӑнса пӑхма та хушмасть, чӑн-чӑн преступнике илсе пынӑ пекех илсе пырать...

Ҫитрӗмӗр отделение. Кӗрсенех, алӑк патӗнче, ҫамрӑк кӑна кӗҫӗн лейтенант темскер вуласа ларать. Мана илсе килекенни ун умне тӑчӗ те хӑвӑрт кӑна рапортларӗ:

— Паллӑ мар гражданин общество йӗркине пӑсрӗ... Садра чечексем татрӗ!

— Докуменчӗсем пур-и?

— Тӗрӗслемен. Вӑл штраф тӳлесшӗн пулмарӗ.

— Гражданин, паспорт кӑтартӑр!—терӗ дежурнӑй.

Эп маларах, ҫутӑ ҫӗререх тухрӑм та, ман чӗлхе ҫӑвар маччи ҫумне ҫыпӑҫса ларчӗ... Дежурнӑй кӗҫӗн лейтенант — манӑн савнӑ Вера иккен! Вера! Ҫӗр ҫӑттӑр! Пулать вӗт тӗнчере...

Паспорта кӑларса тыттартӑм. Хамӑн пӗтӗм пит-куҫ вутпах ҫунать, хӑлхасем те пӗҫерсе кайрӗҫ. Паллать те акӑ, мӗн тери намӑс пулать мана!..

— Паспорчӗ тӗрӗсех,—терӗ те Вера, ман ҫине куҫхаршисем айӗн пӑхса чутах кулса яратчӗ, темле тытӑнса тӑчӗ кӑна.—Анчах штрафне илӗр.

Мана илсе килекенни хӑйӗн сумкинче квитанци кӗнекине шырама пӗшкӗнчӗ, ҫав вӑхӑтра эпӗ, пӗр-ик утӑм малалла ярса пусса:

— Вера, эп сан валли вӗт...—терӗм шӑппӑн.

Вӑл мана пӳрнипе юнаса илчӗ:

— Вуниккӗччен кӗт!

Урӑх нимӗн те каламарӗ. Ну, паллах ӗнтӗ, штрафне тӳлерӗм эпӗ, квитанци пачӗҫ мана..

— Кайма пултаратӑр,—терӗ хама илсе килекенни. Эп алӑк патне ҫитсен:—Букетне илсе кайӑр. 15 тенкӗ тӑрать вӗт, пӑрахма шел,—тесе кулса илчӗ.

Эп урама тухрӑм. Хам йӗп-йӗпе тарланӑ иккен... Ҫӳрерӗм вара вуниккӗччен калле-малле, алӑри чечексен ырӑ шӑршипе киленсе. Унтан Вера та тухрӗ. Питӗ шутсӑр хытӑ кулчӗ манран...

Майӗпе Атӑл хӗррине тухрӑмӑр, кӑвак ҫутӑ киличченех шӑкӑл-шӑкӑл калаҫса ҫӳрерӗмӗр. Юлашкинчен сӑмах пине ҫитрӗ пулмалла, сак ҫине лартӑмӑр та пӗр хушӑ нимӗн те чӗнмерӗмӗр...

Эп ӑна пӗрремӗш хут питҫӑмартинчен чуптуса илтӗм.

— Каллех штраф тӑвасран хӑрамастӑн-и? — хуллен ыйтрӗ вӑл, пуҫне ман кӑкӑр ҫине хурса.

— Ҫук, хӑрамастӑп, хуть те вунӑ квитанци ҫыр, ҫирӗм, вӑтӑрӑшне ҫыр,—терӗм те эпӗ тутинченех чуптурӑм.

... Ҫав ирхине вара пирӗн чӗресем ӗмӗрлӗхех пӗрлешрӗҫ.

# ЛИТЕРАТУРĂРИ ÇĔНĔ ЎСĔМСЕМШĔН

*(Совет писателĕсен Пĕтĕм Союзри иккĕмĕш съездĕнче А. Талвир писатель каланă сăмах)*

Нумаях пулмасть пирĕн пата, Шупашкара, РСФСР Культура министерствин Главиздатĕнчен темĕнле Козлов хушаматлă инспектор килсе кайрĕ. Çитнĕ-çитменех вăл Чăвашсен государство издательствине сатирăллă литература кăларма чарчĕ. Сăмахран, Козлов вырăнти автор Н. Черепанова çырнă юптарусен кĕнекине кăларма хушмарĕ. «Сирĕн издательствăра тухакан кашни кĕнекен Чăваш республикине сăнласа кăтартмалла. Анчах юптарусен кĕнеки ниепле те ун пек кĕнеке пулма пултараймасть», — терĕ Козлов. Эпир çак сборник пахалăхĕ çинчен çине тăрсах калама тытăнсан, Козлов пире хăратма пуçларĕ: «Ку юптарусене эпĕ хампа пĕрле Мускава илсе каятăп. Вара курăпăр унта»,—терĕ вăл.

Мускавра, писательсен Союзĕнче, чăнах та, Н. Черепановăн сборникне пăхса тухрĕç, юптарусене уйрăм кĕнекен кăларма кирли çинчен татăклăн каларĕç. Анчах та, ахăртнех, ку вăл çирĕм çул хушшинче писательсен Союзĕн аппарачĕ пирĕн ыйтăва малтанхи хут çиййĕнчех пăхса тухни тата хăйĕн шухăшне çирĕп татса калани пулчĕ-тăр. Ялан çапла пулса пырать: Президиумпа Секретариатран пысăкрах, кирлĕрех, йывăртарах ыйтусене татса пама ыйтсан, уçăмлă ответ илейместпĕр.

Писательсен Союзĕ Россия Федерацийĕнчи автономилле республикăсен литературисенче ĕçсем мĕнлерех тăнине начар пĕлет. Ку çак съездра итленĕ докладсенчен те лайăх курăнать.

Самед Вургун ĕлĕкхи хĕвелтухăç поэчĕсен творчествинчи романтизм çинчен пит хавхаланса каларĕ. Анчах та докладчиксенчен пĕри те чăваш, адыгей, осетин, пушкăрт, мордва, мари, якут литературисенчи пек литературăсен аталанăвĕнче реализмла принциппсем, Горький принципĕсем çунат сарса, çирĕпленсе пыни çинчен шарламарĕç. Докладчиксем якут писателĕн Н. Мординовăн «Çурхи кунсем» романĕ пирки те пĕр сăмах та каламарĕç.

Мĕне пĕлтерет-ха ку? Тен, эпĕ сăмахсем докладчиксене питех кăмăла каймĕç,—анчах та эпĕ пĕр анекдотла истори çинчен шарламасăр иртсе каясшăн мар. Кунта тĕп герой Главиздат работникĕ мар вара, вăл—пирĕн докладчик Антокольский юлташ.

1950 çулта Мускавра, чăваш литератури эрнинче, çакă палăрчĕ: Пушкинăн «Евгений Онегин» романне, хĕвелтухăçĕнчи ытти чĕлхесем çине куçарнипе танлаштарсан, чăвашла кăна Пушкин виçисене çирĕп тытса куçарнă. Кун пирки Секретариат, Мускавра литераторсен конференцине пухса, «Евгений Онегина» азербайджан, тутар, казах, чăваш тата ытти тюрк чĕлхисем çине мĕнлерех куçарнине пăхса тухма йышăннăччĕ.



Болгари писателĕ Г. Караславов А. Талвире хăйĕн кĕнекине парнелет.

Унтанпа тăватă çул иртрĕ, çапах та конференци ирттерес пирки урăх пĕр сас-хура та пулмарĕ. Антокольский юлташ çакăн çинчен нимĕн те пĕлмест иккен. Çавнашкалах вăл «Евгений Онегин» докладра асăннă республикăсенче кăларичен чăвашла темиçе çул маларах тухни çинчен те илтмен-мĕн.

Тата çакăн пек тĕслĕхех илер. Чăваш литератури классикĕн Константин Ивановăн «Нарспи» поэмине вырăсла темиçе хутчен те куçарса кăларчĕç. Юлашки вăхăтра Б. Иринин куçарнă вариант, А. Жаров куçарнипе танлаштарсан, темиçе хут лайăхрах, анчах унта та чылай кăлтăксем пур. «Нарспи» поэмăна вырăсла чăваш поэчĕ Хусанкай та куçарнă. Пирĕн шутпа, Хусанкай куçарни ыттисенчен авантарах пек, анчах ăна пичетлесе кăларассине издательствăсем темшĕн çултан-çул хăварса пыраççĕ.

Тăлмачăсемпе куçару ĕçĕ çинче те пăртак чарăнса тăрас килет. Француз, Украина, Итали чĕлхисенчен куçарас пулсан, издательство кирек хăçан та çав чĕлхене пĕлекен çынсемпе çыхăну тытма тăрăшать. Анчах чăваш писателĕн кĕнекине куçарас пулсан, вырăсла лайăх пĕлекен çынна çеç шыраççĕ. Подстрочниксем тăрăх якатса куçарни чылай чухне оригинал илемне çителĕклĕ параймасть, çитменнине тата автор тексчĕ те пăсăлать. Çакна каланă май пирĕн республикăри пĕр районта пулса иртнĕ ĕç аса килет. Райцентрти радиокомитет чăвашла тата вырăсла передачăсене параллеллĕ панă пулнă. Пĕрре радиопа темĕнле ытла та кичем статья панă. Статьяна чăвашла вуланă вăхăтра вырăс дикторĕ сывăрах кайнă. Статья вĕçĕнче чăвашла калаçакан диктор: «Тепĕр минутран литература передачине итлĕр», — тесе пĕлтерет. Вырăсла вулакан диктор чăваш дикторĕ тĕртнипе вăранса каять те ыйхă тĕлĕшпе ним шутласа-туса тăмасăрах: «Çакăнпа эпир хамăр передачăсене вĕçлетпĕр»,—тесе пĕлтерет. *(Залра хускалса илеççĕ.)*

Калас пулать, подстрочниксем тăрăх куçарни те хăшпĕр чухне çакăн пек кулăшла пулса тухать.

Хăшпĕр тăлмачсен шухăшĕпе куçару ĕçĕнче пĕр-пĕр халăхăн чĕлхине пĕлни мар, халăхăн шухăш-кăмăлĕпе йăли-йĕркисене пĕлни кирлĕ. Анчах мĕнле-ха чĕлхене пĕлмесĕр халăхăн йăли-йĕркисене, унăн чĕлхери хайне евĕр уйрăмлăхсене вĕренме пулать? Тăлмачă тухатмăш мар-çке вăл!

Президиумпа Правлени уйрăм республикăсенчи куçаракансен пуян опытне çителĕклĕ тишкерсе пĕтĕçтермест, çав паха опыта шута илсех каймасть. Чăваш писателĕсем вырăс, акăлчан, француз, поляк тата ытти халăхсен литературисенчи классиксем, çавăн пекех тăванла республикăсенчи халăхсен хальхи писателĕсем çырнă произведенисене куçарас тĕлĕшпе пысăк ĕç турĕç.

Халăх поэчĕ П. Хусанкай Пушкинăн «Евгений Онегин» романне, Грибоедовăн «Ăса пула инкек» комедине, Шекспирăн «Ромеопа Джульетта» трагедине, çавнашкалах Маяковскин чылай произведенийĕсене куçарчĕ. Чăваш вулакансене С. Шавлы, А. Алга, Уйăп Мишши поэтсем Тарас Шевченкăн вилĕмсĕр произведенийĕсене куçарса пачĕç. Анчах та çак паха опыт çинчен центрти журналсенче пĕр статья та пулин пичетленсе тухрĕ-и-ха? Çук. Центрти журналсем ун пек статьясене пичетлемеççĕ. Правленин çĕнĕ составĕн çак çитменлĕхе пĕтермелле.

Кунпа пĕрлех Мускав писателĕсен бригадине ытти республикăсене ытларах çўретмелле.

Чăваш писателĕсен произведенийĕсене вырăсла куçарас тĕлĕшпе С. Бородин, В. Шкловский, М. Никитин, М. Светлов, Л. Пеньковский, Б. Иринин, П. Дружинин, Н. Чуковский, М. Петровых тата ытти тăлмачăсем те нумай ĕçлерĕç.

Союз Правленийĕ Россия Феде-



Чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкайпа Бразили писателĕ Жоржи Амаду.

рацийĕнчи нацилле литературăсен эрнисемпе вечерĕсене ирттерес ĕçе те юлашки çулсенче манăçа хăварчĕ. Сăмахран, 1950 çулта, Мускавра, чăваш, дагестан, бурят-монгол литературисен эрнисене ирттернĕччĕ. Эпир, чăваш литературин эрнин участникĕсем, ун чухне хамăрăн творчествăллă ĕçе вăйлатас тĕлĕшпе чылай усăллă канашсем, кирлĕ пулăшу илтĕмĕр. Мускавра чăваш писателĕсен произведенийĕсене сĕтсе явни тата вырăс литератури мастерĕсемпе тĕл пулса калаçни чăваш писателĕсен тавракурăмне самаях ÿстерчĕ. Каярахри çулсенче те, чăваш литературин эрни хыççăн, эпир çĕнĕ произведенисем çырас ĕçре çине тăрса, пысăк вăй хурса ĕçлерĕмĕр. Совет писателĕсен Иккĕмĕш съездне чăваш писателĕсем сахал мар çĕнĕ те паха произведенисемпе кĕтсе илчĕç. Вĕсенчен хăшĕ-пĕри халĕ пĕтĕм Союзри вулакансемшĕн те паллă.

Докладчиксемпе содокладчиксем чăваш литературин паянхи çитĕнĕвĕсене сахалтарах пĕлни питĕ çителĕксĕр пек туйăнать. Кунта Ухсайăн «Çул» романĕпе «Кĕлпук мучи» поэмине кăна асăнчĕç. Анчах çавнашкал лайăх, кăмăла каякан, хумхантаракан произведенисем пирĕн халь сахалах мар. Çемен Эльгерĕн «Хĕн-хур айĕнче», Петĕр Хусанкайăн «Аптраман тавраш», Стихван Шавлин «Тăван кĕтес», Александр Алган «Шыв арманĕ» тата «Çулăм витĕр çул выртать» тата ытти пысăк формăпа çырнă поэтикăлла произведенисене те чăваш халăхĕ лайăх пĕлет. Вăл çавнашкалах Иван Ивник, Уйăп Мишши, Илья Тукташ, Аркадий Эсхель поэт-лирикsен сăвви-юррисене те юратса, кăмăлласа вулать.

Щипачев юлташ кунта издательствăсен айăпне пула чылай паха произведенисем кун çути курайманни çинчен каларĕ. Савăн пек произведенисен шутне Эльгер поэтăн Гослитиздат тахçантанпах пичетлемесĕр тытса тăракан «Хĕн-хур айĕнче» поэми те кĕрет.

Чăваш совет литературинчи çĕнĕ çитĕнÿсене чăваш прозаикĕсемпе драматургĕсем юлашки тапхăрта нумайăшĕ çине тăрса, ăнăçлăн ĕçлеиничен те курма пулать. Кунта çак цифрăна илни те çителĕклĕ: 1934—1954 çулсенче 150 чăваш писателĕн произведенийĕсем пичетленсе тухрĕç. Вăхăт сахал пирки эпĕ хамăр писательсен ĕçĕсем çинче чарăнса тăраймастăп. Çавăнпа та хам енчен Союзăн руководствине чăваш литератури аталанăвĕн ытăвĕсене правленин II пленумĕнче сÿтсе явма кăна сĕнсе хăварасшăн.

Чăваш совет литератури кĕске вăхăт хушшинчех халăх юратакан литература пулса тăчĕ. Халĕ ĕнтĕ пирĕн хамăрăн та чăваш чĕлхипе литературине тишкерекен филологи наукисен докторĕсем пур. Пирĕн литераторсен творчестви çинчен аслă шкулсенче тата çĕршыври наукăпа тĕпчев учрежденийĕсенче кандидат тата доктор пулмалли диссертацисем çыраççĕ. Кăçал пирĕн учĕнăй М. Сироткин чăваш совет литератури çинчен çырнă очеркисене пичете пама хатĕрлесе çитерни Иккĕмĕш съезд çывхарнă май тунă парне пулса тăрать.

Паллах, аслă вырăс халăх литературин пысăк влиянийĕсĕр эпир кĕске вăхăт хушшинчех тăван литература аталанăвĕнче çакăн пек ÿсĕмсем тăваймастăмăр.

Юлташсем, пирĕн писательсен произведенийĕсем халĕ темиçешер пин тиражпа Мускавра вырăсла пичетленсе тухаççĕ. Чăваш писателĕшĕн, темиçе ĕмĕр хушши патша саманин тискер пусмăрĕнче асап курса пурăннă халăх писателĕшĕн, хăватлă совет литературин ретĕнче пĕрле пулниччен пысăкрах савăнăç çук. *(Алă çупаççĕ.)*

Юлташсем! 20 çул хушшинче пирĕн питĕ нумай ыйтусем пухăнчĕç, вĕсене çак съездра кирек мĕнле пулсан та сÿтсе явас пулать.

Чи малтан писатель ĕçне вырăнсенче пĕр тĕрлĕ, центрти издательствăсенче тепĕр тĕрлĕ тÿлес йĕркене пĕтерес пулать. Хăвăрах пĕлетĕр ĕнтĕ, лайăх кĕнеке çырас тесен, авторăн — Мускавра пурăнать-и вăл е урăх хулара-и — пурпĕрех пĕр пек çине тăрса, тăрăшса ĕçлени, харпăр хăйĕн литературăри ăсталăхне ÿстерсе пыни кирлĕ. Анчах та облаçсенчи тата республикăсенчи издательствăсенче, центрти издательствăсемпе танлаштарсан, гонорар сахалтарах тÿлеççĕ. Мĕншĕн апла-ха вăл? Инженерсене, агрономсене е учительсене илсен, географи тĕлĕшĕнчен вĕсем ĕçлекен завод, МТС е шкул хăш вырăнта пулнине пăхмасăрах, пĕр пек тÿлеççĕ. Ĕлĕкрех, вырăссен паллă писателĕсем Мускавра е Ленинградра пурăннă вăхăтра, вырăнти писательсем çамрăкрах тата опыт тĕлĕшĕнчен чухăнрах пулнă чухне, ун пек тÿлени тĕрĕс те пулнă пуль. Халĕ ак Свердловскра, Новосибирскра, Ростовра, Иркутскра, Горькинче, çавăн пекех автономиллĕ республикăсенче пурăнакан писательсем пĕтĕм халăх килĕштерекен кĕнекесен авторĕсем пулса тăчĕç пулсан, облаçсенчи издательствăсенче çаплах кивĕ йĕркепе гонорар тÿлесе пынине пĕрре те ăнланмалла мар. Вăл системăна ватмалла та центрти издательствăсемшĕн те, облаçсемпе республикăсенчи издательствăсемшĕн те пĕр йĕрке туса çирĕплетмелле.

Иккĕмĕш ыйту вăл Президиумпа Секретариат ĕçĕсем пирки. Президиумпа Секретариатăн литература хуçалăхĕнчи пур ĕçсене те çаврăнăçуллă та вăхăтра ертсе пырас пулать. Анчах практика çакна кăтартса пачĕ: Секретариат час-часах хăйĕн решенийĕсене мĕнле пурнăçланине те тĕрĕслесе пыраймасть. Çавна пула Секретариатăн хăшпĕр решенийĕсем пурнăçа кĕреççĕ, хăшĕ-пĕрисем пурнăçа кĕмесĕрех юлаççĕ. Хăш чухне Секретариат хăй йышăннă решенисенех хирĕç пырать. Эпĕ кунта Литература фончĕ тĕлĕшпе йышăннă решенисем çинчен каласшăн. Сăмахран, пилĕк çул хушшинче Секретариат Литература фондне Шупашкарта пурăнмалли çурт тума хушса икĕ хутчен решени йышăнчĕ, анчах çав çурта тума, икĕ томлă переписке сăр пуçне, пĕр пус та расходламан. Çав хушăрах Секретариат ытти стройкăсем пирки йышăннă решенисене Литфонд çийĕнчех пурнăçа кĕртсе пычĕ. Тен, кун пирки Сурков юлташ ăнлантарса парĕ: мĕншĕн вăл çавăн пек пулса пырать-ха?

Литература фончĕ пирки сăмах хускатрăмăр пулсан, вăл пирĕн çĕршывăн кăнтăр пайĕнче тата Рига çывăхĕнче çеç творчество çурчĕсемпе санаторисем туни пирки те ним шарламасăр иртсе каймa çук. Россия центрĕнче, климат вăтам пулин те, Литфонд пĕр çурт та туман. Ку аван мар. Эпир, чăваш делегачĕсем, Литфонда Атăл хĕрринче пĕр творчество çурчĕ тума сĕнетпĕр. Ун валли Шупашкар çывăхĕнче «Кувшинка» ятлă питĕ илемлĕ вырăн та шыраса тупрăмăр эпир. Кунта пирĕн çĕршыври пур кĕтессенчен те писательсем килсе çÿреме пултарĕччĕç.

Юлташсем, кăçал Украина писателĕсем чăваш совет поэзине пуçараканĕн—Çеçпĕл Мишши поэтăн ятне сума суса палăк лартрĕç. Çеçпĕл Мишши хăй Чернигов облаçĕнче вилнĕ. Чăваш литераторĕсемпе пĕтĕм чăваш халăхĕн кăмăлне çитерсе, эпĕ çак пысăк трибуна çинчен Совет Украининчи писательсемпе Украина халăхне чăваш поэтне чыс тунăшăн чун-чĕререн тав тăватăп. *(Нумайччен алă çупаççĕ.)*

*БИБЛИОГРАФИ*

# „ВУНСАККĂРМĔШ ÇУЛ"

С. В. Эльгер «Вунсаккăрмĕш çул» ятлă драмăлла поэмăра 1918 çулта чăваш ялĕнче пулса иртнĕ событисене, Совет влаçĕ пĕтĕм ĕççыннисене ĕмĕрхи пусмăртан ирĕке кăларнине, коммунистсем ертсе пынипе ялти чухăнсем çĕнĕ влаçа. çирĕплетессишĕн мĕнле кĕрешнине ĕненмелле те тĕрĕс кăтартса парать.

Поэмăри тĕп герой—çĕнĕ, ирĕк пурнăçшăн чунне парса кĕрешекен халăх. Телейлĕ пурнăçшăн, сутă пуласлăхшăн çапăçăва çĕкленнĕ ĕççыннисен сăнарне автор Левен, Исси, Миххе сăнарĕсем урлă уçса кăтартать.

Поэма ялти çамрăксен вăййине кăтартса панипе пуçланать. Ытла та илемлĕ-çке çурхи каçсем! Пурте чуна саваççĕ: çеçке çурнă чие пахчинче, лăпкă каç илемне мухтаса, шăпчăк юрă шăрантать, çамрăксен янкăс сасси таврана янăратать. Ял каччисемпе хĕрĕсем вăйă выляççĕ, ташлаççĕ, савăнаççĕ... Шăп çак вăхăтра çитсе кĕрет Левен тăван ялне. Вăйăри çамрăксем ăна тÿрех хупăрласа илеççĕ, калаçаççĕ, пĕрле вăйă вылянма чĕнеççĕ. Тăвата çул пулман вăл ялта... Халĕ вăл хăй çуралса ÿснĕ тăван ялĕнче, тусçамрăксен йышĕнче. Çамрăксем ăна ыр кăмăлпа хапăл туса йышăнаççĕ, хăйсен ĕçĕ çинчен, ял пурнăçĕ çинчен каласа параççĕ, çав вăхăтрах Левенрен çĕршыври ĕçсем çинчен ыйтса пĕлме васкаççĕ. Пĕр Каврук калаçăвĕ кăна ăна ыттисем пек савăнтармасть. Ултă çул хушши пусмăр тĕнчине хураллані поручик унăн ĕçне чăрмантарма пултарать. Каврук поручик, çĕршывра çĕнĕ йĕрке пуçланса кайсан, хăй чинĕ çине алă сулса, «хама упрас пулать малтан» тесе яла таврăнать, мĕншĕн тесен—«хисеплĕх çук хĕрлисенчен».

Нимĕçсен çарне Нарва патĕнче çĕмĕрнĕ чухне йывăр суранланнă Левен ялти çамрăксене çĕршывра пулса пыракан ĕçсем çинчен каласа парать, шуррисем çамрăк Совет çĕршывĕ çине тапăнса кĕме хатĕрленнине пула ĕçсем самаях йывăрланса пыни çинчен ăнлантарать. Çамрăксем Совет влаçне тĕреклетес тесе ырми-канми ĕçлекен рабочисене пулăшма май шыраççĕ.

Анчах чухăн хресченĕн хăйне валли те çитмест-ха тырă. Чухăнсен ĕнси çинче пуйнă кулаксем сахал мар тырă усраççĕ, анчах çĕрсе выртсан та парасшăн мар вĕсем тыррине. «Парсан—ху выçă вил вара»,—тет Каврук, мул хуçисен шухăшне палăртса.

Левен ял халăхне сутă пурнăçшăн кĕрешÿ сулĕ çине илсе тухма шутлать, Исси пек иккĕленчĕк шухăшлă çынсене кивĕ шухăшсенчен тасалма пулăшмалла, Каврук йышши халăх тăшманĕсене çул çинчен тасатмалла. Советсемшĕн кĕрешекенсене пур майсемпе те пулăшса пымалла, рабочисене тăрантарма тырă пухса парас пулать. Çак тĕллеве пурнăçа кĕртессишĕн пырать те ĕнтĕ ял хушшинчи класс кĕрешĕвĕ.

Ялта пĕрне-пĕри хирĕç икĕ вăй тăрать: пĕри вăл—çĕнĕ пурнăçа хÿтĕлесе, ăна сарăлса, тĕрекленсе пыма пулăшакансем, ялти чухăнсем. Тепри—Каврук, Ассун, Тит, Сантăр йышши усламçăсем, çĕнĕ пурнăçа хирĕç пыракансем, тепĕр хут пусмăр йĕрки туса хума тăрăшакансем. Пĕр-пĕринпе ниепле майпа та килĕшме пултарайман вăйсен хушшинчи хаяр кĕрешÿре пĕрин ĕмĕрлĕхех пĕтмелле. Çутă ĕмĕтсемпе пурăнакан вăй, çĕнелсе, ÿссе пыракан вăй яланах кĕрешÿре çиеле тухать, мĕншĕн тесен ун пуласлăхĕ пысăк.

Çамрăк Совет влаçĕшĕн чи йывăр вăхăт: «граждан вăрçи çунса килет».

Шурă гварди хĕснине пула Хĕрлĕ Çар чаçĕсем Чĕмпĕр хулине хăвараççĕ, тăшман Атăл тăрăх çÿлелле, Хусан патнелле, хăпарма пикенет. Хулари рабочисем выçăпа аптраççĕ, çăкăр çитмест, çав вăхăтрах кулаксем тырăпа вăрттăн суту-илÿ тăваççĕ, хаклă хакпа сутаççĕ, ĕмĕтсĕр пысăк тупăш шыраççĕ. Çапла халăха, патшалăха намăса пĕлмесĕр çаратаççĕ. Çĕршыв халăхран çăкăр ыйтать, кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçлекен рабочисене тăрантарма чĕнет. Усламçăсем совет политикине хирĕç пыраççĕ. «Пуян, вĕреннĕ... ахвицер» ячĕпе усă курса, Каврук хăшпĕр каярах юлнă, тĕттĕмрех çынсене тÿрех Советсене хирĕç тăма, вĕсене пĕтерсе пыма хистет, çĕнĕ пурнăçшăн тăракан çынсене Советсем пĕтсен йывăр пуласситпе хăратма пăхать. Паллах, малтанлăха ун хыççăн утакансем те сахал мар. Вĕсем Каврук сăмахĕсене ĕненсех каймаççĕ пулин те, авалхи йăласене тÿрех айккине хăварса, çĕнни çинчен каласма шикленеççĕ-ха, çавна пула хăшпĕр хресченсем мул хуçисен серепинчен часах хăтăлса тухаймаççĕ.

Халăх — пысăк вăй. Çавăнпа та Каврук халăхăн хăшпĕр пайне те пулин хăй аллинче тытса тăма шутлать. «Советсем кĕçех пĕтмелле» тесе халăха пăтратать. Анчах, темле тытса чарма тăрăшсан та, çутталла туртăнакан халăха тытса чарма хăват çитерес çук, мĕншĕн тесен ирĕклĕхшĕн кĕрешекенсен йышĕ ÿссех пырать. Хăйĕн вăйĕ чакса, вилĕмĕ çывхарса килнине туйса тăракан Каврук, аманнă выçă кашкăр юлашки вăйне пухса сунарçă çине сиксе ларнă пек, мĕн пур вăйран тулхăрма тытăнать. Хăйĕн тискер шухăшĕсене пурнăçлас ĕçре вăл нимле киревсĕрлĕх умĕнче те чарăнса тăмасть, пусмăрлăха сыхласа хăварас шутпа хăйĕн юлашки ирсĕр ĕçне тăвать: пухура Левен халăха тырăпа вăрттăн суту-илÿ тăвакан спекулянтсен тыррине туртса илсе рабочисене пама чĕннĕ чухне Каврук ăна чулпа персе суранлатать, унтан револьверпе перет, анчах Исси Левене хăйĕн пĕвĕпе вилĕмрен сыхласа хăварать. Ялти чухăнсем Левен тĕрĕслĕхшĕн кĕрешнине ăнланса илеççĕ, ăна ĕçре пулăшма пуçлаççĕ. çав вăхăтрах çĕнĕ влаçăн çитĕнĕвĕсене сăнаса пыраççĕ, пурнăçпа тан утма тăрăшаççĕ, ирĕклĕ пурнăçшăн кĕрешекен çĕнĕ влаçа пĕтерме шутлакансене кураймаççĕ, вĕсене ылханаççĕ.

Левен чугун çула революцие хирĕçле вăйсенчен хуралланакан Хĕрлĕ Çар чаçĕсене апат-çимĕç парса тăрас ĕçе йĕркелет, вырăнти кулаксен чăрсăрла ĕçĕсене чарса лартать. Тырпул рабочисене çеç те мар, «тăван влаçа сыхлакан çамрăк Хĕрлĕ Çаршăн та питĕ кирлĕ». Вĕсене мĕнле майпа пулăшасси, çак тырпула ăçтан тупасси Левеншĕн паллă.

Çак пархатарлă ĕçе туса пыма Левене ялти ытти çамрăксем пулăшаççĕ: Миххе, Никандр; вĕсем яланах ун кăтартăвĕсене тÿрĕ кăмăлпа туса пыраççĕ. Вĕсен сăнарĕсем те вулакан умне тăван çĕршыв тĕрекĕшĕн, çĕн пурнăçа çирĕплетессишĕн кĕрешекен чăнчăн патриот сăнарĕ пек курăнаççĕ. Никандр, малтанхи кунсенчех пурнăç лайăх енне сулăннине туйса илнĕскер, кĕрешĕве вирлĕн хутшăнать. Левенпе пĕрле халăха çĕнĕ пурнăç епле пулассине каласа парать, çав пурнăçшăн вăй хурса кĕрешме чĕнет, патшалăха тырă парас ĕçе хутшăнать, суранланнă Левен вырăнне тăрса, рабочисемпе пĕрле ялйыша кулаксен тыррине туртса тухма ертсе каять. Левен çара тухса кайсан, Миххе комбед пуçлăхĕ пулса ĕçлет, юлашкинчен хăй те алла хĕçпăшал тытса тăшмана хирĕç çапăçу хирне тухать.

С. Эльгерĕн пур произведенийĕсенче те хĕрарăм сăнарĕ яланах хăйне тивĕçлĕ вырăн йышăнать. Ку поэмăра та вăл вăхăтри хĕрарăмăн правасăр пурнăçне, вăл çутта туртăннине, вĕренме, пуринпе тан праваллă пулассишĕн çунса тăнине кăтартса панă.

Çапăçу хирĕнче Левен мĕншĕн хăй ирĕкĕпе юн тăкнине те ăнланса илеймест-ха Исси малтанлăха, çĕнни киввинчен мĕнпе уйрăлса тăнине те чухлаймасть. Кĕрешÿрен хаклăраххи уншăн— тÿлек пурнăç, хăй юратнă каччи. Анчах Левеншĕн ку сахал. Вăл чăн телее кĕрешÿре кăна тупма пулнине лайăх пĕлет. Иртерех-ха лăпланса ларма:

Ак тăвăл иртĕ. Кун çуталĕ.
Ун чух пăрахăп пăшала.
Çĕртен пур ирсĕрлĕх тасалĕ,
Вара эп пулăп санпала,—

тет Левен Иссине хăйĕн чăн шухăшне.

Кил хушшинчи ĕçпе кăна çырлахса ларма вăхăт мар халь. Тăшман кив пурнăçа каялла тавăрма хапсăнать, ялта та йывăрлăхсем сахал мар. Малтан ĕç хресченне телейлĕ пурнăç туса паракан çамрăк Совет влаçне тăшмансенчен хăтарса хăварса, ăна тĕреклетес пулать.

Рабочисене тырпул пухса парас пирки пулса иртнĕ пухури ĕçсем Иссине хытах шухăшлаттараççĕ: Левен çĕршывшăн, халăх пурнăçне лайăхлататассишĕн кĕрешнине нихçанхинчен те лайăхрах ăнланса илет вăл. Исси юратнă мăшăрне, мăшăрне çеç те мар, халăхăн телейлĕ пуласлăхĕшĕн чунне пама хатĕр революционера халăх тăшманĕн пулинчен хăй пĕвĕпе хăтарса хăварать. Иссин пуянсене курайманлăхĕ вăйланать. Левен хăй ирĕкĕпе çара тухса кайсан та вăл унăн шанчăклă арăмĕ пулса юлать. Халĕ ĕнтĕ унăн, Левенпе юнашар тăрса, тăшмана хирĕç паттăрла çапăçас килет. Анчах хĕрарăм-çке вăл, çитменнине вĕренессе те сахалтарх вĕреннĕ. Анчах çĕршыв ыйтать пулсан, хĕрарăм та арçынпа танах алла пăшал тытма тивĕç. Вăл хăйне валли тĕрĕс çул шыраса тупать. Аманнă салтаксене сыватма сестра пулса, вăрçа тухса каять.

Эп хатĕр юлашки вăя та
Пулас çĕн пурнăçшăн хума!—

тет вăл Хĕрлĕ Çара тухса каяс умĕн.

Автор поэмăра юратупа çемье ыйтăвне, общество ыйтăвĕпе çыхăнтарса, тĕрĕс уçса парать.

Каврук, Левен çуккине пула, хăйĕн пуянлăхĕ пур хĕре те илĕртме пултарать текен шухăша асра тытса, ялти чи хисеплĕ хĕре хăй аллине çавăрса илме шутлать. Исси ун юратăвне тÿрех хирĕçлет, мул тыткăнне кĕрсе ÿкме килĕшмест, ашшĕ-амăшĕсем унăн пурнăçне Каврук мулĕпе çыхассине хирĕç хăюллă кĕрешет. Вăл ĕççыннисен телейлĕ пурнăçĕшĕн чунне пама хатĕр Левене юратать.

Эп ирĕкшĕн çуралнă хĕр,
Хам телее хамах тупам,—

тет вăл хăйне чура туса хума ĕмĕтленекен Каврука, пĕтĕм шухăш-кăмăлне уççăнах палăртса. Çĕнĕ саманара авалхи пек хĕре мулшăн сутас йăла пулмалла марри Иссишĕн паллă, «хĕрпе хăйпе килĕшмелле малтан», унсăрăн арăм тăваймăн ирĕклĕ хĕре. Вăл Каврук сĕнекен янтă пурнăçа кураймасть. Чухăнсен вăйĕпе пуйнă пурлăхпа савăнса пурăнасси Иссишĕн ют. Вăл хăй пек çук çынна юратать, пуянлăх çук пулин те, ăнах савать, хăйĕн кун-çулне Левенпе пĕрлештерсе, телейлĕ пурнăç тума шутлать.

Анчах Каврукшăн авалхи киревсĕр йăла хăйĕн хакне çухатман-ха. Вăл хĕрĕн ашшĕ-амăшĕсене хăй май çавăрма шутлать, мул çине ăшă куçпа пăхакан ватăсемпе ку ĕçе çăмăлах тума пуласса шанать.

Нихçан ашшĕ-амăшĕн сăмахĕнчен тухман пулин те, Исси хăйне ирĕксĕрлесе качча паракан ашшĕ-амăшне парăнмасть:

Юлас пулсан пĕр ирĕксĕр—
Мĕнпур йăласене ватам...—тет вăл.

Исси ашшĕ Энтри, пуян çынпа тăванлашса, хăйĕн пурнăçне лайăхлатма шутлать, юратман упăшки патĕнче хăйĕн хĕрĕ мĕнле асапланасси уншăн паллă мар. Анчах Исси хăй юратнă каччипе килтен тухса тарни ăна хĕрĕн шухăшне ирĕксĕрлени усăсăр пулнине сисме пулăшать. Вăл хăйĕн хĕрĕ çакнашкал усал çынсемпе телейлĕ пурнăç тума пултараймannине туйса илет. Малтанлăха чухăн Левене хирĕçлетчĕ пулсан, Энтри пурнăç улшăнăвне пула хăйĕн йăнăшне ăнланса илет, тĕрĕслĕх Левенсен, чухăнсен енче пулнине, ял пуянĕсем чăнахах та ирсĕр çынсем иккенне курать.

Малтанлăха Энтри хăй хĕрне ялтах лăпланса пурăнма хистетчĕ пулсан, Тăван çĕршыва тăшмансенчен хÿтĕлеме тухса каякан Иссине ырă пилпе çара ăсатать:

Килте эс харсăр пултăн...
Маттур та çирĕп пул фронтра.

Кулине сăнарĕ пирки те çавнах каласа хăвармалла: вăл, ялти коммунистсем пулăшнипе тĕттĕмлĕхрен тухса, ÿссе, çитĕнсе пыракан сăнар. Вăл та малтанах пуян çын куçĕнчен телей ыйтса пăхатчĕ. Чухăн пурнăçра хăйне мĕнле те пулин пулăшу пулĕ-и тесе вăл, Каврук хутне кĕрсе, хăйĕн тантăшне улталама шутлатчĕ. Каярах вара хăйĕн йăнăшне ăнланса илет. Каврук киревсĕрлĕхĕсем ăна тÿрĕ çул çине тухма пулăшаççĕ.

Юлашкинчен, арçынсем çапăçу хирне тухса кайсан, вăл, ял Совет председателĕ пулса, хăй ĕçне йĕркеллĕ туса пырать.

«Вунсаккăрмĕш çул» пĕрремĕш хут «Тăван Атăл» альманахăн 1948 çулхи 32 номерĕнче пичетленсе тухрĕ. Иккĕмĕш хут пичетлесе кăларнă чух автор поэмăна чылай улшăнусем кĕртнĕ, хăшпĕр вырăнсене çĕнетсе улăштарнă. Малтан поэма çичĕ сыпăкпа, Левен Каврука персе пăрахнипе вĕçленетчĕ. Çапла вара вулакан умне кĕрешÿ пĕтнĕ пек курăнатчĕ. Иккĕмĕш изданире автор çак çитменлĕхе пĕтернĕ, поэмăна тата тепĕр тăватă пай хушнă. Каврук, ялтан тухса тарса, шурă гварди çарне хутшăнать, капитан пулса, хĕрлисене хирĕç çапăçать. Кĕçех чул чĕрелле Каврукăн шалчи тулать, ăна хăйсен ирĕкелле туртăнакан салтакĕсемех пирĕннисен аллине тытса параççĕ.

Юлашки сцена çĕнтерÿпе, хĕрлисем Колчак çарне çапса салатнипе вĕçленет. Колчак çарне аркатнă чух пысăк çитĕнÿсем тунăшăн Леонтий Саввича Хĕрлĕ Ялав орденĕ парса наградăлаççĕ. Дивизи начальникне—Чапаева çĕнтерÿ парадĕнче кăна курат пăр пулин те, эпир унăн пултарулăхне, вăл тăшмана чĕререн курайманнине, çĕнĕ пурнăçшăн чунне парса кĕрешнине туйса илетпĕр.

Чăвашсем те вырăс халăхĕпе пĕрлех çĕнĕ пурнăçа тăшманран хÿтĕлесе хăварма тухни Чапаева хытах савăнтарать. Чăваш халăхĕн ĕлĕкхи кун-çулĕ мĕнле пулни уншăн паллă. Чăвашсем «хура пÿртрен» тухса çĕршыв ĕçне хутшăнни, ирĕклĕхшĕн пур майсемпе те кĕрешĕве çĕкленни хĕпĕртеттерет ăна.

Парада арми командующийĕ Фрунзе йышăнать. Фрунзе тухса каланине Чапаев дивизийĕнчи салтаксем хавхаланса итлеççĕ, çакă вĕсене çапăçура татах та пысăк çĕнтерÿсем тума вăй парать.

Ирĕклĕх! Пурте çав ирĕклĕх патне туртăнать, кĕрешÿре çĕнĕ вăй çĕнсе тухатех çиеле, мĕншĕн тесен ирĕке юратакан пур халăх та ун ялавĕ айĕнче утать. Çĕнĕ пурнăçшăн кĕрешсе, çĕнĕ çын çуралнине, çавăн пекех чăваш хĕрарăмĕ, йывăр пусмăртан тухса, общество ĕçне хутшăнса ĕçлеме пуçланине ĕненмелле, чĕрĕ сăнсемпе кăтартса пани—поэмăн лайăх енĕ.

**Н. ГРИГОРЬЕВ.**

# ЯКУТ ХАЛĂХĔН ЛИТЕРАТУРИ

М. СИРОТКИН

Саха халăх çĕршывĕ (якутсем хăйсене çапла чĕнеççĕ) ĕлĕкхи Российăн чи тĕксĕм кĕтесĕсенчен пĕри пулнă. Ахаль мар ĕнтĕ унта патша правительстви революционерсене пуç ярса асаплантарнă. Шартлама сивĕ çанталăклă, ĕмĕрхи пăрлăхсемпе, шурлăхсемпе витĕннĕ, сĕм вăрманлă та сăрт-туллă, темиçе патшалăх вырăнаçмалăхах анлă çĕршывра авалтан пурăнакан якут халăхĕн кун-çулĕ тертпе асап хушшинче иртнĕ.

Еç халăхĕ пĕр енчен патша йĕркин пусмăрĕнчен, тепĕр енчен вырăнти пуянсенчен (тойонсенчен) лăш курман. Совет влаçĕ кăна якут халăхне çутă пурнăç кӳнĕ. Якут çĕршывĕ халĕ, ытти тăванла халăхсем пекех, хаваслă пурнăçпа пурăнать. Революциччен кунта хут пĕлекенсен хисепĕ пĕр процента та çитеймен пулсан, халĕ хут пĕлмен çын çукпа пĕрех. Ĕлĕкхи çулсăр-йĕрсĕр çĕршывра халĕ автомобильсем чупаççĕ, самолетсем вĕçеççĕ. Тойонсен чуралăхĕнче пурăннă халăх талкăшпех колхоз йĕркине куçнă. Çĕçĕпе пуртăсăр, ухăпа çĕмренсĕр пуçне урăх техникăна пĕлмен çĕршывра сăрт-ту ĕçĕ, çĕр кăмрăк кăларас, вăрман касас, карап тăвас промышленность ӳссе аталанчĕç. Ĕлĕк ăрăмçă шамансем юмланипе минренĕ çынсем халĕ сывă та таса, тĕн сĕрĕмĕсĕр пурăнма тытăннă. Халăх сывлăхне упрама кунта врачсен нумай йышлă отрячĕ тăрăшать. Халăха çутта кăларма ултçĕр шкул уçса панă, педагогика институчĕпе учительсен институчĕ ĕçлет. Якутсен халĕ хăйсен наукăпа тĕпчев институчĕсем, хăйсен театрĕ, музыкипе ӳкерӳ искусстви пур. Çуллен-çул пичетпе литература ӳссе пыраççĕ.

Темиçе ĕмĕр тăршшĕ асап курса пурăннă пулин те, якут халăхĕ хăйне евĕр пуян сăмах искусстви хывма хăват çитернĕ. Халăхра мĕн ĕлĕкренпех паттăрсем çинчен калакан эпосла произведенисем — «олонхосем», тĕрлĕ юмахсем юрăсем, такмаксем — «чапăркахсем», тупмалли юмахсемпе ваттисен сăмахĕсем çӳренĕ. Вĕсене ĕç халăхĕнчен тухнă пултаруллă çынсем: кĕтӳçĕсем, сунарçăсем, пулăçăсем хывнă. Халăх сăмахлăхĕнче тăван çĕршывпа тăван халăха юратни, пусмăрçăсене курайманни, пуянсене ылханса питлени, ĕçченлĕхпе ĕç этемне ырлани, çутă пуласлăха çирĕп шанни ĕмĕртенех тĕп кĕвĕсем пулнă.

Çав кĕвĕсем «Яна юрри», «Вилюй шывĕ» текен юрăсенче, уйрăмах олонхо эпосĕнче палăраççĕ. Сăмахран, олонхосенчен нумайăшĕнче лăпкă та тӳлек пурнăçпа пурăнакан халăха улăпла «айă аймага» йăхĕнчен тухнă паттăрсем халăха çаратакан, выльăх-чĕрлĕхе пăвакан, çамрăк хĕрсене вăрлакан тăшмансенчен — тискер «апăссенчен» хăтарни çинчен калани тĕл пулать. Айă паттăрĕсем яланах вара тӳрĕ чунлă, халăхшăн тăрăшакан, ĕççыннисен телейĕшĕн кĕрешекен, лăпкă пурăнăçшăн çунакан сăнарлă пулса тухаççĕ. Асăннă сюжетсене Эр Соротох (хусах паттăр), Харсăр Мӳлтӳ, Йӳрӳн Йолан (сарă каччă), Нӳргӳн Паттăр олонхосенче курма пулать.

Олонхопа юмахсенчи паттăрсен ĕçĕсем тĕлĕнмелле хăватлă. Паттăрсен вăйĕ «çĕр чăмă-рĕн çур вăйĕпе танашать, телейĕ — çур тĕнчен телейĕпе шайлашать». Паттăрсем çапăçнă чух «сăрт-тусем сулланаççĕ, тинĕссем чӳхенеççĕ, çĕр чăмăрĕ кисренет». Ытти халăхсен юмахĕсенчи пекех, олонхо паттăрĕсем асамлă: вĕсем ăмăрткайăк е кайкăр пулса вĕçеççĕ, пулă пулса ишеççĕ, çиçĕм пек хăвăрт çӳреççĕ. Йывăрлăхсене çĕнтерсе, тăшмансене тĕп туса, вĕсем ялан çиеле тухаççĕ. Тĕрĕс ĕçшĕн тăракан паттăрсем, халăхăн çутă ĕмĕчĕ пекех, вилĕмсĕр. Кĕнкӳл Бăрай олонхори паттăр виçĕ хут вилсе виçĕ хут чĕрĕлсе тăрать, çав-çавах çĕр çинче телейлĕ пурăнăç тăвас ĕмĕтпе кĕрешет. Çавнашкал сăнарсемпе ĕнтĕ халăх хăйĕн ĕмĕртен кĕтнĕ çутă ĕмĕчĕсене кăтартнă.

Хăйсене пусмăрлакан феодалсене — тойонсене якут ĕççыннийĕсем юмах-халапсенче кирек хăçан та тискер хурахсем, хура чунлă йытăсем, сăхă пырсем тесе питленĕ. «Пар тесен пăрăнать, ил тесен йăл кулать» тенĕ ваттисен пĕр сăмахĕнче хытă пуян çинчен. «Ĕмпӳ пекех çӳрет-çке, çутă хĕçне каçăртса», тенĕ хӳрине тăратнă йытă çинчен калакан тепĕр тупмалли юмахра, пуянсенчен тăрăхласа.

Халăх юмахĕсенче ĕçпе писнĕ этемсем хăйсен тăшманĕсенчен, шыçмак тойонсенчен ăслăрах та, вăйлăрах та пулса тухаççĕ. Асамлă юмахри Чарчăхан карчăк çынçиен тискер Ала Мăкăса хăй ăсĕпе тĕп тăвать, Бэрт Эр чухăн сăхă пуян Байлăта çĕнтерет. Ку ĕнтĕ ĕç халăхĕн тӳрĕ, йĕркеллĕ пурнăç пулас ĕмĕчĕпе шанчăкĕ иксĕлми пулнине аванах кăтартса парать.

Пуян чĕлхеллĕ халăх сăмахлăхĕ якут халăхĕн литературине аталанма хăват панă çăлкуçсенчен пĕри пулса тăнă.

Якут халăхĕн пуян сăмахлăхĕ, чĕлхи вырăс наукипе литературинче ĕçлекен прогрессивлă шухăшлă çынсене мĕн ĕлĕкренех илĕртнĕ. Вунтăххăрмĕш ĕмĕрĕн пĕрремĕш çуррине вырăс академикĕ О. Н. Бетлингк «Якутсен чĕлхи çинчен» (1851 ç.) кĕнеке кăларать. Çав кĕнекерех вăл Якутинче çуралса ӳснĕ вырăс çынни А. Я. Уваровский пухнă олонхосене, якут юмах-халапĕсене, юррисенç вырăнаçтарать. XIX ĕмĕрте якутсен фольклорне çырса илес, халăх чĕлхине тĕпчес тĕлĕшпе паллă вырăс çыннисем И. А. Худяков, Н. А. Виташевский, С. В. Ястремский, Э. К. Пекарский нумай тăрăшнă.

Якут халăхĕн пурнăçне вырăс литературинче кăтартса парас енĕпе ку çĕршыва ирĕклĕхшĕн кĕрешнĕшĕн пуç янă паллă вырăс писателĕсем нумай ĕçленĕ. Уйрăмах поэт-декабристсен: К. Рылеевăн «Войнаровский» поэмине, А. Бестужев-Марлинскийĕн «Саатырь» балладине, Н. Чижовăн «Нучча» (Вырăс) тата «Сывлăш хĕрĕ» балладисене палăртма кирлĕ. Пурте вĕсем якут халăхĕн йывăр пурнăçне кăтартса, ăна пулăшма кирли çинчен калаççĕ.

Якутри çĕршывĕнчи Вилюй острогĕнче вуннăр çул хушши асап курнă Н. Г. Чернышевский хăй шухăшĕсене тӳррĕн каласа пама май çуккине кура тăркачах, якут ĕççыннийĕсем çинчен çапла каланă: «Кунти çынсем, тĕттĕм пулин те, тӳрĕ кăмăллă, ырă çынсем, анчах курасчĕ сирĕн: мĕн тери, мĕскĕнсем, чухăн пурăнаççĕ, — пăхсах кăмăл хуçăлать». Якутинчех, Амга ятлă вырăнта, паллă вырăс писателĕ-демократ В. Г. Короленко, кунта пуç янăскер, литература ĕçне пуçарса янă. Амгăра пурăннă чухне вăл хăйĕн калама çук витĕмлĕ «Макар тĕлĕкне» (1883 ç.) çырнă та ĕнтĕ. Мĕскĕн Макар сăнарĕпе писатель, ĕмĕр асап та хĕн-хур тӳснĕ халăх шăпине пĕтĕмлетсе кăтартса, пусмăрлă пурнăç йĕркисене çав тери пысăк хăватпа питленĕ.

Якутсен илемлĕ литератури пĕрремĕш революци çулĕсенче аталанма тытăннă. Ку вăхăтра патриархалла-феодалла йĕркесем йăшма тытăнни, çĕршыв пурнăçĕнче буржуалла отношенисем вăй илме пуçлани палăрать. Якутсен хăйсен буржуазийĕ ӳсме пуçлать. Вăл ĕнтĕ, тойонсен йышĕнченех тухса пынăскер, вĕсенчен кая мар сăхă пулнă. Анчах буржуазипе тойонсен пусмăрне хирĕç ĕççыннисен кĕрешесси те вăйланать. Ĕççыннисене ссылкăра пурăннă большевиксемпе ленинецсем кĕрешӳре хавхалантарса пынă. Кунта пĕрремĕш революци умĕн паллă большевиксем М. С. Урицкий, И. В. Бабушкин, В. К. Курнатовский, Н. Л. Мещеряков, А. Костюшко-Вилюжанин тата ыттисем те пулнă. 1905—1907 çулсенче Якутире, Россия çĕршывĕн ытти вырăнĕсенчи пекех, вăйлă кĕрешӳ пынă, халăх массисем патша йĕркипе вырăнти пуянсен пусмăрне хирĕç тăвăллăн çĕкленнĕ. Çак событисем халăхăн ăс-тăнне чылай пысăк улшăнусем кӳнĕ. Пĕрремĕш революцие путарнă хыççăн ку çĕршыва Коммунистсен партин паллă деятелĕсем Серго Орджоникидзе, Ем. Ярославский, Г. Петровский, В. Ногин лекеççĕ. Вĕсем якут халăхĕ хушшинче çĕнĕ вăйпа революциллĕ ĕçсем тапратса яраççĕ.

Пĕрремĕш революцие пула Якут çĕршывĕнче пуçласа вырăнти хаçатсем тухма тытăнаççĕ. Анчах вĕсем халăх интересĕсене хӳтĕлекен хаçатсем пулайман. Унта наци буржуазийĕн представителĕсем пуç пулса тăнă. Çавна пула ĕнтĕ «Саха саната» (Якут сасси) йышши хаçат-журналсем халăх ĕмĕтне тултарайман. Демократилле шухăшлă произведенисене çав хаçатсенче юптару чĕлхипе пичетлесе кăларма тивнĕ. Унашкал произведенисен хисепĕнче «Остуорăйа» (Юмах) «Хобуоччу» (Ĕлекçĕ) юптарусем пулнă. Вĕсенче халăхăн çилĕллĕ сатира сăнни пуç пулса тăнă классене, патшаран пуçласа полиципе наслег (ял) пуянĕсене çитиех, пырса тивнĕ.

Ятсăр демократ-писательсен сывă шухăшлă, халăх интересĕсене хӳтĕлекен произведенийĕсене хирĕç тойонсене ырă ятлă тума тăрăшнă буржуалла писательсем тăнă. А. Кулаковский, А. Софронов, Н. Неустроев йышши «сыруçăсем» тӳрех нацилле буржуазине хӳтĕлеме пăхнă.

Çапла ĕнтĕ революциччен якут литературинче икĕ хире-хирĕçле — пĕр енчен прогрессивлă-демократилле, тепĕр енчен реакцилле-буржуалла — вăй пулни уççăнах палăрнă.

Якут совет литературине пуçарса яма çăмăл пулман. Октябрьти Аслă социализмла революци хыççăн якутсен çĕршывĕнче чылай хушă граждан вăрçи пынă. Кунта Колчак çарĕ те, Япони интервенчĕсемпе Америка империалисчĕсем хавхалантарнипе вăй илнĕ тойонсемпе кулаксем те, эсерсемпе федералистсем те тата ытти шурă бандитсемпе авантюристсем те халăх ĕнси çине хăпарса ларма пикеннĕ. Анчах халăх тăшманĕсен тискер ĕмĕчĕ пурнăça кĕреймен. Пĕтĕм революцилле Россия пулăшнипе якут халăхĕ те хăйĕн ĕмĕрхи тăшманĕсене çапса аркатнă. 1922 çул вĕçнелле Якут çĕршывĕ интервентсемпе контрреволюци юлашкисенчен пĕтĕмĕшпех тасалса çитнĕ. Якут халăхĕ те вара пĕтĕм совет çĕршывĕпе пĕрле мирлĕ ĕçе тытăнать.

Совет влаçĕ кая юлнă якут халăхĕн пурнăçне çĕклес тесе нумай вăй хунă. Çавна пула кĕске вăхăтрах халăхăн экономики те, куль-

---

*Статья авторĕ 1954 çулхи октябрь уйăхĕнче Якутск хулинче Н. Канаев, Г. Васильев, Г. Эргис çырнă «Якут совет литератури историйĕн очеркĕ» кĕнекене сӳтсе явас тĕлĕшпе ятарласа пухнă канашлура пулнă. *Ред.*

тури те хăварса каять. 20-мĕш çулсенче Якутире питĕ йышлăн шкулсем, больницăсем, культура учрежденийĕсем уçăлаççĕ, пичет ĕçĕ вăйлăн сарăлма пуçлать. Çавна май оригиналлă литература та хăватлăн аталанма тытăнать.

Çамрăк писательсем литература ĕçне тĕрлĕ шкулсемпе хаçатсем çумĕнче йĕркеленнĕ кружоксенчен пуçласа янă. Ку хисепре Якутск хулинчи педтехникумри «Сайдă» ятлă ушкана, комсомол обкомĕ çумĕнчи «Кăйал сулус» (Хĕрлĕ çăлтăр) кружока асăнма пулать. Çамрăк совет писателĕсене çитĕнтерес ĕçе «Кыым» (Хĕм) тата «Çурçĕр çамрăкĕсем» ятлă хаçатсем активлăн хутшăннă. 1926 çулта Якутск хулинче издательство йĕркеленнĕ май якут совет писателĕсен пирвайхи кĕнекисем те тухма тытăнаççĕ: А. Кудринăн сăввисем (1927 ç.), Г. Бястиновăн «Пурнăç калчисем» ятлă сăвă кĕнеки (1928), С. Кулачиков-Элляйăн «Яш ĕмĕрĕн кунĕсем» (1929) ятлă сăвăсен ярăмĕ. Çав çулсенчех Мускавра Халăхсен тĕп издательствинче А. Иванов-Кюндэ писателĕн «Йăм-хĕрлĕ шурăмпуç» (1925) сăввисем, калавсен кĕнеки (1927 ç.), пьесисем (1927 ç.) пичетленсе тухаççĕ.

Коммунистсен партин кăтартăвĕсемпе хавхаланнă якут совет писателĕсем хăйсен литература ĕçĕнче ĕçхалăхĕн интересĕсене хӳтĕлесе пынă пулсан, социализмла пурнăç çулĕ çине тухса пыракан ĕç этемĕн ăс-тăнпа кăмăл ӳсĕмне кăтартса пама тăрăшнă пулсан, буржуалла шухăшлă писательсем вара хăйсене хăйсем йăлт урăхла тыткаланă. Вĕсем пур майсемпе те çĕнĕ пурнăç ӳсĕмне чарса лартма, совет йĕркине элеклеме пăхнă, ĕççынникемшĕн ют шухăшсене сарнă. Çав ĕмĕтпех вĕсем 1922 çулта националистла «Саха омук» (Якут йăхĕ) ушкăнĕ тăваççĕ. Вăл вăхăтри пĕртен-пĕр литература журналĕ «Чолбон» та çав ушкăн аллине лекет.

Парти пулăшнипе якут совет литератури халăхшăн ют идеологиллĕ литературăна çĕнтерсе çиеле тухнă, буржуалла националистсене çĕмĕрсе тăкнă.

Çирĕммĕш çулсенчи якут литературинче тĕп вырăнта поэзи тăнă. Малта пыракан поэтсем якут поэзине ĕлĕкхи аллитерациллĕ сăвă вырăнне силлабикăлла ритмикăпа рифмăланă сăвăсем кĕртеççĕ. Çак ĕнтĕ поэзи формин пуянлăхне чылай ӳстернĕ.

Асăннă çулсенчех якут прози те вăй илме тытăнать. Прозăра калавсемпе пĕрлех пирвайхи повеçсем тухма пуçлаççĕ. Граждан вăрçинче хастарлă кĕрешнĕ писатель-прозаик Эрилик-Эристин «Кĕтмен савăнăç» (1928) повеçре революци умĕнхи якут улусĕнчи класс кĕрешĕвĕн картинисене кăтартса панă. Кюндэ калавĕсенче Колчак реакцийĕ вăхăтĕнчи ĕççыннисен йывăр пурăнăçне сăнласа панă. Н. Мординов «Çĕçси аврине касмасть» калавра совет йĕркисем çирĕпленнĕ май чухăнсен ăс-тăнĕпе тавракурăмĕ ӳссе пынине аван кăтартнă. Якут прозаикĕсем хăйсен ăсталăхне вырăс литературинчен вĕренсе ӳстерме тăрăшни уççăнах палăрнă.

Драма жанрĕ якут литературинче çирĕммĕш çулсен вĕçнелле кăна аталанма тытăннă. Малтанхи паллăрах произведенисенчен Кюндэн «Тайга сĕмлĕхĕнче» тата «Леня» пьесисене асăнма пулать. Унта вăл тайга сĕмлĕхне те революци хумĕ çитсе, пурнăçа тĕпрен çĕнетсе яни çинчен каланă. Анчах малтанхи драматургсен произведенийĕсем ăшăх пулнă-ха.

Вăтăрмĕш çулсенче совет çĕршывĕнче пулса иртнĕ социализмла аслă улшăнусем якут халăхĕн литературине те çĕнĕ темăсемпе çĕнĕ сăнарсем кӳнĕ. Писательсен ăсталăхĕ ӳссех пырать. Чи пысăк вырăнта ялхуçалăхне коллективизациленин, ялпа хуласен сан-сăпачĕ социализмла çĕнелсе пынин темисем тăраççĕ. Поэзире асăннă темăсемпе С. Васильев (Боргонский) çырнă «Раман эртелĕ» (1930), В. Новиков-Урастыров çырнă «Коммунист Çемен» (1932) поэмăсем уйрамах паллă вырăн йышăннă. Юлашки поэмăна илсессĕн, вăл халăх çĕнĕ, коллективла ĕç йĕркине куçни çинчен витĕмлĕ каласа панипе çеç мар, хăйĕн поэтикăлла формипе те çĕнĕ пулнă. Эпикăлла анлă планпа çырнă произведени вулакансене çирĕп рифмăпа, пулса çитнĕ строфасемпе ăста усă курнипе те килентернĕ.

Социализмла ĕç этем кăмăлĕпе ăс-тăнне çĕнетсе пынине С. Элляй лирики пултаруллăн кăтартса панă. Унăн «Телейлĕ пурнăç» (1938), «Çутă сăнарсем» (1939), «Çул çинчи çутăсем» (1941) сăвă кĕнекисем вăтăрмĕш çулсенчи якут поэзинче паллă йĕр хăварнă. Çавăн пекех А. Бэрияк лирики те паллă вырăнта тăнă.

Прозăра та, поэзинчи пекех, асăннă çулсенче ытларах ял çыннисен кăмăлĕпе тавракурăмĕ çĕнелсе пынине сăнласа панине, ял темисемпе ытларах çырнине палăртса хăварма кирлĕ. Ку тĕлĕшпе вулакансем С. Яковлев-Эрилик Эристин çырнă «Революци ывăлĕ» (1936), «Хумхану» (1937), «Халал тулни» (1938) повеçсене, Н. Мординовăн «Канура», Кюндэн «Марта» калавĕсене хапăл туса йышăннă.

Драматургире те вăтăрмĕш çулсенче писательсем ял çыннисен пурăнăçне юратарах кăтартса панă. Тĕп конфликтсем кунта та колхоз йĕркине хӳтĕлекенсемпе пĕчĕк хуçалăха упраса хăварма пикенекенсем хушшинчи кĕрешӳ тавра аталанса пыраççĕ. Асăннă вăхăтри пултаруллăрах пьесăсен шутĕнче Н. Мординовăн «Танатаран тухни», С. Ефремовăн «Утăмсем» тата «Тăвансем» пьесисем пулнă.

Якут совет литературин вăтăрмĕш çулсенчи ӳсĕмĕн шайĕ чылаях çӳлĕ вырăнта тăни асăннă вăхăталла проблематика, стиль, жанр нумай енлĕ пулса кайнинче те, литература чĕлхи çителĕклех аталанса çитнинче те палăрнă.

Якут совет писателĕсем пĕтĕм совет çĕршывĕн пурăнăç тĕрекне тĕрĕслекен Аслă Отечественнăй вăрçă событийĕсене пирĕн социализмла государствăна тивĕçлĕ граждансем пулса кĕтсе илчĕç. Писательсенчен чылайăшĕ фронтсенче алла хĕçпăшал тытса тăшмансене хирĕç кĕрешнĕ, тыла юлнисем çĕнтерĕве çывхартас ĕмĕтпе ырми-канми ĕçленĕ. Якут халăх ывăл-хĕрĕсен паттăрлăхĕпе патриотизмне çитĕнтерес ĕçре литература паха вырăнта тăни куçкĕретех палăрнă. Фронта кайнă якут воинĕсенчен виçĕ пинĕ орденсемпе медальсем илме тивĕçлĕ пулнă, вунпĕрĕшĕ Совет Союзĕн Геройĕ ятне илнĕ.

Вăрçă кунĕсенче Тăван çĕршыв чысĕпе ирĕкĕшĕн кĕрешме чĕнни поэзийĕн тĕп кĕвви пулса тăрать. Ку темăпа вăтă поэт М. Тимофеев-Терешкин та, паллă лирик С. Кулачиков-Элляй та тата ытти писательсем те çыраççĕ.

Прозăра вăрçă вăхăтĕнче совет çыннисен тылри тата фронтри паттăр ĕçĕсем çинчен публицистикăлла очерксем йышлă тухса тăнă. Ку хисепре Н. Мординовăн, Д. Сивцев-Омоллонăн, Л. Поповăн, С. Даниловăн. А. Олбинскийĕн очеркĕсене асăнма пулать. Кулленхи пурнăç явленийĕсене сăнласа паракан калавсемсĕр пуçне, пысăк произведенисем — романсемпе повеçсем тухни вăрçă вăхăтĕнчи якут литературин уйрăмлăхĕсенчен пĕри пулнă. Вĕсенче якут прозаикĕсем, граждан вăрçи вăхăтĕнчи революциллĕ кĕрешĕве кăтартса, халăх паттăрлăхĕн традицийĕсем çирĕппине сăнласа пама тăрăшнă, ăна Аслă Отечественнăй вăрçăн героикипе çыхăнтарнă. И. Никифоров «Салтаксем» ятлă повеçре вырăс çыннисемпе якутсен çĕнĕ пурнăçшăн пынă çапăçури туслăхĕ çирĕппи çинчен каланă, Н. Якутский «Вутпа тăвăлра» повеçре çамрăк якутсем граждан вăрçин вучĕ витĕр тухса чăн-чăн совет патриочĕсем пулса тăнине кăтартса парать. Вăтă прозаик С. Яковлев-Эрилик Эристин, граждан вăрçинче пулса совет влаçĕшĕн паттăрла кĕрешнĕ çынсенчен пĕри, 1942 çулта «Марыкчан çамрăкĕсем» ятлă пысăк роман çырса кăларать. Вăл якут литературинчи пĕрремĕш роман пулнă.

Романра якут халăхĕ граждан вăрçинче совет влаçĕшĕн кĕрешни тĕп вырăнта тăрать. Çав кĕрешӳе писатель аслă вырăс халăхĕн пурнăçĕпе тачă çыхăнтарнă. Произведенири революциллĕ якут çамрăкĕсен витĕмлĕ сăнарĕсем Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнчи якут çамрăкĕсене фашистла захватчиксене хирĕç хаяррăн кĕрешме хавхалантарнă. «Марыкчан çамрăкĕсем» хыççăн якут прозинче ытти писательсем те роман жанрĕпе çырма тытăнаççĕ.

Вăрçă хыççăнхи якут литератури ӳсĕмĕшĕн «Правда» хаçатра 1951 çулта «Якут литератури историне тĕрĕс çутатса парассишĕн» ятлă статья пичетленсе тухни калама çук паха пулнă. Хăшпĕр историксемпе литераторсем Якут çĕршывĕн иртнĕ пурнăçне çутатса панă чухне националистла йăнăшсем туни çинчен асăрхаттарса, парти якут совет писателĕсене пурнăçа тĕрĕс, историе пĕр пăсмасăр, ĕнентерӳллĕ сăнласа пама хавхалантарнă. Çакăн хыççăн поэзире те, прозăра та çĕнĕ произведенисем йышлăн тухса пыма тытăнаççĕ. Юлашки çулсенче вунă писателĕн кĕнекисене Мускавра, Новосибирскра, Иркутскра, Якутскра вырăсла куçарса кăларнă. Вĕсен шутĕнче Н. Мординов çырнă «Çурхи вăхăт» ятлă романĕ, С. Кулачиков-Элляйăн сăвăсемпе поэмăсен кĕнекисем, Н. Якутскийĕн «Ылтăн çăлкуç» повеçĕ, С. Эрилик Эристинăн «Марыкчан çамрăкĕсем» романĕ, М. Тимофеев-Терешкинăн икĕ сăвă кĕнеки т. ыт. те.

Поэзире творчествăллă ĕç илемне, совет этемĕн кăмăл пуянлăхне, халăхсен туслăхне, миршĕн кĕрешнине таранрах та таранрах сăнласа паракан произведенисем йышланса пыраççĕ.

Якут поэзинче кивелнĕ сăнарсемпе, фольклортан илнĕ танлаштарусемпе усă курасси сахалланса пырать. Кивĕ аллитерациллĕ, рифмăсăр сăвă вырăнне халĕ ĕнтĕ нумай ритмлă, пуян рифмăллă сăвă аталанса пырать.

Прозăпа çырнă пысăк произведенисенчен пĕри вăл Н. Мординовăн «Çурхи вăхăт» романĕ пулса тăчĕ. Роман якут халăхĕн ешерекен çурхи вăхăчĕ çинчен калать. Унта совет влаçĕ çĕнтерсе вăй илни çинчен, вырăс халăхĕн паллă представителĕсем тăрăшса ĕçленине пула якут халăхĕн ăс-тăнĕ çитĕнни, тавракурăмĕ аталанни, класлă ăнланулăхĕ ӳссе пыни çинчен витĕмлĕ те ăста каласа панă. Н. Якутский «Ылтăн çăлкуç» повеçре эвенксен революциченхи йывăр пурнăçĕпе совет саманинчи хавасла та ирĕк ĕçне-хĕлне пултаруллăн сăнласа панă.

Ытти хăшпĕр халăхсен литературинчи евĕр якутсен литературинче халĕ драматурги кая юлса пырать. Ана ура çине тăратас тĕлĕшпе хальхи вăхăтра якут писателĕсем çине тăрсах ĕçлеççĕ.

Ĕçри çитĕнӳсемпе çитменлĕхсене хисепе илсе, тăванла якут писателĕсем çĕнĕ, идея енчен тарăн, ăсталăх тĕлĕшĕнчен паха произведенисем çырма хăват çитересси паллах.

# Н. И. Полоруссов-Шелепи

*(Вилнĕренпе 10 çул çитнĕ май)*

Ырă çын вилет — ырă ят юлать, тенĕ ĕлĕкхи чăвашсем. Поэт вилет те, асăнмалăх чун кăварĕ—сăвă-юрă юлать, тейĕпĕр эпир. Шелепи вăл, чăн та, пирĕн поэзире ырă та çутă ятсенчен пĕри. Ку çеç те мар, вăл, Константин Васильевич Иванов пекех, пирĕн поэзи никĕсне хывакансенчен, илемлĕ çырулăха çĕклекенсенчен пĕри. Хытă алать самана али, хывăхпа сăсăла вăл аяккалла ывăтать. Анчах та чăн-чăн поэт ятне, хăйĕн ĕмĕрне халăхпа пĕрле кĕрешӳре иртернĕ поэт ятне самана çӳлелле çĕклет, вилĕмсĕррисен шутне кĕртет. Акă ĕнтĕ, кăçалхи январĕн 12-мĕшĕнче, чăваш халăх поэчĕ Николай Иванович Полоруссов-Шелепи вилнĕренпе вунă çул çитрĕ. Çук, саманан вĕтĕ али Шелепи пултарулăхне тĕкĕнеймерĕ, ун поэзийĕнче вăл куçа тăрăнакан хăлчăксем тупаймарĕ. Пачах та урăхла, Шелепи кун-çулне, ун сăнарне эпир туллинрех, витĕртерех курма тытăнтăмăр, ун поэзине, вăл халалласа хăварнă пуянлăха эпир таранрах ăнланма, вăхăт анлăшĕпе хаклама тытăнтăмăр. Шелепи утса тухнă çул — йывăр, тумхахлă çул, аналлалла мар, пĕрмаях тăвалла выртнă çул. Тӳрĕ çултан пăрма тăрăшса, нумай силленĕ ăна пурнăç урапи, нумай чăттарнă, нумай шухăшлаттарнă. Çав çулпа çирĕп те кăра чунлă, ялан малалла чĕнекен, пусăрăнма пĕлмен шухăш-кăмăллă, пурнăç çине ăслă та таран куçпа пăхма пултаракан çын çеç утма пултарнă. Пирĕн Николай Иванович вара чăнласах та çавăн пек çын пулнă. Пĕтĕм пурнăçĕнче вăл талант пӳрнĕ ĕçе—поэзие — пĕтĕм чун хавалĕпе парăннă. Çакăн çинчен пире нимĕнле критик та, нимĕнле биограф та поэт хăй каланă пек каласа пама пултараймасть. Шелепи кун-çулĕн, пурнăçĕн, шухăш-кăмăлĕн, сăнарĕн квинтэссенцийĕ — пĕтĕмĕшле шухăшĕ—унăн «Çул курки» ятлă сăвви пулса тăрать. Ку сăвва уйрăм сыпăксемпе илсе кăтартма çук, ăна çав тери хытă цементласа сыпăçтарнă. Вулакансене эпир ăна, поэт томне уçса, çĕнĕрен вуласа тухма сĕнĕпĕр.. Йывăр та тертлĕ иккен поэт ĕçĕ, нумай тӳсĕм, нумай чăтăм кирлĕ иккен. Пăхатăп та, Шелепи калама çук паттăр ĕç тунă: пĕтĕм кунçулĕн тăршшĕпе вăл халăхшăн тăрăшнă, уншăн ĕçлесе пурăннă. Халăх хуйхи-суйхи—ун хуйхи-суйхи пулнă, халăх савăнăçĕ, халăх телейĕ — ун савăнăçĕ, ун телейĕ пулнă. Константин Иванов та, Тайăр Тимкки те халăхшăн тăрăшса пурăннă, анчах та вĕсем ирĕке тухнă халăха курса савăнайман. Ку енчен Шелепи шăпи урăх, телейлĕ, вăл чĕрĕк ĕмĕр ытла ирĕк саманара ĕçлесе пурăнчĕ. Хăйĕн ывăлĕ халăхшăн пархатарлă ĕçленине тăван халăх шута илчĕ, вăл ăна поэтшăн чи чаплă ят—халăх поэчĕ ятне пачĕ.

Пĕтĕмĕшпе хĕрĕх çула яхăн ĕçлерĕ Шелепи тăван литературăра. Ун пурнăçĕпе поэзийĕ çинчен пирĕн критиксемпе литературоведсем пайтах çырчĕç, анчах та Шелепи çинчен эпир татăклă та тулли сăмах калайман-ха. Ку—малашнехи ĕç.



Çак пĕчĕк асаилӳре эпир Николай Ивановичăн пурнăçĕнчи юлашки виç-тăватă çулĕ çинчен каласа парасшăн.

... 1941 çул, октябрь уйăхĕ. Кăç пулса килет. Юрлă-пăрлă çумăр çăвать. Шупашкарти Хĕрлĕ площаде тĕрлĕ машинăсем килсе тулнă: пĕрисем кунта юлаççĕ, теприсем Хусан енне васкаççĕ. Тĕп урам тулли салтак иртет, вĕсем, вăрçă юррисем юрласа, вокзалалла утаççĕ: Мускав сывăхне фашистсем пырса çапăннă. Володарский урамĕнчи картишри 10-мĕш çурта — С. В. Эльгер хваттерне—туссем-юлташсем пухăннă, вĕсем хушшинче виçĕ халăх поэчĕ: иккĕшĕ чăвашсем—Шелепипе Эльгер, виççĕмĕшĕ белорус халăх поэчĕ Янка Купала. Чӳречесене хура чаршав карнă: çутă кăтартма юрамасть. Хуçи хăй хăнисене мĕн пуррипе кĕтсе илчĕ. Сăмах Тăван çĕршывпа Кремль çинчен, вăрçă çинчен пырать. Янка Купала хăйĕн чăваш тусĕсене вутри Белоруссиçинчен, Минскра çурчĕпе пуян библиотеки çунса кайни çинчен тарăхса куççульпе каласа парать. Пайтах итлесе ларнă Шелепи пукан çинчен тăчĕ те, пуçне каяллареx тытса, хулĕсене сарса, яланхи пек хĕрӳллĕн сăвă калама тытăнчĕ:

Гитлере çĕр кирлĕ,  
Мул, пуясшăн.  
Пĕтĕм тĕнче хуçи  
Пуласшăн.  
Çук, пулас çук апла!  
Акă епле  
Юрлать сăвă йĕрки  
Ун пирки:  
Тăршшĕ — ик метр,  
Урлăшĕ — пĕрре  
Территори кирлĕ  
Гитлере.

Çак йĕркесене эпир Янка Купалăна куçарса паратпăр. Вăл алă çупса савăнать, йăл кулса илет те Шелепие чуптăвать.

... Вăрçă çулĕсенче эпĕ хам та çав асăннă çуртра пурăнаттăм. Ман хваттер Шелепи хваттерĕпе юнашарахчĕ, çуресе те пĕр алăкранах çӳреттĕмĕрччĕ. Николай Иванович халĕ те куç умĕнчех-ха, акă вăл: ватăлас енне кайнипе тăпчам пӳ-силлĕ, вăтам кĕлеткеллĕ çын. Сылтăм аллинче тимĕр туя. Çийĕнче шупка хăмăр коверкот костюм, тĕрĕллĕ шурă кĕпине парка кăвак сухалĕ витсе тăрать, урисенче калушлă кăçатă (Шелепи çуллахи шăрăх кунсенче кăна пĕр хушă пушмак тăхăнатчĕ). Ларатчĕ те вăл хăйĕн диванĕ çине, сухалне чĕтретсе, хуллен кăна шăхăрнă пек туса, ши-ши-ши шăхăркаласа шухăшлатчĕ. Паллăччĕ: Николай Иванович сăвă çырать. Ун йăлине пĕлменнисем ыйтатчĕç те вара, «Эпĕ пуçа сăвă купалатăп»,—тетчĕ вăл (Шелепи куç çутине 1931 çултах çухатнă). Тахçан сыйăратчĕ çакă манăн чаплă кӳршĕ. Çĕр варринче вара хăй пӳлĕмĕ тăрăх шăкăрт-шăкăрт утса çӳретчĕ тимĕр туйипе.

«Выртнă вырăн çинчен тăрагăра çыру çинче лартăм çĕрĕпе»,—тенĕ «Çул куркинчи» йĕркесем çакăн пек чух çуралнă иккен, тесе шухăшласа илеттĕм эпĕ.

... Фронтран çаплах йывăр хыпарсем килсе тăраççĕ. Шелепи ир те, каç та радио итлет. Радио—унăн пурнăçĕ. Вăл «Çӳлтен çӳле çĕклер Сталин ялавне» ятлă сăвă ушкăнне çырать. Туять вăл, пĕлет, ватă чĕрипе сисет: çĕнтеретех совет халăхĕ! 1942 çулта нимĕçсем Хура тинĕс çинчи крепоçа — Севастополе туртса илсен, Шелепи çакăн пек тăватă йĕрке каласа хучĕ:

Йытă пуçĕ Гитлер —  
Урнă кашкăр,  
Юн тинĕсрех пăчлан,  
Сăвăслан!

Ватă поэт калани чăн пулса тăчĕ.

... Пирĕн балкон пахчаналла тухатчĕ. Шухăша ярса шавлатчĕ; ĕмĕрхи çăкасем. Çуллахи кунсенче балкон Шелепин юратнă вырăнĕччĕ. Сехечĕ-сехечĕпе ларатчĕ вăл карлăк урлă кармашакан çăка сулхăнĕнче. Лăпкă ăшă çил унăн пуса пек сухалне, шуралма пĕлмен хура та сăра çӳçне вĕлвĕл вĕçеретчĕ, кайăк-кĕшĕк юрри ватăлма пĕлмен çамрăк чĕрине хускататчĕ. Унăн ача-пăча валли çырнă манми сăвви-юррисене аса илеттĕм те эпĕ, çутçанталăка юратакан çын çеç çавăн пек паха япаласем çырма пултарнă, тесе шухăшлаттăм.

Калаçасса Шелепи тĕп чăваш чĕлхипе, йăваш сасăпа калаçатчĕ. Юлташĕсем килсен, яланах çемье сывлăхĕ çинчен ыйтса пĕлетчĕ. Палламан çынпа тĕл пулсан вара чăваш йăлипе, хăш ялсем иккенне, ачисем пуррипе çуккине ыйтса пĕлетчĕ. Çав хушăрах вăл шӳт тума юрататчĕ, пĕр-пĕр кулăшла япаларан вара, ача пек каçса кайса, пуçне кăлт! пăрса кулатчĕ.

... Шелепи — ывăнма пĕлмен, канма пĕлмен сăвăçчĕ. Мĕн чухлĕ кăна клуб, мĕн чухлĕ кăна шкул пур Шупашкарта—Шелепи унта пуринче те сăвă каланă. Ун сассине эпир Пионерсен тĕп çуртĕнче те, Академи театрĕнче те, Советсен çурчĕн ларусен аслă залĕнче те час-часах илтеттĕмĕрччĕ. Республика тăрăх вăл мĕн чухлĕ çӳренĕ тата?! Ăна пин-пин шкул ачи, пин-пин колхозник итленĕ. Вăл Тутар республики тăрăх та, Куйбышев облаçĕ тăрăх та нумай çуренĕ: халăха сăвă каласа панă, хавхалантарнă, çуттала чĕннĕ.

Астăватăп: 1944 çул, март уйăхĕ. Шелепи телефона калаçса илчĕ те ман пӳлĕме тухрĕ. «Шавлы,—терĕ вăл тăсарах кăна (писательсене вăл кирек хăçан та хушаматран çеç чĕнетчĕ) — Кӳкеç райкомĕ унта лаша янă, атя-ха райо/на тухса çӳрер!». Кайрăмăр. Кӳкеçри Культура çурчĕ чăп тулли. Шелепи вăрçă сăввисене каласа пачĕ, юлашкинчен «Çĕрпӳ пасарне» сунтарса илчĕ. Тĕлĕнеттĕм эп: ăçтан вăл çавăн чухлĕ сăвă йĕрки астăвать! Пĕр такăнмасăр, пĕр чарăнмасăр хĕртсе тăрать вĕт! Халăх ура çине тăрса алă çупать. Иккасинче те çак картинах пулса иртет. Апаш шкулĕнчи комсомолецсемпе пионерсем вара, халăх пиче кĕтсе, вăрăм коридор тăрăх тăрса тухнăччĕ. «Чăваш халăх шăпчăкне салам, чыс та хисеп!»—тесе пĕр харăс салютлаçĕç вĕсем. Ватă сăвăç темиçе самант хушши чĕнмесĕр тăчĕ, шурă тутăрпа сӳннĕ куçĕсене шăлса илчĕ... Çакă Шелепин юлашки тĕлпулăвĕ пулчĕ. Хура кĕркунне вăл чирлерĕ, вара 1945 çулти январĕн 12-мĕшĕнче вилсе выртрĕ.

1945 çулти январĕн 15-мĕшĕ—поэт ӳтне пытарнă кун—шартлама сивĕччĕ. Сайран ӳксе тăракан мамăк татăкĕ пек вĕлтĕркке юр витĕр виçĕ уралла хĕвел курăнать. Пӳрт мăрийсенчен тухакан шурă тĕтĕм чиксĕр çӳлĕ юпа пек пĕлĕтелле тапать. Кăчăртатса тăрать ура айĕнчи кăвак юр. Çанталăк чăтма çук сивĕ пулин те, Пичет çурчĕ умне мĕн иртенпех халăх пуханса тăрать. Килнĕ çынсем иккĕмĕш хутри вăрăм коридора çапса хĕснĕ пек тулнă, вĕсем поэтпа юлашки хут сывпуллашасшăн. Тупăк умĕнче кашни пилĕк минутра хисеплĕ хурал улшăнса тăрать.

Поэт тупăкне Пичет çурчĕ умĕнчи площаде илсе тухаççĕ, ăна С. Эльгер, А. Эсхель, Л. Агаков тата çак йĕркесене çыраканĕ йăтнă. Хурлăн янрать оркестр. Халĕ ĕнтĕ Пичет çурчĕн умĕ çеç мар, Карл Маркс урамĕ те чăп тулли: Шупашкар çыннисем хăйĕн чаплă поэтне юлашки çула ăсатаççĕ..

Н. И. Полоруссов — Шелепие эпир Хумма Çеменĕпе Иван Ивник çумне пытартăмăр.

Питĕ кĕтетчĕ вăл Çĕнтерӳ кунне, питĕ савăнасшăнччĕ вăл халăхпа пĕрле! Анчах та вăйĕсем чакса пычĕç. «Аслă уяв кунĕнче ман ята та асăнăр» — терĕ вăл юлашкинчен.

Пурнăç вĕçĕ-хĕррисĕр пысăк, пурнăç — вилĕмсĕр. Вилĕме пурнăç çĕнтерет. Эпĕ Шелепи «Çул куркин» юлашки тăватă йĕркине аса илтĕм:

Мана тăпра айне хунă чухне  
Куççуль ан юхтарăр хуйхăрса.  
Савăнса, калаçса, юрла-юрла,  
Çĕрпе витсе хурăр, юп курса.

**Стихван ШАВЛЫ.**

# ПĔР ÇУРТ ИСТОРИЙĔ

Хуласенчи чылай çуртсем, япăх пăхнă пирки, вăхăтсăрах юрăхсăра тухаççĕ.




— Колоннăсемлĕ, балконсемлĕ,
Чăн-чăн кермен пекех илемлĕ!—
Мухтарĕ пуçлăх çĕн çурта.
Кантур вырнаçрĕ çавăнта.




Те уйăх иртрĕ, те эрне...
Çывхартрĕ хăйĕн базине,
Хваттер те пачĕ хăшпĕрне:
Секретарне, техничкине.




— Пăч тĕттĕм ман пÿлĕмсенче,
Сăлтавĕ—çак йывăççенче.—
Шавларĕ пуçлăх.—Йăлт касклас.
Карта сÿтес, çутта тухас.




Çĕн пуçлăх, кантура курсассăн,
Пуçне уссах сывларĕ ассăн.
«Çурт пĕтнĕ,—терĕ,—пĕтĕмпех,
Лартас пулать урăххинех».

Г. Харлампьев ÿкерчĕкĕсем.

# ЧĔЛĔМ КАВĔРЛИ КАЛАВĔСЕНЧЕН

## САРĂ ИНКЕ

Нумай пулмасть «Ялав» редакцин фотокорреспонденчĕ инçетри колхоза каиначче те, каялла таврăнна чух асап курса петнĕ вара: машина çул çинче чаранса ларчĕ, тет те ниепле те юсаса яма май килмере, тет.

Çак хыпара илтсен, редактор мана хăй патне чентерчĕ те, шофер ыйтнă япаласене тупса çул çинчи машина патне çийĕнчех кама та пулин яма хушрĕ.

Кун пек ĕçе эпĕ çынна хушатăп-и-ха? Ватă çын — таватă çын, теççĕ! Культура министерствин гаражне керсе механикпе канашларăм та çĕмрĕлнĕ машина валли кирлĕ детальсене тупса шофер патне хамах шутартăм. Район центрне çити эпĕ Канаша каякан автобус çине ларса пытăм, унтан виçĕ çухрăмри колхоза мана çу заводне сĕт леçме килнĕ пĕр матур херача вăкарпа илсе кайрĕ. Пирĕн машина çĕмрĕлни çинчен пĕлет иккен вăл: ял çывăхĕнчи çил арманĕ патĕнче ларать, тет.

— Сирĕн МТС-ра мастерскойсем пур-тăр, мĕншĕн машинăна юсаса памаççĕ?—терĕм эпĕ, вăкăр ытла та ерипен утнишĕн тарăхса.

— Хăвăр çыннăр, лешĕ сăн ÿкерекенни айăплă. Вăл Сарă инкене курентермен пулсан, машина валли кирлĕ япалине кунтах тупатчĕç.

Ак тамаша! Пирĕн фотокорреспондент мĕн хăтланса пĕтнĕ-ши вара? Сарă инке кам-ши вăл?

— Иван Иванч арăмĕ вăл. Унтан хăватлă çын районра çук.

— Милицирен те-и?

— Милиционерсем Сарă инке умĕнче ташласа çеç тăраççĕ.

— Прокурортан та хăватлă-и?

— Хăватлăрах,—тесе чее куçĕсене вылятса илчĕ хĕр.—Ара, сирĕн çыннăр фотоаппаратне йăтнă та МТС тăрăх чупса çÿрет, тракторнстсене шырать, слесарьсене, бригадирсене ÿкерет. Сарă инке «Победăпа» МТС-а çитсе тăнине асăрхамасть. Директор юриех ăна сăн ÿкерекеннипе палаштарать, ку пирĕн Иван Иванч арăмĕ, çавна шута ил, тенĕ пек систерме тăрăшать. Лешĕ ăна-кăна тĕшмĕртмерĕ... Халь ав сирĕн виçĕ пуçлăх юсавшăн та Шупашкартанах килмелле пулчĕ.

Эпĕ халиччен ку таврара пулса курман та, хĕрача темле Сарă инке пирки халап ярса панине те çийĕнчех ăнкарса илеймерĕм.

Шофер калань тăрăх, машинăн «хăвăртлăх коробкине» сÿтсе, пĕр пĕчĕк шестернен кивелнĕ кустăрмине (шофер ăна «каретка», тет) кăларса, ун вырăнне çĕннине, эпĕ хуларан илсе килнине, вырнаçтарса лартмалла. Кун пирки нумай шухăшласа тăмарăмăр. Машина коробкине сÿтрĕмĕр те арман хуралçи пÿртне йăтса кĕтĕмĕр. Кунта, ăшă пÿртре, ĕçлеме ансат вара. Машина пайне сÿтме тĕкĕнсен, хăвăр пĕлетĕр ĕнтĕ, кашни гайкине, кашни шестернине бензинпа е краççынпа çумалла. Краççын алă айĕнче пулманнипе эпир бакри бензина сăрхăнтарса илтĕмĕр. Нумай-и, сахал-и, пирĕн бензин машина пайĕсене çума çитрĕ те, анчах çул çине тухмалăх пĕр тумлам та юлмарĕ вара.

Бензин кирлĕ. Арман хуралçи пире колхоз гаражне кайса ыйтма сĕнет. Шофер аллипе çеç сулчĕ: «Колхозран бензин илес тесен, малтан председательне шыраса тупмалла, вăл пасăр станцăна тухса кайрĕ, ăна кĕтсе тăриччен эпир Шупашкара çитсе чей ĕçсе тăранапăр»,—терĕ. Бензинне вăл райсоюз лавккинчен укçалла илме шут тытрĕ. Юрать-ха, унта çитме виçĕ çухрăм çеç утмалла.

Эпĕ машина сыхлама арман хуралçи патне ларса юлтăм, шофер пĕчĕк бидон йăтса райсоюза каирĕ. Арман хуралçи эпир укçалла бензин тупасса шанмасть.

— Куран ака, шофер пушăлла таврăнать,—тет вăл.

— Мĕншĕн?

— Мĕншĕнне хăвăрах пĕлĕр, курăр... Райсоюз лавккинчен бензин илесси çăмăл мар.

— Эпир кивçен ыйтмастпăр вĕт, укçалла илес тетпĕр.

— Укçа мĕн вăл! — аллине сулать арман хуралçи.—Кунта пирĕн укçа çинчен мар, Сарă инке кăмăлне юрасси çинчен шухăшламалла.

— Ара, вăл райсоюзра ĕçлемест пулĕ вĕт?—тарăхса ыйтатăп эпĕ.—Сарă инке те, Сарă инке тетĕр. Мĕнле вырăнте тăрать вара вăл?

Арман хуралçи ман çине куç хÿрипе пăхса илчĕ те кăштах куланçи пулчĕ. Районра Иван Иванч аслă çынсенчен пĕри, унăн арăмĕ вара унтан та аслăрах. Вăл Иван Иванчине хăйне пăхăнтарса тăрать. Пĕлетĕн-и?

Эпĕ арман хуралçине: Иван Иванч районри пысăк çын пулсан та, унăн арăмĕ килĕнче çеç хуçа пулма пултарать, халăх хушшинчи ĕçе пăсма кирлĕ мар, терĕм.

— Асту,—терĕ арман хуралçи.—Пăсмĕ сана... Районра Иван Иванч пуррипе çукки туйăнмасть те, пур çĕре те унăн арăмĕ сăмсине чикет. Ахаль мар ăна «Сарă инке» теççĕ. Калăпăр, акă иртнĕ çуркунне, кунта инкубатор станци уçрĕç. кăвакал чĕпписем кăларса колхозсене сутма тытăнаççĕ, тенĕччĕ. «Пекин кăвакалĕ» тенекен йăха пирĕн колхоз та ĕрчетесшĕнччĕ. Эпир пуринчен малтан заявка панăччĕ. Инкубатор чĕпписем тухасса кĕтеттĕмĕр. Унччен те пулмарĕ, кăвакал чĕписене валеçсе пĕтернĕ, тенĕ хыпар сарăлчĕ. Кайса тĕрĕслерĕмĕр те, чăнах та пирĕн колхоз валли пĕр чĕп те хăварман. «Ку мĕне пĕлтерет?» тесе ыйтатпăр инкубатор станци пуçлăхĕнчен. «Эпĕ Иван Иванч панă список тăрăх валеçрĕм, унта сирĕн колхоз çукчĕ», тет вăл. Эпир тÿрех ăнланса илтĕмĕр: пирĕн колхоз председателĕ унччен маларах Иван Иванч арăмне больницăра çилентернĕччĕ. Сарă инке çавăншăн тавăрчĕ иккен.

— Тухтăр мар вĕт вăл, мĕншĕн больницăра ятласнă?—ыйтрăм эпĕ.

— Тĕрĕс, Сарă инке тухтăр мар. Анчах ун чухне больницăна ачапăча санаторине кайма пĕр путевка килнĕччĕ. Пирĕн колхоз председателĕ çав путевкăпа Микихвер салтак арăмĕн ачине, имшерскерне, ярасшăн пулчĕ. Ашшĕ салтакра вилнĕ, ача хутне кĕресех пулать вĕт. Сарă инке санаторие хăйĕн ачине ярасшăн пулчĕ. Çавăн пирки тухтăр патĕнче тавлашу тухса кайнă вара.

— Пирĕн председатель хытă тăчĕ, санаторие те Микихвер салтак арăмĕн ачине ăсаттарчĕ. Анчах ытти тĕлĕшрен вара пĕтĕм тĕнче пăсăлса кайрĕ. Сарă инке ăçта май килнĕ, çавăнта упăшки урлă ура хурса пыма тытăнчĕ.

— Председателĕ пирĕн матур вара. Ăна пурте ятран Владимир Василч, тесе чĕнеççĕ. Ĕçмест. Кахалсене юратмасть. Тĕрĕслĕхе сума сăвать. Çавăнпа вăл Иван Иванч арăмĕнчен те хăрамасть. Пĕркунхине Викторов агронома та Мускава çавах ярттарчĕ. Сарă инке Викторова юратмасть, выставкăна кайма уйăрнă делегацине те кÿрттермен. Районра Викторов пек нумай ĕçлекен çын çук. Пур ĕçре те пултарать хăй. Пирĕн председатель ăна Мускава ямалла мар тунине илтсен, хăйĕн путевкине райисполкома пырса каялла панă: «Викторов каймасан, эпĕ те отказ паратăп»,—тесе каланă.

— Иван Иванч мĕнле çын вара вăл? Арăмĕн кусĕнчен çеç пăхса тăрать пулсан?

— Çынни вăл япăх мар. Юман пек патвар. Кăмăлĕ те ырă. Пухусенче хĕрÿллĕ сăмахсем калать. Халăхшăн тăрăшмасть тесе те калама çук. Район пур ĕçре те малта пырать. Арăмĕн сăмахĕнчен тухайманни хуплать ăна. Мĕнле ĕçре те вăл арăмĕ пирки намăс курать. Ара, пĕлтĕр, ака-туй вăхăтĕнче те Сарă инке пирки кăштах «Капкăна» çакланмарăмăр вĕт. Колхоз рысакĕсем ăмăртма тăрсан, Иван Иванч сасартăк пирĕн колхоз председательне чĕнсе илет те акă мĕнле ĕç хушать: «Шупашкартан пĕр чаплă хăна килмелле, рысакупа станцăна вĕçтер-ха, поезд килессе кĕтсе тăр», тет. Пирĕн председатель çарти пек: «Юрать»,—терĕ те рысака пурпĕрех ăмăртма ячĕ. Мĕн тесе пĕлетĕн, пирĕн ăйăр пуринчен малтан килчĕ, пĕрремĕш приз илчĕ. Эх, курасчĕ сирĕн Сарă инке çиленнине! Пĕрре шуралса, пĕрре хĕрелсе, пĕрре кăвакарса каять. Çын умĕнчех упăшкине хăртса илет. Иван Иванчи, мĕскĕн, ним тума пĕлмест. Аптранă енне, шĕвĕр пÿрнипе кăчăк туртса, пирĕн председателе каллех хăй патне чĕнет.

— Эпĕ сире рысакпа станцăна кайма хушманччĕ-и?—тет сиввĕн.

— Эпĕ унта «Победа» ятăм,—хуравлать пирĕн председатель.

Райсоюза çĕнĕ таварсем килсен те, чи малтан ăна Сарă инке тĕрĕслет. Бостон е пĕр-пĕр хитре чечеклĕ пурçăн пулсан, ăна вăл магазина партармасть те, складран тÿрех хăй патне сĕтĕрет, е хăйне хисеплекен çынсене çеç «суттарать».

Эпир çапла арман хуралçипе каласса ларнă çĕре райсоюза кайнă шофер та таврăнчĕ. Пушă бидонне çĕре лартрĕ те вăл аллипе сулчĕ:

— Мур илтĕрех, Сарă инке куç хывмарĕ-тĕк, кунта бензин та тупма хĕн иккен.

— Укçалла та памаççĕ-и?

— Çук. Памарĕç. Тепле Шупашкара çитмелле ĕнтĕ.

Арман хуралçи пирĕн хута кĕрсе çапла каларĕ:

— Э, ан кулянăр, кас кÿлĕм станцăран Владимир Васильчă таврăнмалла. Вăл сире бензин та, автол та парĕ. Пирĕн районра Сарă инкерен пуçне Владимир Васильчă пек çынсем те сахал мар вĕт.

Арман хуралçи шантарни тĕрĕс пулчĕ: колхоз председателĕ таврăнсан, пире бензин та, автол та тупса пачĕç. Вара эпир çав каçах Шупашкара таврăнтăмăр. Эпĕ çул тăршшĕпе Сарă инкепе Иван Иванч пирки шухăшласа пытăм: тем каласан та, ун пек çынсем пирĕн республикăра урăх нихăш районра та çук. Мĕнле шутлатăр эсир, журнал вулакан юлташсем?



Хĕрлĕ Чутай машина-трактор станцийĕнчи токарь Владимир Васильев «НАТИ» трактора юсама çĕнĕ деталь хатĕрлет.

**Ф. Иванов** фотоӳкерчĕкĕ.

ОТН8

ЯЛАВ № 1 (109)
ЯНВАРЬ — 1955

**ЕЖЕМЕСЯЧНЫЙ ЛИТЕРАТУРНО-ХУДОЖЕСТВЕННЫЙ И ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКИЙ ЖУРНАЛ СОЮЗА ПИСАТЕЛЕЙ ЧУВАШИИ**
ИЗДАТЕЛЬ: ЧУВАШСКОЕ ГОСУДАРСТВЕННОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО.

**Редколлегия: М. Романов (отв. редактор), В. Алагер, А. Артемьев, В. Долгов, И. Тукташ, Я. Ухсай, С. Шавлы.**

*Рукописи не возвращаются.* Тех. оформление И. Григорьева

НТ 00890. Подписано к печати 31/I-1955 г. Объём 6,165 п. л. Заказ 75. Тираж 8000 экз. Цена 2 руб.

Адрес редакции: Чувашская АССР, г. Чебоксары, ул. Карла Маркса, дом № 1. Телеф. № 8—36.
Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР.

